793
К Ч-20
27637-чув.

# Черашав ҫĕлсемĕ



Чăвашгосиздат 1945

КОНТРОЛЬНЫЙ ЛИСТОК
СРОКОВ ВОЗВРАТА

КНИГА ДОЛЖНА БЫТЬ
ВОЗВРАЩЕНА НЕ ПОЗЖЕ
УКАЗАННОГО ЗДЕСЬ СРОКА

Колич. пред. выдач.

3 ТМО Т. 1 млн. З. 1318—84

24
793
К-4-20

* * *

# ЧАРШАВ УҪĂЛСАН

ЯЛТИ ЭСТРАДĂСЕН
СБОРНИКĔ

**ТӲРЛЕТНИ**

**41 стран.** Ҫӳлтен 1-мĕш йĕрке пичетленмесĕр сиксе юлнă. Хăш экземплярта ҫак йĕркенех типографи пăтраштарнипе „**Кĕленчĕре патне илсе**" тесе пичетленĕ. Ку йĕркене тĕрĕссипе: „**Кĕлне чĕре патне илсе,**" тесе вулас пулать.

**66 стран.** Аялтан 13-мĕш йĕркене: „Санра пирĕн кунҫул тĕрри" тесе вуламалла.

Чаршав уҫăлсан

ЧĂВАШСЕН ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар—1945

*Колхозсенчи драмкружоксенче ĕçлекенсем!*

Çак кĕнеке сире мĕнле кăмăла кайнине, эсир унпа епле усă курни çинчен тата малашне сире мĕнле репертуар кирлĕ пуласси çинчен çак адреспа çырса пĕлтерĕр:

*г. Чебоксары, Дом Печати, Чуваш госиздат.*

ПРОВЕРЕНО
2002

9х 27637-чув

Чувашская
республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. ГОРЬКОГО

Редактор С. Эльгер.

НТ 00086 Подписано к печати 24/IV-45 г. объем 7 п. л. Т. 3000 экз. З. 129

Типография № 1 Управления Полиграфпромышленности
при СНК ЧАССР г. Чебоксары.

# СОВЕТ СОЮЗĔН ГИМНĔ

*(Сăвви Сергей Михалковпа Эль-Регистанăн)*

**Нихçан арканми Союза пĕрлештерчĕ
Пур ирĕк республиксене Аслă Русь.
Сыв пултăр тăван халăхсем çитĕнтернĕ
Пĕр йышлă, хăватлă Советлă Союз!**

**Чаплă, мухтавлă пул, ирĕк Çĕршывăмăр,
Халăхсен туслăх хăвачĕ санра!
Халăх ялавĕпе, совет ялавĕпе
Паттăр утар çĕнтерсе малалла!**

**Çут ирĕк-хĕвел тăвăл витĕр çутатрĕ,
Тăван аслă Ленин кăтартрĕ çула.
Пире халăх тивçĕшĕн Сталин ӳстерчĕ,
Çĕклерĕ ĕçе, чĕнчĕ паттăр пулма.**

**Чаплă, мухтавлă пул, ирĕк Çĕршывăмăр,
Халăх телейĕн хăвачĕ санра!
Халăх ялавĕпе, совет ялавĕпе
Паттăр утар çĕнтерсе малалла!**

**Вутра паттăр çар çитĕнтертĕмĕр эпĕр,
Çĕмретпĕр ютран хапсăнан тăшмана!
Телейлĕ кун-çулшăн хастар кĕрешетпĕр,
Чапа кăларатпăр Тăван Çĕршыва!**

**Чаплă, мухтавлă пул, ирĕк Çĕршывăмăр,
Халăх мухтавĕн хăвачĕ санра!
Халăх ялавĕпе, совет ялавĕпе
Паттăр утар çĕнтерсе малалла!**

# МУХТАВ АСЛĂ ЛЕНИНА!
# МУХТАВ АСЛĂ СТАЛИНА!

***П. Хузангай.***

Тĕнĕрен хĕвел кĕрсе курман,
Çутатман;
Кĕреке туман пире хăна.
Çутă, тутă пурнăçшăн чунтан
Мухтав аслă Ленина!
Çутă, тутă пурнăçшăн чунтан
Мухтав аслă Сталина!

Пирĕн юрă тĕнчене тухман,
Янраман,
Макăрашнă çырмара кăна.
Халь йĕри-тавра вăл кайрĕ ян:
Мухтав аслă Ленина!
Халь йĕри-тавра вăл кайрĕ ян:
Мухтав аслă Сталина!

Саплăк пĕкчĕ тупăшсăр ана,
Выç ана,
Хытхура хупланаччĕ ăна.
Халь йăрансăр тулă хумханать:
Мухтав аслă Ленина!
Халь йăрансăр тулă хумханать:
Мухтав аслă Сталина!

Хамăр ял та ютчĕ хушăран,
Тарăхсан;
Вăрмана тартатчĕ самана.
Халь пире пур халăх та тăван:
Мухтав аслă Ленина!
Халь пире пур халăх та тăван:
Мухтав аслă Сталина!

Кунсерен çĕршыв хăватланать,
Асланать,
Ырлăхне сарать пур таврана.
Çĕр чĕлхе пĕр саслăн янратать:
Мухтав аслă Ленина!
Çĕр чĕлхе пĕр саслăн янратать:
Мухтав аслă Сталина!

## ПОЛКОВОДЕЦ СТАЛИН

*Илья Тукташ.*

Урнă нимĕç вăрттăн çитрĕ—
Сапăçу пуçларĕ,
Тăвăл тухрĕ, çиçĕм çиçрĕ,
Аслати карларĕ.

Ман тăван Çĕршыв хускалчĕ,
Çирĕп ун вăй-халĕ.
Çĕнтермешкĕн шанчăк пачĕ
Полководец Сталин.

Амакланчĕ вăрçă вучĕ
Тамăк пек тискеррĕн.
Тăшманпа вăрçса пуç хучĕç
Паттăрсем пиншерĕн.
Чаплă ĕçшĕн вилекенĕн
Ячĕ ун мухтавлă,
Ăна чыслĕ аслă гений—
Полководец Сталин.

Пире парти хурçăлатрĕ
Пурнăçа кĕмешкĕн.
Пире Сталин çул кăтартрĕ
Вилĕме çĕнмешкĕн.

Ирĕк халăх чура мар тек,
Çирĕп ун вăй-халĕ.
Сывă пултăр аслă парти,
Полководец Сталин!

Кар тăрса, пĕр çын пек эпĕр.
Вутлă тăвăл витĕр,
Тăшмана шав çĕмĕретпĕр,—
Вилĕмĕ ун çитрĕ.
Хĕрлĕ Çарăн чаплă ячĕ
Иксĕлмĕ, çуталĕ.
Ăна хурçă хăват парчĕ
Полководец Сталин.

Ян-янрать тăван Мускавăн
Гимн пек йыхравĕ.
Вырăс халăхĕн мухтавĕ—
Парăнми йăхра вăл.
Пирĕн юрă—хурçă маршлă
Çĕнтерӳ ялавĕ.
Сывă пултăр аслă Маршал
Полководец Сталин!

## МУСКАВ САЛЮЧĔ

***Аркадий Ĕçхĕл***

Каçсерен эс ĕçрен таврăнсассăн,
Сана савнăç кĕтет, хуйăх мар.
Хумхануллă та кăмăллă сасă
Пĕлтерет çĕнĕ, чаплă хыпар.

Сывлама та пăрахнăн пĕр касă
Çут тĕнче Мускава çеç итлет.

Ку хыпар — аслă Маршал приказĕ,
Ку вăл — халăх хăвачĕ кĕрлет.

Шухăшпа Мускавра кăшт пулар-и,
Илемне куç хывар-и самант?!
Ялкăшать çĕнтерӳ вут-кăварĕ,
Çуталать юмахри асамат.

Çăлтăр çăмăрĕ, чĕнтĕрлĕ çиçĕм
Тӳпе тăрăх çиçеççĕ пĕрле.
Ку вăл — халăхăн вилĕмсĕр ĕçĕ,
Ку вăл — чăнлăх салючĕ кĕрлет.

Хĕрлĕ Çарăн — Герой çĕнтерӳçĕн
Таса ĕмĕчĕ — ирĕк кăна.
Çавăнпа та Мускав шурăмпуçĕ
Халĕ пур тĕнчене курăнать.

Хавхаланчĕ, çĕкленчĕ этемлĕх,
Пирĕнпе çула тухрĕ пĕрле.
Ку вăл — çĕр чăмăрне илтĕнмелĕх
Аслă туслăх салючĕ кĕрлет.

Салют çиçĕмĕсем çиçнĕçемĕн
Çуттăнрах йăлтăраççĕ куççем.
Тырпулсем туллинрех çитĕнеççĕ,
Çепĕçрех сарăлаç чечексем.

Ăшшăнрах пăхать савнăç хĕвелĕ,
Пĕтĕм çар çĕнĕрен чĕрĕлет.
Кашни çын чĕрине çĕклемелĕх
Ку вăл — пурнăç салючĕ кĕрлет.

# СЕРЖАНТ ВАНЮШИН

## Тăватă актлă, пилĕк картинăллă пьеса

*Н. Мранька*

Выляkансем:

ВАНЮШИН — Хĕрлĕ Çар сержанчĕ
ПЕТРОВ, АХМЕТОВ — Красноармеецсем
ВАЛЯ — санитарка, çамрăк хĕр.
ОКСАННА — Валя амăшĕ.
КĔРКУРИ — Валя ашшĕ.
НИМĔÇ КАПИТАНĔ.
ЭММА — нимĕçсене майлă ĕçлекен хĕрарăм.
ГАНС, ФРИЦ — нимĕç салтакĕсем.

## ПĔРРЕМĔШ АКТ

Сайра вăрман. Сăрт. Инçетре тупă сассисем илтĕнеççĕ. Йывăççен хӳтлĕхĕнче Ванюшин, Петров, Валя тата Ахметов выртаççĕ. Петровăн ручной пулемĕт пур. Ахметовăн танка пĕтермелли пăшал. Валя санитарнăй сумка çакнă. Кашниннех автомат. Умĕсенче гранатăсем выртаççĕ.

ВАНЮШИН (*Раци тăрăх калăçать*). Илтетĕр-и мана? Икĕ атакăна çапса салатрăмăр. Тата кĕтетпĕр. Парăнмастпăр, хытă тăратпăр. Точно! (*калаçма чарăнать*).

ПЕТРОВ. Мĕн теççĕ?

ВАНЮШИН. Хальхи пекех çирĕп тăма хушаççĕ.

АХМЕТОВ. Вилетпĕр, анчах чакмастпăр, сержант юлташ.

ВАЛЯ (*Ванюшин патне упаленсе пырса*). Сержант юлташ!

ВАНЮШИН. Мĕн каласшăн эсир, Миронова?
ВАЛЯ. Сире амантнă.
ВАНЮШИН. Амантнă? (*аллипе питне сăтăрса пăхать*). Точно!
ВАЛЯ. Кӳрĕр, çыхса ярам.
ВАНЮШИН. Çыхăр тархасшăн. Пĕр тумлам юн ытлашши юхни те пирĕн вăйсене чакарма пултарать. Анчах та вăй нумай кирлĕ-ха пире, Миронова юлташ. Тăшман кĕçех çĕнĕ вăйпа атакăлама тытăнать акă.
ВАЛЯ. Хăтăлса тухайăпăр-ши? Ытла та шала кĕрсе юлтăмăр.
ВАНЮШИН. Тухатпăр. Тухмалла пулмасан та хуйхăрмăпăр. Пире атакăласа çĕршер салтакĕсене пĕтерчĕç вĕсем. Каллех килсе тăрăнаççĕ пулсан — татах нумай пĕтеретпĕр. Точно.
ВАЛЯ (*Ванюшин суранне çыхсан*). Пулчĕ...
ВАНЮШИН. Тавтапуç.
ВАЛЯ. Асăрханма тăрăшăр, сержант юлташ. Сирĕн суран хăвăра çеç мар, ыттисен чĕрине те ыраттарĕ.
ВАНЮШИН. Камăнне тата?
ВАЛЯ. Епле камăнне? Пуринне те... Эсир — командир.
ВАНЮШИН. Сире те упранма сĕнетĕп. Сирĕнпе инкек-синкек пулас пулсан та çынсен чĕрисем ыратĕç, эсир — сестра. Кирлĕ вăхăтра сирĕнтен кашниех пулăшу кĕтет.

Пурте шăпланса выртаççĕ. Пĕр самант хушши тупă сасси те çухалать.

ВАЛЯ. Ытла та шăпланчĕ. (*Кайăк юрлани илтĕнет*).
АХМЕТОВ. Çил-тăвăл тухас умĕнхи шăплăх çеç ку.
ВАЛЯ. Итлĕр-ха! Кайăк сасси мар-и?
ПЕТРОВ. Сержант юлташ, кайăк юрлать.
ВАНЮШИН. Точно. Килти пекех туйăнса кайрĕ. Килте чухне эпир Петровпа Атăл çине пулла кайма юрататтăмăр. Лараттăмăр вара шăп пулса. Хăвалăхра кайăксем вĕçеççĕ, юрă шăрантараççĕ... Мĕн чухлĕ илем, мĕн чухлĕ

хаваслăх вĕсен юррисенче... Кайăксене хăратса тартас мар тесе ним хускалмасăр итлесе лараттăмăр. Астăватăн-и, Петров?

ПЕТРОВ. Кам манĕ килти лăпкă, савăклă пурнăçа?

ВАЛЯ. Сирĕн кил Атăл çывăхĕнче эппин?

ВАНЮШИН. Анне мана Атăл шывĕпе чăпăл туса ӳстернĕ. Атте чи малтан Атăл çине илсе тухса пурнăçпа паллаштарнă... Эх, Миронова юлташ... Пырса курасчĕ эсир чăваш çĕршывне. Пирĕн яла... Калама та çук илемлĕ пирĕн çĕршыв! Ялăн икĕ енĕпе сĕм вăрман кашласа ларать, ял вĕçĕ юхан шыв хĕррине тухать. Улăхра сипсимĕс çаран ешĕрет. Саркайăксем юрлаççĕ. Улăх урлă каçан та, сăрта хăпарсан, аслă Атăл хумханса выртни курăнать.

ВАЛЯ. Аван.

ВАНЮШИН. Точно. Фашистсене пĕтерсе тăксан пирĕн çĕршыва пырса курма ан манăр, Миронова юлташ... Вара Атăл çине пулла кайăпăр иксĕмĕр.

ВАЛЯ. Ытла та пулас çуккине калаçатăр...

ВАНЮШИН. Мĕншĕн пулас çуккине? Эпĕ чăнласах калатăп. Ытах пирĕн пата пыма хăймастăр пулсан, эп хăвăр пата пырса курăп. Сирĕн таврара та çĕршыв илемлĕ, пĕлетĕп.

ВАЛЯ. Шел, кĕреймерĕмĕр пирĕн пата. Халĕ нимĕçсен тылне юлчĕ ĕнтĕ вăл. Аттепе аннене питĕ курас килетчĕ. Çухатрĕç пулĕ ĕнтĕ вĕсем мана. Мĕн турĕç-ши вĕсене нимĕçсем? Пичче те çухалчĕ...

АХМЕТОВ. Сержант юлташ, раща кĕтессинелле пăхăр-ха?

ПЕТРОВ. Килеççĕ.

ВАЛЯ. Нумайăн килеççĕ...

ВАНЮШИН. Точно. (*Рации тăрăх калаçать*). Сталинград. Сталинград. Атăл калаçать. Каллех атакăлаççĕ. Батальонран кая мар. Юрĕ. Хытă тăрăпăр. Тем пулсан та, хамăр рубежран чакмастпăр. Сывă пулăр.

АХМЕТОВ. Каллех пӗр танк та курӑнмасть.

ВАНЮШИН. Танксем ҫукки юрӗ-ха вӑл, Ахметов юлташ. Анчах танксем килес пулсан, лайӑхрах тӗллесе пеме тӑрӑшӑр. Тӗл лектерейместен, тӑшман хамӑра таптаса кайӗ.

АХМЕТОВ. Маншӑн ан шикленӗр, сержант юлташ. Вунӑ патрон персен, вуннӑшне те тӗл лектерме вӗреннӗ эпӗ.

ПЕТРОВ. Ҫитрӗҫ. (*Пулемӗтран персе ярать*).

ВАНЮШИН. Тӑхта, Петров. Командӑсӑр ма петӗн?

ПЕТРОВ. Ытла та хӑюллӑн килеҫҫӗ. Чӑтма пултараймарӑм, сержант юлташ.

ВАНЮШИН. Инҫетех каяймӗҫ.

ВАЛЯ. Пӑхӑр, малта офицер пырать.

ВАНЮШИН. Точно.

АХМЕТОВ. Сержант юлташ, пеме ирӗк парӑр?

ВАНЮШИН. Тӑхтӑр, Ахметов... Петров!

ПЕТРОВ. Эпӗ, сержант юлташ.

ВАНЮШИН. Куратӑр-и?

ПЕТРОВ. Куратӑп.

ВАНЮШИН. Санӑн задача — эпӗ команда парсанах ҫав пулемӗт расчетне пӗтересси пулать.

ПЕТРОВ. Есть, сержант юлташ.

ВАНЮШИН. Боец Ахметов!

АХМЕТОВ. Эпӗ, сержант юлташ.

ВАНЮШИН. Сана тӑшманӑн офицерне персе ӳкерме хушатӑп.

АХМЕТОВ. Есть, сержант юлташ. (*Васкамасӑр перет*).

ВАЛЯ. Ӳкрӗ.

ВАНЮШИН. Молодец, Ахметов!

АХМЕТОВ.. Совет Союзне служить тӑватӑп.

ВАНЮШИН. По фашистским разбойникам, короткими очередями — огонь!

Пурте автоматсенчен переҫҫӗ, тӑшмансем енчен те пӑшал, пулемёт сасси илтӗнме пуҫлать.

ВАНЮШИН (*автоматран персе*). Кунта Хӗвеланӑҫ Европӑри мар, кунта — хӑватлӑ Совет Союзӗ. Кунта — пуйма килекенсем вилӗм ҫеҫ тупаҫҫӗ.

Тӑшмансем енчен мина ӳлесе килсе ҫурӑлнӑ сасӑ илтӗнет. Ахметов йӑванса каять.

ВАЛЯ. Мина.

ВАНЮШИН. Эх, сволочьсем! Миронова! Ахметов патне пырӑр хӑвӑртрах.

ВАЛЯ. Халех, сержант юлташ. (*Упаленсе каять*).

ВАНЮШИН (*Петрова*). Мӗн турӑн эсӗ? Вӑхӑтсӑр персе тӑшмана хамӑр ӑҫтине кӑтартрӑн!

ПЕТРОВ. Чӑтаймарӑм, сержант юлташ.

ВАНЮШИН. „Чӑтаймарӑм". Ун пек чух чӑтма пӗлес пулать! Пӗтӗмпех сан пирки пулчӗ ҫакӑ. Эсӗ тӑшман пулемётчикӗсене пӗтереймен пирки... Пер хӑвӑртрах, куҫран ҫухаличчен. Ма пеместӗн? (*Петров аманнине курса*). Валя, ҫых Петров суранне. (*Петровӑн пулемётӗнчен перет*). Выртӑр шӑпланса! (*Фашистсем ахӑрашса кӑшкӑрнӑ сасӑ илтӗнме пуҫлать*).

ВАНЮШИН (*Петрова*). Куртӑн-и, мӗн турӑн эсӗ? Сана пула фашистсем хӑюлланчӗҫ. Ме пулемётна! Пӗр пульлине те сая ямасӑр пер.

ПЕТРОВ (*пулемётран пеме тапранать*). Чыхӑнӑр!..

ВАНЮШИН (*граната ывӑтса*). Тӑван ҫӗршывшӑн, Сталиншӑн!

Фашистсем ахӑрашнӑ сасӑ вӑйсӑрланать, юлашкинчен вуҫех шӑпланать.

ВАНЮШИН. Чыхӑнтӑр-и, йытӑ пуҫӗсем?

ВАЛЯ. Сержант юлташ, килӗр-ха кунта!

ВАНЮШИН. Мӗн пулнӑ?

ВАЛЯ. Сирӗнпе Ахметов калаҫасшӑн.

ВАНЮШИН (*Ахметов патне упаленсе пырать*). Ахметов... Ахметов!

АХМЕТОВ (*куҫне уҫса*). Сержант юлташ...

ВАНЮШИН. Савнӑ тусӑм... Кӑмӑлна ан хуҫ. Сана халех тыла ӑсататпӑр. Чиперех сывалӑн. Каллех хамӑрӑн боевой ҫемьене таврӑнса тӑшмана ҫӗмӗрме тытӑнӑн.

АХМЕТОВ. Ҫук, сержант юлташ. Вилӗм хурлантармасть мана. Пархатарсӑр вилесси ӑша ҫунтарать. Ӗмӗтӗм сая кайни кӑмӑла хуҫать. Тӑшманӑн пӗр танкне те пулин ҫунтарса савӑнаймарӑм... Эпӗ пӗр пульӑна та сая ямасӑр пеме вӗреннӗччӗ.

ВАНЮШИН. Лӑплан, Ахметов... Тӑшманӑн пӗр танкне ҫеҫ мар, вуншар, ҫӗршер танкне те ҫунтарӑпӑр. Вӑхӑт ҫитӗ — ирсӗр тӑшмана пуҫӗпех ҫӗмӗрсе тӑкӑпӑр...

АХМЕТОВ. Ӗненетӗп, сержант юлташ... Анчах эпӗ... курас ҫук вӑл саманта. Ванюшин юлташ, ху чӗрӗ юлас пулсан, ман килтисене ҫырса пӗлтерӗр. Неиле патне юлашки салам ҫырса яр. Сана юратнине хӑйпе пӗрлех илсе кайрӗ, те... Сыв пулӑр... Ванюшин... Валя... Тавӑрӑр... тӑшмана... (*Шӑп пулать*).

ВАНЮШИН. Ахметов, тусӑм...

ВАЛЯ (*Ахметов алтымарне тытса*). Вилчӗ...

ВАНЮШИН. Тата тепӗр совет ҫыннин тӗрӗс пурнӑҫӗ пӗтрӗ. Мӗн чухлӗ юн тӑкрӗ хаяр тӑшман! Ан пӑшӑрхан, тӑванӑм. Эсӗ кӗрсе выртас ҫӗре тӑшман таптаса вараламӗ. Саншӑн та, пуриншӗн те тавӑрӑпӑр... Лӑпкӑ сывӑр, хаклӑ юлташӑм. (*Аллипе тытса тӑнӑ Ахметов пуҫне ерипен ҫӗр ҫине хурать*).

ВАЛЯ. Сержант юлташ, сирӗн халӗ те юн юхать-ҫке...

ВАНЮШИН. Вӑл нимӗн те мар, Миронова юлташ. Вӑл хаярланмалӑх юн ҫеҫ. Тӑшмана татах та пӗтӗм чунтан курайми пулӑпӑр.

ВАЛЯ. Кӳр, суранна татах ҫыхса ярам.

Валя Ванюшин суранне ҫыхать. Танксем килнӗ шав илтӗнме пуҫлать.

ПЕТРОВ. Танксем килеҫҫӗ.

ВАНЮШИН. Васкӑр, Миронова юлташ.

ВАЛЯ. Халех... (*Ҫыхса пӗтерет*).

ВАНЮШИН. Петров! Миронова юлташ, эсир те... Танксем ҫинче ларса килекен фрицсене тӗллесе перӗр. Эпӗ малта пыракан танкне чарма тӑрӑшӑп. (*Танка пӗтермелли пӑшала илсе перет*). Саншӑн, Ахметов! (*Пауза*).

ВАЛЯ. Ҫунать.

ВАНЮШИН. Пӗри ӑҫта — тепри те ҫавӑнта пулӗ! (*Перет*).

ВАЛЯ. Тепри те хыпса кайрӗ.

ВАНЮШИН. Точно. Таптаймӑр пирӗн таса ҫӗршыва!

Татах перет, анчах пӗр танкӗ ҫывхарса килнӗ сасӑ илтӗнет.

ВАЛЯ. Ҫывхарать. Ма пеместӗр, сержант юлташ?

ВАНЮШИН. Пуля илмест...

ВАЛЯ. Мӗн тӑватпӑр ӗнтӗ?

ВАНЮШИН. Ан хумханӑр, Миронова юлташ... Таптаймӗ! Точно. (*Аллине пӗр ҫыхӑ граната тытса малалла шуса кайма тӑрать*).

ПЕТРОВ. Сержант юлташ, тӑхтӑр-ха!

ВАНЮШИН. Эсӗ мӗн?

ПЕТРОВ. Хӑвӑр мӗн шутланине мана тума ирӗк парӑр. Эсир командир, эсир кунта кирлӗ. Авӑ, хыҫалта тата тепӗр танк килет. Вӑл сире валли пултӑр. Ку мана пултӑр. Ирӗк парӑр, сержант юлташ!

ВАНЮШИН. Юрӗ, кайӑр эппин.

ПЕТРОВ. Тавтапуҫ, сержант юлташ. (*Гранатӑсем илет. Ванюшинпа чуптӑваҫҫӗ*). Сывӑ пул. Валя, пирӗн чӑваш ҫӗршывне кайса курма ан манӑр, вара шӑв-шавлӑ ӗҫкӗсенче мана асӑнса та пӗрер черкке ӗҫӗр. Сывпулӑр! (*Петров малалла шуса каять. Курӑнми пулсан гра-*

*ната шартлатса çурални, тата танк çĕмĕрĕлнĕ саса илтĕнет*).

ВАНЮШИН. Мухтав сана, Çемен. Эсĕ паттăрăн вилнине халăх ĕмĕрне те манмĕ.

Тупăран пенĕ сасă илтĕнет, Ванюшина тепĕр хут амантаççĕ. Вăл ӳкет.

ВАЛЯ (*Ванюшин патне васкавлăн пырса*). Сержант юлташ! Ванюшин... Сантăр... Саша!.. (*Пуçне Ванюшин пичĕ çине хурать*). Чĕрĕ-ха... Чĕрĕ! Вилес çук вăл!

ЧАРШАВ.

## ИККĔМĔШ АКТ

### 1-мĕш картина

Вальăсен пӳртĕнче. Кĕркури чӳречерен пăхса тăрать. Урамра нимĕççем çуйхăшса ирте-ирте кайни илтĕнет. Каллех шăпланать.

КĔРКУРИ. Килчĕç, этем мурĕсем...

ОКСАННА (*кухньăран тухать*). Ай тур-тур, мĕн курăпăр-ши ĕнтĕ?

КĔРКУРИ. „Мĕн курăпăр-ши"? Каларăм вĕт хамăрăн çарпа пĕрле каяр, тесе. Итлемерĕн ман сăмаха!

ОКСАННА. Кил-çурта пăрахса хăварасси, терĕм-çке. Ĕмĕрĕпе ĕçлесе тунă вĕт эпир ăна.

КĔРКУРИ. Кил-çурт?.. Мĕнех вăл пирĕн кил-çурт? Тăван çĕршыв вутра çунать. Çук, эсĕ кирек мĕн ту та, эпĕ урăх тӳссе пурăнаймастăп, каятăп.

ОКСАННА. Ăçта каятăн?

КĔРКУРИ. Ялпа пĕрле. Çĕлен калтасен пуçне касма.

ОКСАННА. Ай тур-тур, Кĕркури... Килте те аран-аран çӳретĕн те, унта кайсан мĕн курăн-ши?

КĔРКУРИ. Ан хăра, Оксанна. Тăшмана курайманни вăй парĕ, çамрăклатĕ. Пĕр хут çеç мар нимĕç çĕлен-калтисен пуçĕсене туранă эпĕ. Халь татах казакăн хĕçпăшалне тутанса пăхчăр. Çимелли чиксе хатĕрле-ха.

ОКСАННА. Халех-и?

КĔРКУРИ. Халех, çак самантрах. Хатĕрле, хатĕрле.

ОКСАННА. Ай тур-тур, мĕн курăпăр-ши ĕнтĕ?

Оксанна кухньăна тухать. Кĕркури кăмака айĕнчен сунара çӳрекен пăшалне тата патронташ кăларса илет.

КĔРКУРИ. Малтанлăха ку та пырĕ-ха. Унта çитсен лайăххине туянăп. Сан хатĕр-и?

ОКСАННА (*кèрет*). Хатĕр...

КĔРКУРИ (*кутамкине илсе çакать*). Итле-ха, Оксанна. Тен эсĕ те пыратăн?

ОКСАННА. Ман килтен тухса пулмасть, Кĕркури.

КĔРКУРИ. Шухăшласа пăх, Оксанна.

ОКСАННА. Шухăшламалли те çук. Вилсен те хам килте выртса вилеп. Эсĕ каях, сана чармастăп.

КĔРКУРИ. Хăвăн ирĕк, Оксанна. Кайран ӳпкелемелле ан пултăр...

Пауза.

ОКСАННА. Иăвасăр кайăксем пек пулатпăр. Хура çăхансем килсе тапăнчĕç те, сапаласах ячĕç. (*Макăрать*).

КĔРКУРИ. Çавăнпа пĕтерес пулать вĕсене... Хамăр ывăлшăн ытти çынсем тавăрассине кĕтсе лармалла-и? Çук... Ну, сывă пул...

Çенĕк алăкне шакăртаттарнă сасă илтĕнет.

ОКСАННА. Ах, Кĕркури, тăхта-ха, çенĕке шаккаççĕ мар-и унта?

Кĕркурипе Оксанна ним шарламасăр итлесе тăраççĕ. Çенĕк алăкне татах шакăртаттарнă сасă илтĕнет.

ОКСАННА. Шаккаççĕ...

КĔРКУРИ. Хăямат пуçĕ! Тухса кайма ĕлкĕреймерĕм. Ялан чăрмантаратăн эсĕ мана. Хĕрарăм темерĕн!

ОКСАННА. Мĕн туса чăрмантартăм-ши сана? Эсĕ ялан мана ятлаçатăн. Хыврăн хăвăртрах! Тем курса ларăпăр.

КĔРКУРИ. Инкек темерĕн! (*Пăшалĕпе патронташне хывса кăмака айне чикет. Çенĕке тата хытăрах шаккаççĕ*).

ОКСАННА. Ай тур-тур, мĕн тăвăпăр-ши?

КĔРКУРИ. Уçса кĕртес пулать. Çенĕке питĕрнипе кĕме чарасси пур-и? Пушшех çиллентерĕн вĕсене, çавă кăна.

ОКСАННА. Уç эппин хăвăртрах.

Кĕркури тулалла тухса каять. Оксанна хăранипе вырăнтан та хусканмасть. Вăхăт нумай та иртмест — Кĕркури кĕрет. Ун хыççăнчен—Валя. Аллинче раци ещĕкĕ пур.

КĔРКУРИ. Оксанна, пăх! Кама тупса кĕтĕм эпĕ? Çухалнă хĕре тупса кĕтĕм!

ОКСАННА. Валя... хĕрĕм!

ВАЛЯ. Анне!.. (*Оксанна патнелле утма тăрать, анчах сулăнса каять*).

КĔРКУРИ (*Вальăна тытма ĕлкĕрет*). Валя, мĕн пулнă сана? Сывă мар-и-мĕн эсĕ?

ОКСАННА. Ах, хĕрĕм...

ВАЛЯ. Лăпланăр, атте-анне... Эпĕ сывах... Анчах эпĕ виçĕ тавлăк куç хупман, ăша тĕпренчĕк çăкăр яман.

ОКСАННА. Вырăн çине вырттарас...

КĔРКУРИ. Халех, Оксанна...

ВАЛЯ (*хăйне алла илет*). Нимех те мар, атте. Эпĕ тӳсме пултаратăп. Унта... манăн юлташ пур.

КĔРКУРИ. Мĕнле юлташ?

ВАЛЯ. Кайран пĕтĕмпех каласа парăп.

ОКСАННА. Ай тур-тур, хĕрĕм, ма кӳртмерĕн эс ăна халиччен? Аван-и ун пек? Кĕркури, тух, чĕнсе кӳрт часрах!

ВАЛЯ. Хăй тĕллĕн кĕреймест вăл, анне. Кĕме пулăшас пулать ăна. Атте, атя-ха хăвăртрах илсе кĕрер. Эсĕ вырăн сарса хатĕрле-ха, анне. (*Тухаççĕ*).

ОКСАННА. Хатĕрлĕп, хĕрĕм...

2. Чаршав уçăлсан.



Чувашская республиканская БИБЛИОТЕКА им. М. ГОРЬКОГО
дж 27637 - чув.

Оксанна вырӑн хатӗрлет. Чылай вӑхӑт иртсен Кӗркурипе Валя Ванюшина ҫӗклесе кӗреҫҫӗ.

ОКСАННА. Чирлӗ мар-и вӑл?

ВАЛЯ. Амантнӑ ӑна, анне.

ОКСАННА. Выртарӑр ҫакӑнта. (*Ванюшина вырӑн ҫине выртараҫҫӗ*).

ВАЛЯ. Анне... Атте... Ку ҫын — манӑн ҫапӑҫусенчи юлташ. Мана хисепленӗ пекех хисеплӗр ӑна. Мана юратнӑ пекех юратӑр. (*Вырӑн ҫине ӳкет*).

ВАНЮШИН. Валя!

ОКСАННА. Ай тур-тур, мӗн пулчӗ?

КӖРКУРИ. Хӗрӗм! Валя!

ЧАРШАВ.

II-мӗш картина.

Ҫавӑнтах. Виҫӗ уйӑх иртнӗ. Оксанна сайра хутран чӳрече патне пыра-пыра пӑхать.

ОКСАННА (*чӑлха ҫыхать*). Пуҫӗсене ҫимерӗҫ пулсан юрать. Ҫурҫӗр иртни те самай ӗнтӗ. Юрать-ха, ҫӗрӗ тӗттӗм... Малашне мӗн курмалла пулӗ-ши? Вӑхӑтра таврӑнманни хӑратма пуҫларӗ. Апат та сивӗнчӗ пулӗ. Тӑватӑ кун тӑватӑ ҫул пек туйӑнчӗ. Ҫӑкӑрӗсем те пӗтрӗҫ пуль... Ҫаплах килмеҫҫӗ... Юлташне „мана хисепленӗ пекех хисеплӗр ӑна, мана юратнӑ пекех юратӑр“, терӗ. Вилӗмрен ҫӑлчӗ... (*Алӑка шаккаҫҫӗ*). Хӑшӗ-ши? (*Тухать*).

КӖРКУРИ. Ванюшин таврӑнмарӗ-и?

ОКСАННА. Кашни минутрах кӗтсе тӑратӑп. Анчах хӑрушӑ пула пуҫларӗ.

КӖРКУРИ. Мӗн апла?

ОКСАННА. Нимӗҫсем ҫине тӑрсах шыраҫҫӗ ӑна. Эсӗ тухса кайсан пирӗн пата та килчӗҫ.

КӖРКУРИ. Ман ҫинчен ыйтмарӗҫ-и?

ОКСАННА. Тем шавлаҫҫӗ вӗсем. Вӑрҫаҫҫӗ, ҫӗмӗреҫҫӗ...

Пур çĕрте те ухтараççĕ... Пытарма ĕлкĕреймен япаласене çаратса тухрĕç. Тырă тата ăшă япаласем леçсе пама хушаççĕ. Памасан вĕлеретпĕр, теççĕ. Ах, тур-тур, Кĕркури, хăй таврăннă çĕре килсе кĕресрен хăруша.

КĔРКУРИ. Хытă сыхланас пулать, халь пур çĕрте те хăруша. (*Алăка шаккаççĕ*).

ОКСАННА. Валя пулас. (*Тухать*).

ВАЛЯ. Атте, эсĕ çитрĕн-и? (*Чуптăваççĕ*). Саша килмерĕ-и?

ОКСАННА (*хĕрне ыталаса*). Килес çын килĕ-ха, хĕрĕм... Эп апат хатĕрлем-ха. Çикелĕр те, вара кăшт канăр. (*Кухньăна каять*).

ВАЛЯ (*сехет çине пăхса*). Вăхăт. Ĕç тухрĕ-и, атте?

КĔРКУРИ. Тухрĕ.

ВАЛЯ. Пĕлсе килтĕн-и? (*Оксанна сĕтел çине апат лартать*).

КĔРКУРИ. Пĕлтĕм. (*Тулта кушак макăрнă сасă*).

ВАЛЯ. Килчĕ, килчĕ! (*Хавассăн сиккелесе тухса каять*).

КĔРКУРИ. Оксанна!

ОКСАННА. Мĕн тата?

КĔРКУРИ. Тахçанах каласшăнччĕ эп сана...

ОКСАННА. Мĕн çинчен?

КĔРКУРИ. Авă, хăрах уран сиксе тухса кайрĕ. Хĕре ытлашширех ирĕке янă эсĕ.

ОКСАННА. Ай тур-тур, Кĕркури, уншăн мĕн тăвас-ха ĕнтĕ манăн?

КĔРКУРИ. Пăртак чарас пулать, халь вăхăчĕ урăх.

ОКСАННА. Хăв мĕншĕн чармарăн? Виçĕ уйăх хушши хăй тăванне пăхнă пек пăхса сыватрĕ. Мĕншĕн ун чухне пĕр сăмах та каламарăн? Хĕрлĕ Çарта пĕрле пулнă вĕсем. Халĕ те пĕрле ĕçлеççĕ. Савăнтăрах ара. Саша маттур ача. Ăраскал тивсен, савăнсах кĕрӳ тесе чĕнме хатĕр эп ăна.

КĔРКУРИ. Тапратса пар çеç сана, каятăн вара эсĕ...

ОКСАННА. Ху мĕншĕн хускатрăн? Пĕртен-пĕр ывăл вăрçăра нимĕçсемпе çапăçса вилчĕ. Саша халь пирĕн кус-çульсемшĕн тавăрать. Пирĕн те ăна Валя пекех хисеплемелле.

КĔРКУРИ. Ан шарла, кĕреççĕ.

Ванюшинпа Валя кĕреççĕ. Ванюшин казаксен кивĕрех тумĕпе. Кутамка çакнă.

ВАНЮШИН. Салам, Оксанна аппа!

ОКСАННА. Салам, ачам. Чипер çÿресе килтĕн-и?

ВАНЮШИН. Питĕ аван. Кĕркури пичче!

КĔРКУРИ. Салам, салам.

ВАНЮШИН. Тытăнăпăр.

КĔРКУРИ. Тăхтăр. Оксанна, эсĕ хураллама тухмастăн-ши? Пăртак калаçсан хам тухăп вара.

ОКСАННА. Калаçăр, калаçăр. Тухатăп. (*Сăхман тăхăнса тухса каять*).

ВАНЮШИН. Фашистсене нимĕр турĕç, точно. Эпĕ вырăна çитнĕ çĕре фашистсен малтан пыракан машинисем çĕмрĕк кĕпер патне пырса чарăнчĕç. Кĕпере юсама хăтланнă хушăра, пробка пулса тăчĕ. Ик-виç километр хушши автомашинăсемпе салтаксем çеç тăраççĕ. Çав вăхăтра эпĕ хамăр самолётсене чĕнсе илтĕм. Ну, пачĕç те вара, точно. Çур сехет хушши бомбă тăкрĕç. Фашистсем антранă сурăхсем пек, ниçта кайса кĕме пĕлмеççĕ. Курасчĕ сирĕн! Мотопехота колоннинчен кĕл те кăмрăк çеç пулса юлчĕ.

ВАЛЯ. Çав кирлĕ!

КĔРКУРИ. Маттур пирĕн лётчиксем!

ВАНЮШИН. Точно. Ну, сирĕн ĕçсем мĕнле?

ВАЛЯ. Пирĕн-и?

КĔРКУРИ. Эсĕ тăхта-ха, Валя. Эп каласа парам малтан. Манăн аннÿ вырăнне тухас пулать. Карчăк шăнма пултарать. Ăшă мар тулта, кĕркунне вĕт.

ВАЛЯ. Кала эппин.

КЁРКУРИ. Карттă кăлар-ха.

ВАНЮШИН. Халех! (*Карттă кăларса сĕтел çине сарса хурать*). Ну, мĕн вара?

КЁРКУРИ. Чугунçулне шыраса туп.

ВАНЮШИН. Акă.

КЁРКУРИ. Ращаллă вырăна туп.

ВАНЮШИН. Тупрăм.

КЁРКУРИ. Раща çумĕнче таса уйхир пур-и?

ВАНЮШИН. Пур.

КЁРКУРИ. Шăп çавăнта. Кунтан çирĕм километр та пулмасть.

ВАНЮШИН. Тĕлĕнмелле!

КЁРКУРИ. Мĕнрен тĕлĕнмелле?

ВАНЮШИН. Мĕнле-ха ара пирĕн сывлăшри разведчиксем тупайман ку вырăна? Пачах уçă вырăн-çке кунта!

КЁРКУРИ. Сывлăшран ăçтан куран ăна? Самолĕчĕсем çĕр айĕнчен вĕçсе тухаççĕ тейĕн, питĕ лайăх маскировать тунă.

ВАНЮШИН. Аэродром çĕр айĕнче-и?

КЁРКУРИ. Çапла çав.

ВАНЮШИН. Ну, Кĕркури пичче, ку аэродрома çĕмĕрсен, командовани ахаль тумасть сана!

КЁРКУРИ. Фашистсене пĕтерни — нимрен пысăк наград, Ванюшин. Вĕсене часрах пĕтересчĕ, манăн пĕтĕм ĕмĕт — çав кăна.

ВАНЮШИН. Пĕтеретпĕр, точно.

КЁРКУРИ. Ман сăмах пĕтрĕ. Эпĕ карчăк вырăнне тухса тăрам ĕнтĕ. Кĕрсе çул çине валли апат хатĕрлетĕр. (*Тухать*).

ВАНЮШИН. Валя... (*Пырса ыталасшăн, анчах хăяймасть*). Сан ĕçсем мĕнле?

ВАЛЯ. Пĕлсе килтĕм. Ĕнер складсене снарядсемпе бомбăсем нумай пушатрĕç.

ВАНЮШИН. Точно. Аэродромĕ те çывăхра. Тата мĕн?

ВАЛЯ. Тырă склачĕ пиллĕк, тумтирсен склачĕ виççĕ.

Станцирен инçе мар, пысăк, лапташка барак пекки пур. Унта танксене юсаççĕ.

ВАНЮШИН. Поездсем мĕнле çÿреççĕ?

ВАЛЯ. Кăнтăрла питех палăрмасть. Каçхине нумай иртсе кайрĕç. Сана валли тата пĕр интереслĕ хыпар илсе килтĕм.

ВАНЮШИН. Мĕнле хыпар?

ВАЛЯ. Эсĕ хăвăн пуçна мĕн хак хунине пĕлетĕн-и?

ВАНЮШИН. Ăнланмастăп, Валя.

ВАЛЯ. Акă, пăх. (*Хут татăкĕ кăларса парать*). Вула, вара ăнланăн.

ВАНЮШИН (*сасăпа вулать*) „Пурне те пĕлтеретпĕр: пирĕн хушăра вырăссен разведчикĕсем пулма пултараççĕ. Вĕсем тĕрлĕ сăн-сăпатлă пулса çÿреме пултараççĕ. Кам та кам вĕсене тытса парать, çавсене вунпилĕк пин марка награда пулать. Хÿтĕлесе усракансене судсăрах персе пăрахатпăр... Германи командованин уполномоченнăйĕ— капитан Шульц".

ВАЛЯ. Куратăн-и, епле илĕртеççĕ?

ВАНЮШИН. Точно... Ну, господин капитан, тахçанах вăхăт сан патна пыма. Ĕнтĕ нумаях кĕттермĕп. Итле, Валя. Эпĕ аэродром патне каятăп. Эсĕ партизансем патне тавăрăн. Кала: ыран мар, тепĕр кунне вĕсем станцăран тухнă çĕрти кĕпере (*картă çине кăтартса*), тата ак çак кĕпере çĕмĕрччĕр!

ВАЛЯ. Кайса калатăп, тем пулсан та çĕмĕретпĕр.

ВАНЮШИН. Ан ман, шăп вунпĕр сехет те вăтăр минутра çĕмĕрччĕр кĕпере.

ВАЛЯ. Манмастăп, Саша.

ВАНЮШИН (*рации тăрăх калаçать*). Сталинград! Сталинград! „Атăл" калаçать,—икçĕр çирĕм тăваттăмĕш тăваткăлра чугунçул. Чугунçул çумĕнче, уçă вырăнта, çĕр айĕнче аэродром. Ирхине унта пулатăп. Сигнал кĕтĕр. Мĕн, мĕн? Валяна та-и? Салам.

Оксанна кĕрет.

ОКСАННА. Валя, намăс мар-и сана?

ВАЛЯ. Мĕншĕн, анне?

ОКСАННА. Ах анчах та санпала, Валя, хывăнтарман та çынна. Мĕншĕн апат лартмарăн?

ВАЛЯ. Сáмаха пула анне, каçар.

ВАНЮШИН. Эх, Оксанна аппа, паянхи пек ĕç ăннă вăхăтра, хырăм выçнине те пĕлместĕн, ыйăх та килмест...

ВАЛЯ. Чăнах, ĕç ăнрĕ, тесе—выçă çÿреймĕн...

ВАНЮШИН. Тăхта-ха, Валя. Оксанна аппа. Эпĕ сире чи савăнăçлă хыпар пĕлтерем. Валя, халь анчах акă мана раци тăрăх пĕлтерчĕç: пире Вальăпа иксĕмĕре те Хĕрлĕ Ялав орденĕ памалла тунă.

ВАЛЯ. Чăнах-и?

ВАНЮШИН. Хăçан суйнă эпĕ, Валя?

ВАЛЯ. Атте, мĕнешкел савăнăç! (*Оксаннăна ыталаса чуптăвать*).

ОКСАННА. Мухтав, хĕрĕм... Сталина тав ту. Тăван çĕршывăн чĕререн парăнса тăшмансене хирĕç кĕрешекенсене никама та манмасть вăл.

ВАНЮШИН. Точно, Оксанна аппа.

ВАЛЯ. Саша...

ВАНЮШИН (*Вальăна алă парса Оксанна еннелле йăлăнăçлăн пăхать*).

ОКСАННА (*чееленнĕ пек*). Эп курмастăп, эп курмастăп...

Ванюшинпа Валя ыталанаççĕ, Кĕркури васкавлăн кĕрет.

КĔРКУРИ (*пăлханса*). Çитĕ, вăхăт мар халь ачашланса тăма.

ВАЛЯ. Атте, пирĕн паян пысăк савăнăç. Пире Сашăпа иксĕмĕре те орден памалла тунă.

КĔРКУРИ. Юрĕ, юрĕ... Васкăр, ачамсем... Нимĕççем килеççĕ!

ОКСАННА. Ай тур-тур...

КĔРКУРИ. Тухса шăвăнăр хăвăртрах.

ВАНЮШИН. Сывă пулăр... (*Ванюшинпа Валя тухса каяççĕ*).

ОКСАННА. Ах, Кĕркури, мĕншĕн маларах систермерĕн?

КĔРКУРИ. Шăппăн килсе тухрĕç вĕсем.

ТУЛТИ САСĂ. Хальт! Хальт! Стой! (*Пăшал сасси илтĕнет*).

ОКСАННА. Пĕтрĕç...

КĔРКУРИ. Чĕрӳне хытар, Оксанна...

## ВИÇÇĔМĔШ АКТ

Чугун çул вокзалĕнчи пӳлĕм. Икĕ алăк. Пĕр алăкне сăлăппа питĕрнĕ. Сĕтел çинче телефон, тата тĕрлĕ япаласем купаланса тăраççĕ. Чемодан ларать. Сĕтел умĕнче Ганс тăрать.

ГАНС. Нимĕн те астумастăп. Ăçта хутăм эп çавна? Тата мĕн чиксе хатĕрлеме хушнăччĕ-ха вăл çавăнта? (*Кĕсъисене хыпашласан-хыпашласан хут татăкĕ туртса кăларать*). Çакă пулас... Аранах тупрăм... Çухалнă пулĕ тесе чĕре юлмарĕ. Фу... (*Хутне вуласа чемодана тĕрлĕ япаласем хурать*). Кĕпе... Пушмак... Часы... мĕн хатĕрлесе хывма хушни пурте пур. Килтĕр. Хăюллăнах рапăртлама пултаратăп.

Капитан тăвăллăн кĕрет. Унăн кăкăрĕ çинче „тимĕр хĕрес".

ГАНС. Господин капитан! Эсир хушнисене пĕтĕмпех...

КАПИТАН. Ох!.. (*Пукан çине йывăррăн ларать*).

ГАНС (*чĕтрекен сасăпа*). Господин капитан, господин капитан...

КАПИТАН. Ну, тата мĕн, тăмпуç?

ГАНС. Штабран пакет килсе пачĕç.

КАПИТАН. Пакет?

ГАНС. Кунтах... халех. Акă, господин капитан...

КАПИТАН. Кӳр хăвăртрах, тăмпуç. (*Пакета васкавлăн илет те, хутне кăларса, сасăпа вулать*). Çакна пĕлтеретпĕр сире. Большевиксен разведчикĕ-радист ытларах та ыт-

ларах асса пырать. Вунвиççĕмĕш числора вăл сирĕн çывăхри шоссепе пыракан мотопехотăн колонни çине бомбăсем пăрахтарнă. Эсир ку таранччен те ăна тытманни тĕлĕнтерет пире. (*Вулама чарăнса*). Доннер ветер! Тĕлĕнтерет... Сире унта хушса ларма аван... Эпĕ ун хыçĕнчен çĕрĕн-кунĕн йĕрлесе канăçа çухатрăм. Хамăн алăпа, çак аллăмсемпе вĕлерне çынсен кӳлеписем куçа курăнакан пулчĕç. Шыраман хушăк хăвармарăм, çунтарман кĕтес юлмарĕ... Чорт возьми! Хаклă тӳлеттĕм эпĕ вăл разведчика тытса паракана! (*Телефон янрать*).

КАПИТАН (*телефон трубкине тытса*). Варшава итлет. Шульц. Мĕн, мĕн? Иртнĕ каç çĕр тăххăрмĕш номерлă аэродромра? Пулма пултараймасть. (*Телефон трубкине хурса*). Пакартине туртса кăларăттăм! Никам та мар, çавсемех тунă ăна. Çавсен ĕçĕ ку... Ганс!

ГАНС. Эпĕ, господин капитан.

КАПИТАН. Кăлар-ха заложниксене.

ГАНС. Халех, господин капитан. (*Сăлăппа питĕрнĕ алăка уçса кĕрет, сасси подвалран илтĕнет*). Тухăр Мĕн йӳтесе выртатăр? Тухăр, тухăр хăвăртрах! (*Такама çапнă сасă, йынăшнă сасă илтĕнет. Подвалран Оксаннăна тĕртсе кăларать, ун туммтирĕ çуркаланса пĕтнĕ*).

КАПИТАН. Васкавлă шуçкала, çĕр ăманĕ!

ГАНС (*Оксаннăна сĕтĕрет*). Шуйттан пуçĕ! Ура çине тăратăн-и? Утатăн-и?

ОКСАННА (*аташса хăй тĕллĕн калаçать.*) Ах, хĕвелĕм, сар хĕвелĕм... Эсрел хăпарчĕ те çутта сӳнтерчĕ. Ах, хĕвелĕм, сар хĕвелĕм...

ГАНС (*çапма тăрать*). Мĕн сĕрлетĕн, усал хурт-кăпшанкă!

КАПИТАН (*чарать*). Швайн! (*Оксаннăна*). Кам вăл санăн çут хĕвелӳ? (*Хут çине пăхать*). Валентина? Сирĕн килтен тухса кайнă çынсем камсем пулнă? Кала! Каласан кăларса яратăп. Ну, калатăн-и?

ОКСАННА. Эсрелĕ хăпарчĕ те—сӳнтерчĕ. Çут тĕнчене хупăрларĕ.

КАПИТАН. Çăварна хуп, выльăх! (*Çапать*).

ОКСАННА (*хаяррăн кăшкăрса ярать. Капитан аллинчен вĕçерĕнсе пĕр кĕтессе лăпчăнса ларать*). А-ай! Кашкăрсем сырăнса илчĕç, хăвалăр. Ма хăваламастăр? (*Кĕркури урă юлнă подвал алăкĕнчен кĕрет*).

ГАНС. Йытă пуçĕ темерĕн. (*Оксаннăна урипе тапать*). Хупла çăварна!

КĔРКУРИ. Уссăрах асаплантаратăр ăна. Çапнине те, вĕлерессине те туйми пулнă ĕнтĕ вăл. Телейлĕ.

КАПИТАН. Телейлĕ эппин?

ОКСАННА. Эсрелĕ аçа-çиçĕм çаптарчĕ, çутă хăparттарчĕ.

КАПИТАН (*кабурĕнчен пистолет кăларса Оксанна çине перет*). Ме сана çутă!

КĔРКУРИ. Оксанна! (*Оксанна патне ӳкет*).

ОКСАННА (*çаплах калаçать*). Ылханатăп... Сире...—эсрелсене çуратнă йытă амисене...

КАПИТАН (*Ганс çине пăхса*). Мĕн пăхса тăратăн? Илсе кай ăна кунтан! (*Ганс Оксанна патĕнчен Кĕркурине тĕртсе ярать, Оксаннăна подвала сĕтĕрсе кĕрет*).

ОКСАННА. Чĕтрĕр, эсрелсем... Акă сире çапса аркатма аслă Сталин Хĕрлĕ Çар ертсе килет. Чĕтрĕр! (*Подвалта пăшал сасси. Оксанна шăпланать*).

КАПИТАН. Ну, эсĕ мĕн калатăн? Хумханатăн курăнать? Лăплан тархасшăн... Ганс, шыв тултарса пар ăна.

ГАНС. Халех, господин капитан (*Шыв тултарса, Кĕркури патне илсе пырать*). Ĕç.

КАПИТАН. Ĕçесшĕн мар курăнать. Юрĕ... Карчăкна шеллетĕр. Мĕн тăвас? Кăмăллă калаçасшăн пулмарăр. Малтанах чипер калаçмаллаччĕ. Карчăк та сывă пулĕччĕ... Хăвăра та хисеп... Ну, камсем тухса кайрĕç вăл каçхине сирĕн килтен?

КĔРКУРИ. Никам та тухса кайман.

КАПИТАН. Суятăн!

КĔРКУРИ. Хăвăр пĕлетĕр пулсан, манран ыйтмалли те çук. Кам, ăçта мĕн туса çӳренине эпĕ пĕлес çук. Совет çĕршывĕ вĕçĕ-хĕррисĕр аслă. Унăн халăхĕн йышĕ шутласа кăлармалла мар пысăк.

КАПИТАН. Хупла çăварна! Совет çĕршывĕ çук халĕ. Çук вырăс халăхĕ. Тĕнчери мĕнпур çĕршывсен хуçи эпир—нимĕçсем. Пĕтĕмпех нимĕçсен. Эсир—чурасем.

КĔРКУРИ. Хуçа пулса тăракана чурисене тупма çăмăлтарах пулмалла вăл. Шырăр. (*Телефон янрать*).

КАПИТАН (*телефон трубкине васкавлăн илсе*). Варшава итлет. Шульц. Кĕпере çĕмĕрнĕ? Эшелонсем? Доннер ветер! Каллех, каллех çавсем тунă ăна, урăх никам та мар... Бронепоезд хатĕрлĕр! Хам каятăп. (*Трубкăна хурать. Паровозсем тревогăллă çуйхăшса кăшкăрни илтĕнме пуçлать*).

КАПИТАН (*хумханса*). Ку мĕн япала, Ганс?

ГАНС (*чупса кĕрет*). Господин капитан, тревога!

КАПИТАН (*телефонпа*). Часрах ноль, ноль çирĕм пилĕк номере парăр. Гамбург? Варшава калаçать. Шульц... Мĕн унта? Вырăссен самолечĕсем? Инçетре-и? Çитеççĕ?

КĔРКУРИ (*аяккалла*). Маттур, Ванюшин, шĕкĕлче!

КАПИТАН. Мĕн? Каламастăн эппин? (*Ганса*). Илсе кай! Уринчен пуçласа пуçне çитиччен татăкăн-татăкăн валкăр. Пыршисене кăларăр! Илсе кай!

Ракета çутатса ярать.

ГАНС. Ракета кăларса ячĕç, господин капитан.

КАПИТАН. Пурне те ура çине тăратăр! Куна халлĕхе подвала хупăр. Унпа кайран майлашăпăр.

ГАНС. Итлетĕп, господин капитан!

Бомбăсем çурăлма пуçлаççĕ.

КАПИТАН (*чемоданне илсе*). Пĕтрĕмĕр! (*Тухса каять*).

ГАНС (*Кĕркурие автомачĕпе тĕксе*). Ну, ут подвала!

КĔРКУРИ. Ан сĕртĕн ман çумма, юнлă йытă. (*Сасартăк çаврăнса Ганс çине ыткăнать. Автоматне туртса илет*). Ну, ут подвала! (*Ганс аллисене тăратса подвал алăкне кутăн кĕрет. Кĕркури перет. Кантăк патне чупса пырать. Урамра выртакан Ванюшина курать*). Ванюшин! Ванюшин! Вилнĕ... Эх, нимĕçсем илсе кайрĕç...

ЧАРШАВ

# ТĂВАТТĂМĔШ АКТ

## V картина

Землянка. Çулçăллă туратсенчен майлаштарса тунă вырăн пур. Ун çинче минтер, тата кĕрĕк выртать. Лутра сĕтел, пĕрене пуçĕсенчен тунă пукансем. Сĕтел çинче „чăх куçĕ" лампа çунса ларать. Фриц вырăн тирпейлесе тăрать.

КАПИТАН (*алăка уçса*). Кĕрĕр, кĕрĕр... Именсе ан тăрăр. (*Эмма кĕрет*).

ФРИЦ. Господин капитан, пӳлĕм хатĕр.

КАПИТАН. Пит аван! (*Фрица*). Тухăр.

ФРИЦ. Итлетĕп, господин капитан.

КАПИТАН. Ну, мĕнле, хисеплĕ доктор? „Госпиталь" кăмăла каймалла-и? Хăюллăрах пулăр тархасшăн. (*Сĕтел хушшине ларать*).

ЭММА. Хăйманран мар та... Ку госпиталь сирĕн пĕр çын выртмалăх анчах курăнать. Ăнланмастăп, мĕн шухăш тытнă эсир, господин капитан?

КАПИТАН. Фронта хăй ирĕккĕн килме пултарнă хĕр манран шикленессе шутламанччĕ. (*Эрех тултарать*). Тархасшăн... Юмахри пек вырăнта, юмахри пек хитре хĕрĕн ĕçĕ ăнтăр, тесе... (*Шаккаса ĕçеççĕ*).

ЭММА. Нимĕн те ăнланмастăп-ха халлĕхе, господин капитан.

КАПИТАН. Вăхăт çитсен пурне те пĕлĕр, пурне те ăнланса илĕр акă доктор.

ЭММА. Господин капитан, манăн çакна ыйтса пĕлесчĕ...
КАПИТАН. Тархасшăн.
ЭММА. Нумай пурăнма тивет-и мана кунта?
КАПИТАН. Хисеплĕ доктор, эсир кунта мĕн чухлĕ пурăнасси пĕтĕмпех хăвăртан килет. Сирĕн аллăрта питех те интереслă чирлĕ çын пулĕ.
ЭММА. Мĕн пулнă ăна?
КАПИТАН. Тĕплĕн пĕ 'местпĕр. Анчах та тавçăрса илме пулать. Бомба хумĕ çапса антăратнă пулмалла.
ЭММА. Тен...
КАПИТАН. Кăмăлăр пулсан, тĕрĕслĕр ăна тархасшăн.
ЭММА. Кам вăл?
КАПИТАН. Камне пĕлме сире чĕннĕ те эпĕ.
ЭММА. Анчах...
КАПИТАН. Ăнланатăп, Эмма Ивановна. Паян сирĕн доктор ĕçне çеç мар, ку çамрăк камне пĕлме те пултарас пулать.
ЭММА. Сирĕн ĕçе тума пултарайăп-ши эпĕ, господин капитан? Хăвăр калашле, эпĕ врач çеç вĕт. Манăн ĕç — чĕртесси те вĕлересси.
КАПИТАН. Пултарас пулать, Эмма Ивановна.
ЭММА. Ман шутпа, вăл камне пĕлме сире çăмăлтарах пулмалла. Сирĕн алăра этем патне пымалли тĕрлĕ майсем те пур.
КАПИТАН. Халичченхи майсем йăлăхтарса çитерчĕç мана, Эмма Ивановна. Вăл майсемпе хăравçăсене анчах парăнтарма пулать. Вĕсенчен усси те сахал. Вĕсем хăйсем те нимĕн те пĕлмеççĕ.
ЭММА. Килĕшетĕп, господин капитан.
КАПИТАН. Ку çамрăк ăнсăртран килсе çакланнăскер мар. Таврари пĕтĕм старостăсене пухса тĕпчерĕм, паллакан пулмарĕ. Пуринчен ытла унăн шăмшакĕ çинче виçĕ тĕлте пысăк сурансем пур. Тата вăл выртнă çĕртен инçетре мар раци тупнă. Çĕрле мĕн пулса иртнине пĕлетĕр пуль эсир?

ЭММА. Пĕлетĕп, господин капитан.

КАПИТАН. Сире ытларах та каласа пама пултаратăп, Эмма Ивановна. Çав каçхи ĕçе никам та мар партизансемпе большевиксен разведчикĕ-радист пĕрлешсе тунă. Нумай сиен кӳчĕç вĕсем пире. Шухăшласан çӳç-пуç вирелле тăрать.

ЭММА. Ăнланатăп, господин капитан. Эсир ĕнтĕ çакна çавă пулĕ тесе шутлатăр.

КАПИТАН. Шутлани çеç сахал, доктор. Пире татăклăн пĕлни кирлĕ. Енчен те, ку çамрăк чăн та эпир шутлана разведчик пулсан, вăл хăй сана нимĕн те каласа парас çук. Унăн чĕлхинчен сăмах туртса иличчен пуçне касса татма çăмăлтарах пире. Эсир урăхла тума пултаратăр... Тăна кĕрĕ вăл. Куçне уçса пăхĕ. Унăн умĕнче—тĕттĕм пӳлĕм. Снаряд стаканĕнчен тунă лампа вăйсăррăн çунса ларать. Умĕнче—хитре партизанка пулăшу парса тăрать. Ку ăна вара партизансен землянки пекех туйăнса кайĕ. Çакна кура камăн шухăшĕ хускалмĕ, камăн кăмăлĕ уçăлмĕ? Вара иксĕрĕн хушăра калаçу пуçланса кайĕ. Çак хушăра вара эсир вăл камне пĕлме тăрăшăр. Сире вăл паллас çук. Эсир вырăс хĕрĕ. Вырăс кăмăлĕ-шухăшне такамран та лайăхрах ăнланма пултаратăр.

ЭММА. Мухтанăшăн тавтапуç...

КАПИТАН (*эрех сĕнет*). Мухтанă хыççăн—награда...

ЭММА. Эпĕ вырăс халăхне сахал пĕлетĕп çав...

КАПИТАН. Вăл нимех те мар, Эмма Ивановна.

ЭММА. Юрать, господин капитан. Эпĕ пурне те тума хатĕр. Фюрер наградăсăр хăвармĕ. Аттен поместьине каялла парсан аванччĕ...

КАПИТАН (*аллине чуптăвать*). Унччен вырăс хĕрĕн ариецсен таса юнне йышăнмалла...

ЭММА. Мĕн вырăс хĕрĕ эп, господин капитан? Ячĕ çеç вырăс. Пирĕн аттесем Роççийăран тухса тарнă вăхăтра эпĕ сăпкари ача çеç пулнă.

КАПИТАН. Эсир хăюллă пулăр, доктор. Ку çуртр эсир хуçа, эпĕ хăни... (*Ыталать*).

ЭММА. Хăйманран мар та... Ку госпитальре чирлĕ çыннине курмастăп-ха эпĕ.

КАПИТАН. Ăнланатăп, доктор, ун çинчен ан та шухăшлăр. Ăна илсе килеççĕ. Машина çитиччен савăнсах сирĕн пациент пулатăп. (*Ыталать*). Сыватăр мана урнă чиртен... (*Машина сасси*). Чорт возьми! (*Сехет çине пăхать*). Илтрĕр-и? Каларăм çеç—вĕсем те килсе çитрĕç.

ФРИЦ (*кĕрет*). Господин капитан, илсе килчĕç.

КАПИТАН. Чирлĕ çынна илсе кĕрсе вырнаçтарăр.

ФРИЦ. Итлетĕп, господин капитан.

КАПИТАН. Унта тĕрлĕ çимĕçсем пулмалла. Тата чемоданпа кутамка. Çимĕçĕпе кутамкине землянкăна илсе кĕрĕр. Чемоданне землянкă умне лартса хăварăр.

ФРИЦ. Итлетĕп, господин капитан. (*Каять*).

Фрицпа тепĕр салтак Ванюшина илсе кĕреççĕ.

КАПИТАН. Акă сирĕн пациент, доктор.

Ванюшина выртарса кĕрекпе витеççĕ.

ФРИЦ. Выртартăмăр, господин капитан.

КАПИТАН. Аван. Тухăр (*Эмма Ванюшин алтымарне тытса пăхать, унтан итлет*). Мĕнле?

ЭММА. Сывлать.

КАПИТАН. Калатăп вĕт вĕсен чĕрисем хытă çĕрте, тесе. Пĕр хут çеç мар тĕл пулса чухланă эпĕ ун пеккисене.

ЭММА. Тĕлĕнетĕп, господин капитан. Ку çамрăк—мĕн большевикĕ пултăр? Мĕнех уçă кăмне пултартăр вăл пире? Ăнсăртран пырса çакланнăскер çеç мар-и вăл?

КАПИТАН. Сахал пĕлетĕр эсир большевиксене. Вĕсем чее кайăксем. Халĕ эсир тухса тумланăр. Чемоданра унта мĕн кирли пурте пур...

ЭММА. Юрать, господин капитан. (*Тухса каять*).

КАПИТАН (*ун хыççăн пăхса*). Эмма... Тиркеменĕр... (*Ванюшин патне пырса пăхать. Эрех тултарса ĕçет. Сигара чĕртсе ярать. Портсигарне сĕтел çине хăварать. Аллисене сăтăркалать*. Ĕç ăнсан, эпĕ паян икĕ кайăк тытатăп,—тата тепĕр хĕрес çакатăп.

ФРИЦ (*алăка уçса*). Кĕме юрать-и?

КАПИТАН. Кĕрĕр.

Фрицпа салтак тĕрлĕ çимĕçсем тата Ванюшинăн кутамкине илсе кĕреççĕ.

ФРИЦ. Господин капитан эсир хушнă япаласене илсе кĕтĕмĕр.

КАПИТАН. Аван.

ФРИЦ (*кутамкине кăтартса*). Куна ăçта хурас?

КАПИТАН. Çавăнта, кĕтессе хурăр. Çимĕçĕсене—кунта.

ФРИЦ. Итлетĕп, господин капитан. Кайма юрать-и?

КАПИТАН. Кайăр.

Вĕсем кайсан Эмма кĕрет. Вăл партизансем майлă тумланнă.

ЭММА. Мĕнле, господин капитан, килĕшӳллĕ-и?

КАПИТАН. Калама çук килĕшӳллĕ, Эмма Ивановна. Чăн-чăн партизанка пекех курăнатăр. Ытармалла мар сире... (*Ыталасшăн*).

ЭММА. Эсир мантăр пулас, господин капитан (*Ванюшин çине кăтартса*). Халь ман урăх пациент пур (*Ачашлanса*). Суя партизанкăпа та пулин йăпанас тетĕр эппин? Чăн-чăннине тытма çăмăлах мар пуль çав...

КАПИТАН (*нимĕнле мар пулса*). Килĕшетĕп... Приказа пурнăçлăр.

ЭММА. Пултарнă таран тăрăшăп, господин капитан.

КАПИТАН. Ан манăр, çак ĕçе тума пултарсан сире тивĕçлĕ награда кĕтет.

ЭММА. Наградăшăн мар, господин капитан, вĕсем çине хам нихçан каçармалла мар тарăхнăшăн тăрăшăп.

КАПИТАН. Шанатăп сире, Эмма Ивановна... Халĕ ĕнтĕ эпĕ сире чăрмантармăп, каятăп. Сĕтел çинче ĕçмелли-çимеллисем хатĕр. Эсир ăна эрех ĕçтерме тăрăшăр. Акă кутамки. Тăна кĕрсен ун çинчен аса илтерĕр. Йышăнмĕ-и? (*Эрех тултарать*). Тем пулсан та хăвăр майлă çавăрма тăрăшăр. Унăн шанăçне кĕрсе, унран пĕтĕмпех ыйтса пĕлме тăрăшăр.

ЭММА. Юрать, господин капитан.

КАПИТАН. Телей сунатăп. (*Ĕçеççĕ*).

ЭММА. Тавтапуç, господин капитан.

КАПИТАН (*кайма тăрать*). Кампа калаçнине сиссен, вăл ахаль парăнас çук,—хирĕç тăма е тарма шутлĕ. (*Пистолет парать*). Илĕр. Кирлĕ пулсан, эпир кунтах пулатпăр. (*Каять*).

Эмма Ванюшина эмел парать. Алтымарне тытса пăхать.

ЭММА. Лăпкăрах сывла пуçларĕ. Интереснă чирлĕ çын: тен герой-и эсĕ?.. Халĕ вăйсăр, нимĕн пĕлмесĕр выртатăн. Туймастăн та. Эсĕ пурăнасси ман кăмăлран та килме пултарать. Сыватакан эмел вырăнне наркăмăш парасси çăмăлтарахчĕ маншăн.

Ванюшин аран хускалса илет. Вăйсăррăн йынăшса ярать.

ЭММА. Пурнăç туйăмĕ палăра пуçларĕ. Чĕрем, çемçел. Кăмăллă пулма пулăш... (*Сассине ачашшăн кăларма тăрăшса*). Çамрăк çын... Юлташ, юлташ.

ВАНЮШИН (*аташса*). Эх, сÿрме темерĕн. Таптаймĕç... Валя...

ЭММА (*блокнот çине васкавлăн çырать*). Чунăм, эпĕ Валя...

ВАНЮШИН (*аташса*). Чакарать... Точно. Пĕр тумлам... Çых... Ы-ы-ых... (*Йынăшать те, куçне уçса Эмма çине пăхать*).

ЭММА. Аранах... Эсир куçăра уçнине курса пулĕ тесе шутламанччĕ.

Ванюшин ерипен тӑрса ларать.

ЭММА. Выртӑр, тӑванӑм, ан хускалӑр. Сире хусканма юрамасть-ха. Эсир йывӑр чирлӗ.

ВАНЮШИН. Ӑҫта эпӗ?

ЭММА. Ырӑ ҫынсем патӗнче. Шанчӑклӑ вырӑнта. Кунта нимӗнрен те хӑрамалли ҫук.

ВАНЮШИН (*аса илме тӑрӑшса*). Мӗн пулнӑ-ши мана?

ЭММА. Мӗн пулнине эпӗ пӗлместӗп. Тӑн кӗрсе ҫитсен ун ҫинчен хӑвӑр каласа парӑр акӑ.

ВАНЮШИН. Мӗншӗн нимӗн те астумастӑп эпӗ?

ЭММА. Ӑҫтан астӑвӑр? Талӑк ытла тӑна кӗмесӗр выртрӑр. Ытларах пуҫӑрланатӑр эсир, ҫамрӑксем. Хӑвӑр ӑҫта кӗрсе кайнине те чухламастӑр.

ВАНЮШИН. Кам пулатӑр эсир?

ЭММА. К..ламасӑрах чухламалла. Куратӑр пулӗ, сирӗн тусу эпӗ. Партизанка.

ВАНЮШИН. Мӗнле килсе лекнӗ эпӗ сирӗн землянкӑна?

ЭММА. Ӑнсӑртран, тӑванӑм. Пирӗн ҫынсем сана станцӑ ҫывӑхӗнче нимӗн пӗлми выртаканскере тупса илсе килнӗ.

ВАНЮШИН. Халӗ ӑҫта вӗсем, сирӗн ҫынсем?

ЭММА. Кайрӗҫ-ха. Таврӑнаҫҫӗ акӑ вӗсем. Мана сире пӑхма хӑварчӗҫ. (*Эрех тултарса илсе пырать*). Ҫакна ӗҫӗр-ха эсир, сывлама ҫӑмӑлтарах пулӗ.

ВАНЮШИН. Мӗн ку?

ЭММА. Хӗрлӗ эрех. Ӗҫӗр-ха.

ВАНЮШИН. Тавтапуҫ. Халиччен эрех ӗҫмен эпӗ.

ЭММА. Ӗҫсе курман пултӑр. Хӑвӑтрах сывалас тесен, халӗ ӗҫес пулать.

ВАНЮШИН. Чӑнах калатӑп, ырӑ ҫын. Эрех мана сыватма мар, пушшех чирлеттерме пултарать. Шыв парсан авантарахчӗ. Темӗнле, ӑшчик ҫуннӑ пек туйӑнать.

ЭММА. Епле ан ҫунтӑр! Вилӗмпе пурнӑҫ хушшинче асапланса выртнӑ вӗт эсир. Эрех ӗҫместӗрех пулсан, шыв мар, сӗт парас мар-и?

ВАНЮШИН. Сӗт пулсан аванччӗ.

ЭММА. Пулмасӑр, юри хатӗрлесе хутӑмӑр (*Эмма сӗт тултарнӑ хушӑра, Ванюшин сӗтел ҫинчи портсигара илсе пӑхать. „Шульц" тесе вулать те, хӑвӑрт каялла хурать. Улшӑнса каять. Малалла хӑйне палӑртасшӑн мар тытать*).

ЭММА (*сӗт парать. Ванюшин ӗҫет*). Татах парас мар-и?

ВАНЮШИН. Сӗтне ӗҫетӗп. Пур пулсан, парӑр.

ЭММА. Пулмасӑр... (*Сӗт тултарса парать*). Ӗҫӗр, хӑвӑртрах сывалӑр, тӑванӑм.

ВАНЮШИН (*ӗҫет*). Тавтапуҫ, ырӑ ҫын...

ЭММА. Ҫиес килмест-и? Пиҫнӗ ҫӑмарта пур. Кӑмӑлу пулсан, ҫӑкӑр ҫине ҫу сӗрсе парӑп.

ВАНЮШИН. Маншӑн ытлашши ан чӑрманӑр, ырӑ ҫын. Ҫиес килмест-ха.

ЭММА. Эсир именетӗр пулмалла? Именмелли ҫук кунта. Мӗн кирлине хӑюллӑрах ыйтӑр.

ВАНЮШИН. Чӑнах калатӑп, хырӑм пӗрре те выҫман пек.

ЭММА. Сывалсах ҫитмен-ха эсир, ҫавӑнпа вӑл...

ВАНЮШИН. Ҫавӑнпа та пулӗ. Сӗтпе ҫу хырӑмра тавлашас ҫук. Сӗрсе парӑр эппин.

ЭММА (*ҫӗҫӗпе ҫӑкӑр ҫине ҫу сӗрсе парать*). Тархасшӑн.

ВАНЮШИН. Тавтапуҫ! (*Ҫиет*). Кӑнтӑрла-и халь, е ҫӗрле-и?

ЭММА (*сехет ҫине пӑхать, Ванюшин та пӑхма кармашать*). Лӑпланса выртӑр, сире канӑҫлӑх кирлӗ.

ВАНЮШИН (*ларать*). Халӗ те нумай каннӑ пулас эпӗ. Ытларах та каннӑ, инкек темӗрӗн. Аннесене шырама тухнӑччӗ вӗт эпӗ.

ЭММА. Ӑҫтарах вара сирӗн аннӳ?

ВАНЮШИН. Ӑҫтине хам та пӗлместӗп ҫав. Фронт ҫывхарсан хӑранипе тухса кайрӗҫ. Анчах инҫетех кайма ӗл-

кӗреймерӗҫ пулмалла. Нимӗҫ ҫарӗсем хӑвӑрт пырса ҫитрӗҫ. Ӑҫта та пулин ҫак таврарах пулма кирлӗ. Комендантран ыйтса пӗлес тесе килнӗччӗ. Таҫтан самолётсем вӗҫсе килчӗҫ. Бомбӑ пӑрахма пуҫларӗҫ. Урӑх нимӗн те астумастӑп. Акӑ инкек...

ЭММА. Ӑҫтисем вара эсир?

ВАНЮШИН. Дон шывӗ хӗрринче пурӑнаттӑмӑр.

ЭММА. Инҫетрисем пулӗ?

ВАНЮШИН. Ҫывӑхах мар... миҫе сехет терӗр ҫак?

ЭММА. Тӑваттӑмӗш сехет.

ВАНЮШИН. Ну, пуриншӗн те спасибо сире, ырӑ ҫын. (*Ура ҫине тӑрать*).

ЭММА. Мӗншӗн тӑратӑр?

ВАНЮШИН. Каҫарӑр, ҫул ҫине пӗр татӑк ҫӑкӑр ҫу сӗрсе чикес терӗм те. Пӑртакҫӑ тӑна кӗтӗм пек ӗнтӗ. Тухса утас пулӗ. Аннене тупасах пулать манӑн.

ЭММА. Ан тӗлӗнтерӗр, тӑванӑм. Хальхи вӑхӑтра пулипулми ӗҫпе ҫӳреме те хӑрушӑ. Такам куҫӗ тӗлне пулӑн тата. Нимӗҫсем вӗсем никама та хӗрхенсе тӑмаҫҫӗ.

ВАНЮШИН. Мӗне кирлӗ эп вӗсене? (*Кайма тӑрать*).

ЭММА. Чим-ха, чим... тӑхтӑр пӑртак. Каясах тетӗр пулсан, хӑвӑрӑн ирек ӗнтӗ. Каяс ҫулӑр телейлӗ пултӑр. Анчах та сирӗн япаласем юлаҫҫӗ кунта.

ВАНЮШИН. Мӗнле япаласем?

ЭММА (*кутамкка илсе парать. Ванюшин ҫав вӑхӑтра сӗтел ҫинчен ҫӗҫӗ илсе чикет.*) Акӑ, илӗр. Сирӗн ку.

ВАНЮШИН. Япаласем? Манӑн нимӗнле япала та пулман...

ЭММА. Илӗр, илӗр.

ВАНЮШИН. Йӑнӑшатӑр эсир, ырӑ ҫын. Манӑн япала таврашӗ пулман. Точно...

ЭММА. Эсир халӗ те манран шикленетӗр-и?

ВАНЮШИН. Ан тӗлӗнтерӗр эсир. Хама ҫӑлнӑ ҫынсенчен мӗншӗн шикленес манӑн?

ЭММА. Апла пулсан, илĕр. Ку сирĕн кутамка. Ăна эсир выртнă çĕрте тупнă.

ВАНЮШИН. Хăвăр та лайăх пĕлетĕр, ырă çын. Эпĕ хампа юнашар мĕн выртнине астума мар, кунта мĕнле лекнине те астумастăп. Татах сывă пулăр. (*Кайма тăрать*).

ЭММА (*сасартăк*). Ниçта та каймастăр.

ВАНЮШИН. Мĕншĕн?

ЭММА. Итлĕр мана: эсир халь çул çинче антраса ӳкме пултаратăр.

ВАНЮШИН. Пĕлмен эпĕ. Тĕнчере манăн сывлăха упрама тăрăшакан этем те пур мĕн. Тавтапуç сире! Хăвăр кăмăлăра кура сире çакна çеç калаcа хăварма пултаратăп. Сирĕн пуçлăх господин Шульц пустуй чееленет! (*Çĕçĕ туртса кăларса*) Руки вверх! Шăп! (*Эмма аллисене çĕклет*).

ВАНЮШИН (*Эмма хĕвĕнчен пистолетне кăларса илет*). Кăшкăрма тăрсанах чиксе пăрахатăп. Кала, миçен эсир кунта? Ăçта Шульц?

ЭММА. Мана вĕлерсен эсĕ хăв та пĕтетĕн. Кунта йĕри-таврах пирĕннисем... Эпĕ кăшкăрмăп... Анчах итлĕр мана. Тĕттĕм пуличчен вырттăр. Эпĕ врач... Кайран хамах ăсатăп. Манăн та пурăнас килет (*Чĕркуçленет*).

ВАНЮШИН. Аван юрлатăр, сире килĕшет ку. Юрлăр, юрлăр... (*Тулта автомат шатăртатнă сасă*).

ЭММА (*кăшкăрса*). Эй! Кунта...

Ванюшин Эммăна çĕçĕпе чиксе пăрахать, хăй алăк умĕнче пистолетпа сыхласа тăрать.

ВАЛЯ. Руки вверх! (*аллине граната тытса кĕрет*).

ВАНЮШИН. Валя!

ВАЛЯ. Саша! (*Ыталанаççĕ*).

КĔРКУРИ (*автоматпа кĕрет. Унпа пĕрле партизансем кĕреççĕ.*) Ванюшин!

ВАНЮШИН. Кĕркури пичче! Мĕнле тав тăвам-ши сана?

КĔРКУРИ. Çăкăр-тăвар хире-хирĕç. Эпĕ те сирĕн тивлетпе çăлăнтăм.

ВАЛЯ. Юрать-ха, атте сана илсе кайнине курса юлнă. Унсăрăн тем пулмаллаччĕ!

КĔРКУРИ. Ну, ачасем, пирĕнваскас пулать...

ВАЛЯ. Ку кам? (*Эмма çине кăтартса*).

ВАНЮШИН. Шульц йытти...

КĔРКУРИ. Эпир ăна сыхрăмăр...

ВАНЮШИН. Пит аван! Маттур, Кĕркури пичче! Тăхтăр-ха... (*Кутамкаран раци кăларса, раци тăрăх калаçать.*) Сталинград. Сталинград. Илтетĕр-и мана? Атăл калаçать! Атăл яланхи пекех ирĕклĕн те хăватлăн хумханса юхать.

ЧАРШАВ.

## ТАВТАПУҪ!

*П. Хузангай.*

Тавтапуҫ сана, юратнӑ Сталин!
Сан тивлетӳпе эпир пуян.
Чӑваш халӑхӗ, ыттипе танлӑн,
Саламлать сана пӗтӗм чунтан.

Тавтапуҫ, ӗҫлев тӗнчин Ҫулпуҫӗ!
Сан ӑс-халупа ҫӗршыв тӳлек.
Халь пире пур алӑк та яр уҫӑ,
Шухӑшсем хӑпарчӗҫӗ ҫӳле.

Тавтапуҫ сана, пур халӑх тусӗ!
Пур йӑхсем те халӗ тӑванла
Алла-аллӑн тытӑнчӗҫ Союзӑн;
Ҫав тӑванлӑх—ҫирӗп санпала.

Тавтапуҫ сана, чи Аслӑ маршал!
Сан хастарупа эпир хастар.
Ҫак телейлӗ, ҫутӑ саманашӑн
Пӗр салтак пекех тӑратпӑр кар.

Тавтапуҫ, Ҫӗр кӗтнӗ Улӑп-паттӑр,
Тав, ытарайми вӗрентекен!
Саншӑн пурте пуҫ хумашкӑн хатӗр—
Ална ҫеҫ кӑлар эс хӗвӳнтен.

Мавзолей умпе иртетпӗр танлӑн.
Кан, Ильич: ӗҫ шанчӑклӑ алра.
Тавтапуҫ сана, мухтавлӑ Сталин!—
Тӗнчипех янра, янра, янра!

# ТУПА

***Аркадий Ёҫхӗл.***

Хӗвелпе уйӑх умӗнче,
Асаттесен ҫӗрӗ ҫинче,
Хӑватлӑ Атӑл хӗрринче,
Ҫак ҫут тӗнче ытамӗнче
тупа тӑватӑп!

Юратнӑ Сталин умӗнче,
Вӑл ҫутнӑ ҫӑлтӑр ҫуттинче,
Вӑл панӑ ирӗк хӳттинче,
Совет ялавӗ айӗнче
тупа тӑватӑп!

Вут хыпнӑ вӑрҫӑ хирӗнче,
Хаяр та сивӗ ҫил ҫинче,
Юлташ тӑприйӗ умӗнче,
Мухтавлӑ Гварди ретӗнче
тупа тӑватӑп!

Ҫӗршывшӑн шанчӑклӑ пулма,
Ӑна юнпа чуна пама,
Ҫулпуҫ ятне ҫӳлте тытма,
Вӑл суннӑ ҫулпалла пыма
тупа тӑватӑп!

Хамӑн тӑван халӑхӑма
Ӑҫта ҫитсен те сыхлама,
Атте-анне таса пилне
Чӗре пек упрама пӗлме
тупа тӑватӑп!

Ҫуннӑ ҫӗре шӑлпа ҫыртса,
Чӗркуҫланса хӗҫ чуптуса,
Арканнӑ хуласен, ялсен

тупа тăватăп!

Ылханлă ирсĕр тăшмана
Хаяррăн шелсĕр тавăрма,
Нихçан тăмалла мар ăна
Çапса çĕрпе танлаштарма
тупа тăватăп!

Тăшман шăмми çĕрсе пĕтсе
Ун витĕр курăк шăтиччен
Хĕçе пăрахмăпах тесе,
Тăван çĕршывăм умĕнче,
тупа тăватăп!

## ХĔРЛĔ ÇАРА

***С. Эльгер.***

Çĕршыв тĕрекĕ—Хĕрлĕ Çар,
Тăван вăйхал, хăватлă Çар,—
Мирпе чăн ирĕклĕх хўтти,
Ĕçхалăхсен кунçул çутти!
Кунçул çутти, телей уççи,
Хисеплĕ пурнăç хуралçи,
Çак çĕр çинче эс сывă чух
Хурахсене асма çул çук!
Санпа тăрса хуравлашма,
Сан хурçă пек вăйна ватма
Нимле тăшманăн хал çитмест,
Ни хĕçпăшал, ни шăл витмест.
Капайчăк Гитлер выç çарне
Кĕртсе ярсан Совет çĕрне,—
Тискеррĕн аснă тăшмана
Кăтартрăн эс виçми вăйна:
Тăван çĕре тустарнăшăн—

Тытса ăна хыт авăртрăн;
Юн тăкнăшăн, вĕлернĕшĕн,
Тĕнче тӳсми тискерлĕхшĕн—
Тăхлан чĕреллĕ нимĕçе
Вутпа вĕтсе, питне кĕççе
Çĕлерĕн эс намăслатса.
Ăна эс ятăн ыватса
Тăван çĕртен—инçетелле,
Хăй тухнă шăтăк тĕпнелле.
Тискер вăя ватса, ирсе
Эс Улăп пек пытăн хирсе—
Сталинградран Берлин таран;
Усал тăшман тухать ăнран...
Хăватлă Çар, çунатлă Çар,
Ютсемшĕн эс—хăруш, хаяр.
Сан пурнăçу, çулу-йĕрӳ—
Вăл вĕçĕмсĕр пĕр çĕнтерӳ.
Астуччăр ирсĕр фашистсем,
Çăхан-çĕлен ăраттисем:
Никам çĕнми Çар хыçĕнче
Тăрать советлă çут тĕнче,
Совет тĕнчи—пĕр тимлĕ вăй,
Ăна Çулпуç ӳстернĕ хăй...
Мухтавлă çарăмăр, Хĕрлĕ Çар,
Фашизма аркат, çунтар!
Ан юлтăр вăл çĕр питĕнче.
Тĕп ту ăна хăй çĕрĕнче!

## ТĂВАН ÇĔРШЫВ

***Стихван Шавлы.***

Парăнман Раççейăн çĕрĕ,
Хĕç витмен ун паттăрне,
Ĕмĕр сывă, ĕмĕр чĕрĕ,
Ĕмĕр çĕртмĕ хăй ятне.

Эсĕ аслă та мухтавлă,
Эсĕ чаплă та пуян,
Эсĕ вăйлă та хăватлă,
Эсĕ Улăп пек тăран.
Çут Октябрь çунатлатрĕ,
Вĕлкĕштерчĕ ялавне,
Пĕрлештерчĕ, тăванлатрĕ
Çĕршыври халăхсене.
Эс ирĕклĕн сывлатăн,
Эс—пĕр чăмăр, эс—пĕр шут,
Эс çирĕппĕн утатăн,
Эсĕ—çамрăк, эсĕ—вут.
Пĕтĕм çĕр хускалчĕ харăс,
Ватă Кремль йыхăрсан,
Сталин харсăрĕсем карĕç
Нимĕçе хăваласа.
Эсĕ тăвăл евĕр çапрăн,
Эсĕ кĕтĕн вут ăшне.
Тăшман урчĕ, тăшман чакрĕ,
Кĕл çеç пулĕ малашне.
Мирлĕ кун килет хавасăн,
Иртсе кайĕ тар шăрши,
Уççăнрах юрлар пĕр саслăн:
„Сывă тăр, тăван çĕршыв!"
Эсĕ аслă та мухтавлă,
Эсĕ чаплă та пуян,
Эсĕ вăйлă та хăватлă,
Эсĕ Улăп пек тăран.

# БАЛТИ МИЧМАНӖ

*Пӗр пайлӑ драма.*

***Лев Левин***

**Вылякансем:**

**Харитон Калкутин**—шӑл техникӗ.
**Ксюша**—ҫамрӑк хӗр.
**Матильда**—переводчица.
**Хӑмӑр тумлӑ господин.**

**Кӗркунне, хӗрӗх пӗрремӗш ҫул. Пушӑ хула. Хула хӗрринче ҫурри таран ишӗлнӗ ҫурт. Штукатуркӑсем хӑйпӑнса пӗтнӗ, тӗксӗм кӗтеслӗ пӳлӗм. Хӗрлӗ йывӑҫран тунӑ этажерка ҫинче консерв банки. Банк ҫинче ҫурта ҫунса ларать. Ҫӗрле. Шӑп. Таҫта йытӑ вӗрни илтӗнет.**

***Пӗрремӗш курӑнни***

Харитонпа Ксюша

Харитон Калкутин—хӗрӗх ҫула ҫитнӗ, сарлака хулпуҫҫиллӗскер, ҫӳҫӗсем кӑвакарнӑ. Ҫӑварӗнче чӗлӗм. Хӑй шухӑша кайнӑ, юрлать.

Ехал казак на вийноньку,
Ехал в чужу стороньку...
Прощай, дивчина, чернобривонька,
Может не свидимся долгонько.

Ҫӳлтен ишӗлсе аннӑ стена шӑтӑкӗнчен, тӗрлесе илемлетнӗ кӗске кӗрӗк тӑхӑннӑ ҫамрӑк хӗр, Ксюша, курӑнать. Вӑл картлашкапа анса пӳлӗме кӗрет. Харитон, ҫаврӑнса пӑхмасӑрах, пуҫӗпе суллать. Ксюшӑна хуллен ыталать те хӑйӗн питне ун пичӗ ҫумне туса лӑпчӑнать.

**Ксюша.** Хуйхӑратӑр? Хупӑнса ларнӑскер!

**Харитон.** Хӑнӑхатӑп, хӗрӗм. Халех акӑ чей вӗрет, вӗри шывпа апатланӑн.

**Ксюша** (*йывӑррӑн сывласа диван вӗҫне ларать*). Ҫичӗ киле ҫитрӗм. Ҫӑкӑр—пӗр тӗпренчӗк те ҫук. Ме, акӑ...

икерчĕ. Соломониха асанне хăй мнукĕсен тӳпинченех парса ячĕ.

**Харитон.** Тавтапуҫ! (*Ҫиет.*)

**Ксюша.** Чей вĕрессе кĕтмеллеччĕ.

**Харитон.** Пурĕ-пĕрех... (*Тĕпренчĕксене пуҫтарчĕ, чĕлĕм чĕртрĕ*). Мĕнле ҫĕнĕ хыпарсем пур хулара?

**Ксюша.** Ёнер мĕнле—паян та ҫавах...

**Харитон.** Слесаре илсе кайса пытарнă-ши хăть?

**Ксюша.** Ҫу-ук... Тăваттăмĕш кун ҫакăнса тăрать.

**Харитон.** Хм-м... (*Пӳлĕм тăрăх уткаласа ҫаврăнать.*)

**Ксюша.** Мĕнле-ха эсир паян аван тумланнă, Харитон Николаевич?

**Харитон.** Ҫук пуль?

**Ксюша.** Матильдăна кĕтетĕр-и?

**Харитон.** Ҫапла, хĕрĕм.

**Ксюша** Эсир ăна, хĕрлĕ ҫӳҫе, юрататăр-и?

**Харитон** (*куларах*). Ҫук, айван.

**Ксюша.** Ёнентĕм пулать сана...

**Харитон.** Эх, симĕс-ха халĕ эсĕ! Эсĕ ниепле те ăнланса илейрес ҫук ҫав... (*Сăмахне тупаймасăр.*) Манăн... пурăнăҫ шăпине... йывăр... Егорычевпа тата партизансемпе чунран пĕрлешсе ҫыхăну тытнисем—вĕсене пĕтĕмпех тарăн тĕпсакайне чиксе хунă, тейĕпĕр. Кунсăр пуҫсăр эпĕ вырăнти влаҫ куҫĕ умĕнче пĕчĕк ҫын, ҫитменнине тата эпĕ нимĕҫсене кăмăллакан ҫын. Вывеска ҫинче „Зубной техник Харитон Калкутин, мосты и коронки" тенĕ пек. Эсĕ мана ăнланатăн-и?

**Ксюша.** А хĕрлĕ ҫӳҫĕ?

**Харитон.** Матильда вăл нимĕҫсем патĕнче, тĕрмере переводчица пулса ĕҫлет. Вăл ман козырь. Хамшăн шанчăклă пулма кирлĕ вăл.

**Ксюша** (*ҫине тăрса*). Анчах ҫапах вăл сире юратать?

**Харитон.** Тата авантарах. Вăхăчĕ йывăр халь, Ксени. Нимĕҫ пире чĕркуҫҫи ҫине тăратасшăн—чура тăвасшăн! А эсĕ хăвăнне, хĕрсен сăмахне: юратать-и, юратмасть-и...

**Ксюша**. Каçарăр, Харитон Николаевич.

**Харитон.** Пуçна çӳлерех çĕкле. Эсĕ партизанка, Ксения!

**Ксюша.** Çапла, Харитон Николаевич.

**Харитон.** Çапла çав... (*Хĕре диван çине лартнă чух, унăн çумĕнче кĕрĕк витĕрех темле хытă япала пуррине туйса илчĕ.*) Хм... револьвер?

**Ксюша.** Çук, граната.

**Харитон.** Мĕн тума вăл?

**Ксюша.** Кирлĕ чух...

**Харитон.** Хăвна пĕтерес тетĕн-и?

**Ксюша** (*ĕненмесĕртерех*). Пĕтерĕн эсĕ мана!

**Харитон.** Мана тыттарасшăн-и?

**Ксюша.** Мĕн эсир, Харитон Николаевич!?

**Харитон** (*аллине тăсса*). Гранатуна кăларса хур сĕтел çине.

**Ксюша.** Ĕмĕрне те!

**Харитон.** Эпĕ хушатăп.

**Ксюша** (*пуçне усса*). Хушатăр-и?.. Юрать... (*Кĕрĕкне вĕçертрĕ те гранатине сĕтел çине кăларса хучĕ.*) Акă вăл, эсир хушни.

Пауза. Çиленнĕ Ксюша йӳле янă полушубкипех пӳлĕмваррине тăрса аллисене уснă та, куçхарши айĕн кӳренчĕклĕн пăхса, Харитон мĕн тунине сăнаса тăрать. Харитон кĕнекесем хуракан шкафран сăран питлĕ хулăн кĕлĕ кĕнеки илет.

**Харитон.** Ксения, итле мана, авантарах итле. Ыран эсĕ, Андреевский балкăпа мар,—шурлăх тăрăх каятăн.

**Ксюша.** Юрать.

**Харитон.** Эсĕ çак кĕлĕ кĕнекине Егорычёва паратăн, райком секретарьне. Егорычёва çех, урăх никама та мар.

**Ксюша.** Ăнланатăп.

**Харитон.** Кунта, кĕнеки пичĕ ăшĕнче, план тата тепĕр хут пур. Но анчах Егорычёва çех паран, илтетне? Хăйне, алăран пар.

**Ксюша.** Юрать.

**Харитон.** Сана партизансем сырăнса илĕç, вĕсем ху-

лари хыпарсем çинчен ыйтса пĕлме тăрăшĕç... Анчах эсĕ чеерех пул,—ан шарла.

**Ксюша.** Ăнланатăп.

**Харитон.** Тракторист Пашăна та—пĕр сăмах та... Хăвăн тăван пиччӳне—çур сăмах та...

**Ксюша.** Шанмастăр-им, Харитон Николаевич?

**Харитон.** Асăрханатăп çех, Ксĕнюшка.

**Ксюша.** Пĕр-пĕр сутăнчăк пирĕн партизансем хушшине лекмен пулĕ те?

**Харитон.** Сутăнчăк пур çав.

**Ксюша.** Сутăнчăк? (*Хуллен.*) Эпĕ те çаплах шухăшлаттăмччĕ.

**Харитон** (*кăшт сăнарах Ксюша çине пăхса*). Ну-ка, каласа пар-ха.

**Ксюша.** Астăватăр-и иртнĕ юнкуна? Пирĕннисем лаша вити хыçĕнче засада тунăччĕ. Пĕтĕмпех йĕркеллĕ, никам та сисмелле мар пек. А нимĕçсем вĕсене хыçран, мулкачсене хупăрланă пекех, хупăрларĕç. Саккăршне пусса хучĕç. Неушлĕ ахальренех-и?

**Харитон.** Çапла... Çапла... Ахальрен мар.

**Ксюша.** А леш „Гастроном айĕнчи типографи çинчен мĕнле тата, святой сывлăшĕпе пĕлчĕç-и? А... а... (*чĕтренĕ сасăпа.*) Манăн аттене, Иван Семĕнчăна, тĕрмере вĕлересси тăшман ĕçĕсĕрех пулчĕ тетĕн-и?

**Харитон.** Ну-ну, кирлĕ мар... лăплан тăванăм, эпир тавăратпăрах.

**Ксюша.** О-о, епле эпир вĕсене тавăратпăр та! (*Хĕрӳленсе хăвăрттăн*). Вăл акă утать ĕнтĕ пирĕн округ тăрăх Балти мичманĕ! Горючи склачĕсене кам сирпĕтрĕ?—
—Балти мичманĕ! Кам çĕнĕ бургомистра пуçтарса хучĕ? Вăлах—Балти мичманĕ. Вăхăт парăр çех, Харитон Николаевич, вăл пурин çинчен те тĕпчесе пĕлĕ, леш ирсĕр сутăнчăкне те хăйĕн вăйлă аллисемпе пăвса пăрахĕ!

**Харитон** (*шухăша кайнă çĕртен кăрт сиксе*). А... кама пăвса пăрахĕ?

**Ксюша** (*кӳренсе*). А, эсир итлемен те иккен?..

**Харитон.** Епле-ха, çук... Эпĕ итлерĕм. (*Уткалать*). Балти мичманĕ. Бал-ти мич-ма-нĕ... (*Сасартăк утма чарăнать*). Иван Бариновăн аслă ывăлĕ мар-ши вăл?

**Ксюша.** Халăх çинче çапла сăмах çӳрет: „Карап çинчен типĕ çĕре аннăскер,—унпа пĕрле вăтăр виçĕ улăп!—тинĕс пехотинчи ăмăрт-кайăксем“ тесе калаçаççĕ.

**Харитон.** Ну-ну?!

**Ксюша.** Килсе çитнĕ вĕсем кунта никам çӳремен сукмаксемпе те—мĕн тумаççĕ кăна, мĕн тумаççĕ кăна!.. Вĕсен пуçĕсемшĕн пысăк награда паратпăр тесе çырса çапнă юпасем çине. А вĕсем çаплах хăнк та мар! Çĕмĕреççĕ кăна фашистсен вăйне! Чи малта вăл—Балти мичманĕ.

**Харитон.** Хм... Халăх ĕнтĕ Балти мичманĕ çинчен, ăна юмахри пек вилĕмсĕр паттăр выранне хурса, темле халлапсем те каларнă.

**Ксюша.** Мĕнле, юмахри пек? Ку вĕт чăн-чăн япалах. Унăн ячĕ нихăçан та пĕтми чаплă мухтава тухнă ĕнтĕ.

**Харитон.** Эсĕ ăна сăнран паллатăн-и?

**Ксюша.** Çук, курма телей пулман.

**Харитон.** Шел... пит те шел.

Таçта, пӳлĕмре, алăк шăнкăравĕ хыттăн янăраса кайрĕ.

**Ксюша.** Пăх-халь, епле çиçсе килчĕ!.. Хĕрлĕ çӳç!

**Харитон.** Çапла. Матильда пулас.

**Ксюша.** Манăн мĕнле, пыганас-и?

**Харитон.** Кирлĕ мар. Кĕтессе вырнаçса лар. Ак сана пĕр шкатулка çип. Манăн чăлхасем те унтах. Çапла. (*Утнă çĕртех*) Гранатуна пытар! (*Тухать.*)

### *Иккĕмĕш курăнни.*

Ксюша, Харитон тата Матильда.

Ксюша гранатине пиçиххинчен çакса полушубок аркипе хуплать те, пӳлĕмĕн тĕттĕм кĕтессине вырнаçса, чăлхасем саплама тытăнать. Юнашар пӳлĕмрен хĕрарăм кулни илтĕнет те, çемçе утăмсемпе пусса Ма-

тильда пырса кĕрет. Вăл, ниçталла çавăрăнса пăхмасăрах, мантоне хывса хыçра тăракан Харитон алли çине пăрахать. Çӳçне юсакалать, унтан пĕр каблукĕ çинче ерипен çавăрăнса пӳлĕмелле пăхать.

**Матильда.** М-м-м... Мĕнле вăтам ĕмĕрти тĕксĕм пӳлĕм, бр-б... Алла чупту, Харитон!

**Харитон.** Кашни ĕçĕн хăйĕн вăхăчĕ пур.

**Матильда.** Йĕрĕнетĕр-им?

**Харитон** (*креслине сиктерсе*). Çук-çке, Матильда.

**Матильда.** Эсĕ айăпсăр, ман Харитоша, пĕр сехет каярах (*юри сăмсапа калаçать*) кабакра çак тĕлĕнмелле пӳрнесене нумайĕшĕ çуларĕç (*такăнать те кресло çине ӳкет*). Эсĕ мана—эпĕ ӳсĕр тесе шухăшлатăн-и?

**Харитон.** Сăре курăнарах парать, Матильда.

**Матильда.** Тĕрĕс мар! (*Кулать.*) Тĕрĕссипе каласан, кăшт пур... Ну, кăшт кăна... (*Куçĕпе мăчлаттарса, шăхăркаласа, пӳрнипе юнать*). О-о, епле чее вăл, епле харсăр... Мĕнле илемлĕн ĕçтерсе ӳсĕртрĕ вăл мана...

**Харитон.** Кам?

**Матильда.** О-о, никам пĕлмелле мар çын, Берлинран.

**Харитон** (*витĕмлĕн*). Татах ыйтатăп: кам?

**Матильда.** Господин Гуго фон-Гофгеймер.

**Харитон.** А-а.. Гуго фон-Гофгеймер?

**Матильда** (*кресло çине тайăнса татах пӳрнипе юнать*). Ах, сĕмсĕр немчура! (*Кулать*). Епле мелсемпе тĕпчесе ыйтмарĕ вăл манран, йăлăхтарса çитерчĕ...

**Харитон.** Кам çинчен?

**Матильда.** Шарламастăп...

**Харитон.** Матильда!

**Матильда** (*хуллен*). Сан çинчен, Харитошăм.

**Харитон.** Ман çинчен?

**Матильда.** Çапла. Тата...

**Харитон.** Ну-ну?

**Матильда.** ... Балти мичманĕ çинчен.

**Харитон.** Ах, вăн мĕн çинчен!

Пауза. Ксюша, кĕтесре лăпчăнса тăнă та, сывлама масăр итлет. Харитон вăрăм утăмсемпе пӳлĕм тăрăх утать. Матильда, сасартăк çухăрса макăрать те, кресло çинчен çĕре шуса анать. Чĕркуççи çинче уналенсе Харитон патне пырать те, ăна ыталать. Питне Харитон çумне лăпчăтса, чыхăна-чыхăна макăрса ярать.

**Харитон** (*çухалса*). Мĕн эсир, Матильда, мĕн эсир?!

**Матильда** (*кăшкăрать*). Пур япалан та хăйĕн виçи пур. Пултараймастăп эпĕ малашне кун пек пурăнма! Кашни каçах вĕсем мана тĕлĕкре курăнаççĕ... Ах, анчах!.. Перĕнетĕп эпĕ... Хама хам перĕнсе вилетĕп.

**Харитон.** Чимĕр-ха... Пĕр самант. Лăпланăр. Эпĕ сире эмел паратăп.

**Матильда.** Эмел? (*Кулать*). Сан хăвăн эмел ыйтмалла ан пултăр.

**Харитон.** Эсир ытлашши...

**Матильда.** Çапла пулмасăр. Леш эсрелĕ, çĕрле вĕççе килчĕ... Бомбардировщик çинче. Ăна çав самантрах тĕрмене ертсе пычĕç. О, санăн курасчĕ, Харитоша, кунти пĕчĕк палачсем ун умĕнче епле чĕтресе тăчĕç! Лешсем ăçта çитнĕ—унта ăна çул параççĕ, йăпăлтатаççĕ, пуççене таяççĕ... а вăл... вăл асăрхамасть те вĕсене. Пĕр эпĕ çеç, харсăр пуç, кăштах кулançи пултăм та аллăма тăсма та хăйрăм. Вăл манран тĕлĕнчĕ те, анчах тӳсеймерĕ... Эпĕ пĕрре кулса илни те нумая пĕлтерет. Пӳрнесене чуптунă чух: „Эсир мĕн ятлă, пикеçĕм“ терĕ. „Матильда“ ятлă, господин, — эпĕ переводчица“, терĕм. Вара эпир унпа юнашар утрăмăр. Пĕр танăш çынсем пекех. Хулран хул çавтăнса утрĕ манпа (*пӳрнипе шаклаттарса*). Сумкăна парăр-ха!

Харитон сумкă илсе парать. Матильда флакон кăларать те, куçне хупса, антăхса каяс пек шăршлать.

**Харитон.** Çитет (*флаконне тытса илет*).

**Матильда.** Çавă, тамăкри асаплăх виçĕ кун тăсăлчĕ. Вĕсем унта вуникĕ çынччĕ. Гофгеймер кашнинчен хăй ыйтса тĕпчерĕ. А эпĕ, чăтăмлă мадонна, çăвара турецки

сигаретсем хыпса, юнашар ларатӑп. Вӑл вӗсене хӑратса та, йӑпатса та, тархасласа та, шӑртланса та пӑхрӗ. Анчах вӗсем... мӗнлеччӗ-ха леш... Ну, пӗлместӗп... Ну, пурте пирӗн большевиксем пекех. Гранитран тунӑ тейӗн. Вӗсене вара персе вӗлерчӗҫ, пирӗн куҫ умӗнчех... Каҫсерен тӑватшер ҫын. А вӗсем... О, мӗн тери асап!..

**Харитон.** Мӗн ҫинчен ыйтрӗ. Гуго фон-Гофгеймер?

**Матильда.** Пуҫне. Балти мичманӗн пуҫне.

**Харитон.** А-а... (*Аллипе ҫӳҫне якатать*).

**Матильда** (*Харитон пуҫне хӑй кӑкӑрӗ ҫумне лӑпчӑтса*). Мӗскӗн санӑн пуҫу, Харитоша!

**Харитон.** Манӑн пуҫ-и? (*Матильдӑна аяккалла тӗртсе ярать*). Итлӗр-ха, эсир, ӳсӗр сӳпӗлти: вӑл Балти мичманӗ ҫакӑ мар-ши тесе шухӑшлама пултарассӑн туйӑнмасть-и сире?

**Матильда.** Ҫук, туйӑнмасть. Суратӑп эпӗ пӗтӗм туйӑннисем ҫине. Анчах Гуго фон-Гофгеймер...

**Харитон.** Ну-ну?.. Эпӗ тесе шухӑшлать?

**Матильда.** Ҫук. Ӗнентерме пултаратӑп.

**Харитон** (*ассӑн сывласа*): М-м-м...

Ксюша кӑшкӑрса ярать те, сасартӑк тӑнипе чӗркуҫҫи ҫинчи шкатулкине урайне ӳкерет.

**Матильда.** Кам унта? Кам итлесе тӑнӑ пире кӗтесре? Эй, кам вӑл, тух ҫутталла! (*Чӑлхасем тытнӑ Ксюша, утнӑ майӑнах ҫӗрти шкатулкӑна илет те, нимӗн пулман пекех лӑпкӑн пӳлӗм варрине тухать.*)

**Ксюша** (*анчах ыйхӑран вӑраннӑ пек*). Ан ҫилленӗр, улпут. Саплана ҫӗртех ҫывӑрса кайнӑ. А шкатулка шап! персе анчӗ! (*Ҫӑварне ывӑҫ тупанӗпе хупласа анаслать.*) Анчах та вӑл ниҫтан та ҫӗмӗрӗлмен.

**Матильда** (*Ксюшӑна чӗпӗтсе*). Куҫран пӑх!

**Ксюша.** Ан айкашӑр, мадам.

**Матильда.** Эсир кам пулатӑр, э? Юмахри хитре пике-и?

**Харитон.** Вӑл манӑн... (*Куҫӗсем Ксюша куҫӗпе тӗл пулаҫҫӗ те нимӗн те каламасть*).

**Ксюша** (*хастарлан.*) Эпĕ — Ксюша. Харитон Николаевич патĕнче ĕçлесе пуранатăп. Тенепле „хейнкельсем“ пĕтĕмпех бомбить туса салатнă пулсан...

**Матильда.** Куçран пăх!

**Ксюша.** Янахран ан тĕкĕн, мадам! Эпир унпек хăнăхман.

**Матильда** Эпир мĕн калаçнине итлесе тăтăн-и?

**Ксюша.** Мĕскер?

**Матильда.** Эсĕ пĕтĕмпех илтнĕ, вĕт?

**Ксюша.** Эпир мĕн, хăлхасăр-им?

**Матильда.** Анчах та эсĕ çывăрнă вĕт?

**Ксюша.** Хăрах куçа хупса çех çывăрнă.

**Матильда** Апла пулсан, эсĕ пĕтĕмпех илтнĕ?

**Ксюша.** Мĕн вара, улпут, урăх ĕç хушманччĕ пуль те?

**Матильда.** У, тăмпуç... тасал кунтан! Кай кухняна!

**Ксюша** (*макăрас пек.*) Эпĕ вĕт асăрхамасăр тĕлĕрсе кайнă. (*Каялла чакать.*) Турă пул, каçарăр! (*Каять*).

**Матильда** (*лăпкăн кулса*). Шăп та шай пĕр ăссăр, пуçмимисĕр выльăх!..

***Виççĕмĕш курăнни***

Харитонпа Матильда.

Харитон, чĕлĕмне туртса, çилĕпе аллине пичурка çумне çаптарать, Матильда куçне хупнă та кресло çине таяннă. Пўрнисемпе шаклаттарса, урипе ритм тапса, „Негритянкă“ юрăна юрлама тытăнать. Юрласса хăй начар юрлать.

**Матильда.** Вылезли из бара
Барин и барбара.
Барбара оба в меховом.
Около швейцара
Буркнула барбара:
Барин с барбарой пойдем.
На краю бульвара
Тренькала гитара,
Бархатно пел баритон.
Сладостная пара,

Барин и барбара,
Спешили в брайтонский притон.
Тон, тон, тон.

**Харитон.** Мана арестлеççĕ-и?

**Матильда.** Пулма пултарать.

**Харитон.** Тен, персе те вĕлерĕç?

**Матильда.** Пулма пултарать.

**Харитон.** Мĕн тăвас ĕнтĕ?

**Матильда.** Гуго фон-Гофгеймера Балти мичманĕн пуçне парнелемелле.

**Харитон.** Шуйттан патне! Эпĕ нимĕнле Балти мичманне те пĕлместĕп!

**Матильда.** Суятăн! Эсĕ пĕтĕмпех пĕлетĕн. Кашни пӳтлери йыттăн — хуçи пĕрре анчах. А эсĕ, эсĕ—икĕ хуçа тарçи. Хо! Сана пурĕ-пĕрех кам та пулин персе пăрахать. Е Егорычёв партизан е оккупант Гофгеймер.

**Харитон.** Суя! Ӳсĕрпе сӳпĕлтететĕн. Эпĕ мĕн пурĕ те зубной техник анчах.

**Матильда.** А эсĕ алă пусни, а...

**Харитон.** Тссс!..

**Матильда.** Шăпланма пултараймастăп! Юрататăп эп сана, Харитон, юрататăп сана... Эсĕ вилĕмпе юнашар тăратăн, пĕр тĕрĕс мар утăм турăн çеç—пĕтĕмпех пĕтет! Тархаслатăп, тытса пар эс вĕсене Балти мичманне, — пире те хисеплĕнех ярĕç. Тарас, тарас, тарас! Паспортсем те хатĕр. Манăн ылттăн, ахах пĕрчисем пур. Польшăна, Бессарабине, хăть шуйттан патне пултăр, анчах çак хăрушă хуларан çеç тухса вĕçесчĕ. Манăн юн тымарĕсенче — нимĕç юнĕ, маншăн ăçта кайсан та алăк уçă. Пирĕн — кил-çурт, охотăна çӳресси тата мĕн чухлĕ çĕр пулать! Эсĕ ăнланатăн-и — çĕр?! Рысаксем кӳлсе тухатăн та, мужиксем сан умра пуççене тайса юлаççĕ. Хĕрсем карталанса тăрса вăййăсем выляççĕ. Кучăрсем хăйсен тарăхса çитнĕ лаша витисенче юрăсем юрлаççĕ, горничнăйсем

пире вырӑн ҫинче выртнӑ ҫӗртех какао пырса параҫҫӗ... Ан турткалан! Ывӑтса пар вӗсене юлашки шӑмӑ татӑкне — Балти мичманӗн пуҫне...

**Харитон** (*сиввӗн пӳлсе*). Эсир тӗлӗк куратӑр, Матильда, сире киле кайма вӑхӑт. Виҫҫӗ ҫине кайни — ҫирӗм минут.

**Матильда.** Миҫе? (*Харитон патне васкаса.*) Тӗрӗсси-пех-и?

**Харитон.** Виҫҫӗ ҫине ҫирӗм икӗ минут кайнӑ.

**Матильда.** Е пурӑнӑҫ е вилӗм. Тавай татӑлар, Харитон. Тепӗр темиҫе минутран вӑл кунта пулать.

**Харитон.** Кам?

**Матильда.** Гуго фон-Гофгеймер.

**Харитон.** Хӑйех-и? Ман пата?

**Матильда.** Ҫапла.

**Харитон** (*ним тума аптраса*). Тухса кайӑр, тухса кайӑр. Ну, хӑвӑрт!

**Матильда.** Юрать, юрать... Эпӗ хам кӗтсе илетӗп ӑна, хамах калаҫӑп та унпа. Пирӗн пӗтӗм телей карта ҫинче „ачам"... (*Сасартӑк Харитона ыталать те, мантоне хул ҫине ҫакса ярса пӳлӗмрен тухса чупать.*)

### *Тӑваттӑмӗш курӑнни*

Харитон пӗччене х

**Харитон** (*пусма картлашки патне чупса пырать те Ксюшана чӗнет*). Ксюша, Ксюша... (*Пауза.*) Кайнӑ. Ну, мӗнех вара, тата аванрах, анчах... аванни? Кай, шухӑшлас мар. Нимӗн ҫинчен те шухӑшлас мар. (*Сӗтел патне пырать те чӑмӑрӗпе сӗтел ҫине тӑрӑнать, пуҫне усса васкавлӑн пакӑлтатать.*) Мӗн тӑвас-ха? Мӗн тӑвас? Пӑлханма кирлӗ мар, Харитоша. Чи кирли — пӑлханма кирлӗ мар. Мӗн пур тӳмесене тӳмелесе хамӑн чӗрене хуплам, а унта... мӗн пулать те мӗн килет! М-м-м, хӑрушӑ самант!

*Пиллĕкĕмĕш курăнни*

Харитон тата Хăмăр тумлă çын.

Таçта пÿлĕм хыçĕнчен хуллен çеç шăнкăрав сасси илтĕнет, Харитон пуçне çĕклесе итлет. Ишĕлсе аннă стена хыçĕнчен Ксюша тухса, пÿлĕме йăпшăнса кĕрсе пытанать.

**Юнашар пÿлĕмри сасă.** Ăçта кунта хуçи? Кĕме май пулать-ши?

**Харитон.** Кăмăлпах ыйтатăп кĕме.

Пÿлĕме ерипен Хăмăр тумлă господин кĕрет. Вăл аллисене кĕсъине чикнĕ. Алăк урлă каçсанах чарăнса тăрать.

**Хăмăр тумлă господин.** Май пулать-ши господин Калкутина курма?

**Харитон.** Калкутин эпĕ пулатăп.

**Х. т. господин.** Пит те аван.

**Харитон.** Ман умра, йăнăшмастăп пулсан, господин Гуго фон-Гофгеймер?

**Х. т. господин.** Юратмастăп эпĕ мана ыйту паракансене. Эпĕ хам ыйтусем паратăп. Эсир мана кĕскен, тĕптĕрĕс ответ памалла.

**Харитон.** Тăрăшап.

**Х. т. господин.** Эпĕ кунта, çак харсăр хулана йĕрке тума килни тăватă кун иртсе пиллĕкĕмĕш çине карĕ ĕнтĕ. Партизансем çав тери тустараççĕ çак харсăр хулара. Кунта пурăнакансем вĕсене çав тери пулăшаççĕ, тет. Тĕрĕс-и çав?

**Харитон.** Пĕлместĕп.

**Х. т. господин.** Мĕншĕн пĕлместĕр?

**Харитон.** Эпĕ зубной техник.

**Х. т. господин.** Урăх никам та мар?

**Харитон.** Çитет мана.

**Х. т. господин.** Эсир çав тери асăрхануллă этем.

**Харитон.** Вăхăчĕ çавăн пек.

Пӳлӗм варрине тарӑхса ҫитнӗ, аллине гранатӑ тытнӑ Ксюша хӑвӑрт сиксе тухать.

**Ксюша.** Руки вверх, немчура! Ан хускал!

**Х. т. господин** (*пӑлханмасӑр, аллисене ҫӗклет.*) Эпӗ ирсӗр читлӗхе лекрӗм пулас. Пит те аван.

**Харитон.** Мӗн туса хутӑн эс, хӗрача?!

**Ксюша** (*хыпӑнса.*) Тарӑр, Харитон Николаевич, тарӑр, мӗн вӑй ҫитнӗ таран чупӑр кунтан! Явлӑк айне тӑратрӗ сире, леш, хӗрлӗ ҫӳҫ. Тарӑр хӑвӑртрах! Эпӗ ӗнтӗ кӑна вӗҫне ҫитеретӗп, тӗлех лектерӗп. Тарӑр хӑвӑртрах!

**Харитон.** Пит аван, пит аван, мухтатӑп ҫеҫ... Пӑх-халӗ, епле харсӑрскер. (*Ксюша патӗнчен иртнӗ чух*). Чупатӑп, чупатӑп... (*Сасартӑк Ксюшӑн гранатине тытса илет те, Ксюшӑна ҫыхать.*) У-у, ҫыртать тата, стерва! (*Кӗске тытӑҫу*).

**Х. т. господин.** Эпӗ алӑсене антарма пултаратӑп пуль?

**Харитон.** Кӑмӑлпах ыйтатӑп.

**Ксюша** (*ҫыхнинчен вӗҫерӗнес тесе урайӗнче йӑвалanать.*) Мӗн эсир, Харитон Николаевич? Мӗнле-ха ку, Харитон Николаевич?

**Харитон.** Шӑп, партизансен йӑхӗ! Атӑ кӗлипеччӗ те сана!

**Ксюша** (*тӗлӗнсе*). Леш, ирсӗр сутӑнчӑкӗ, пирӗн хушӑра эсир пулнӑ-и вара?

**Харитон.** Шӑп, хӗрӳ-пуҫу!

**Ксюша** (*йынӑшса*). О-о, мӗнле хура ҫӗлене чӗрере тытса пурӑннӑ эпӗ... О-о!

**Х. т. господин.** Ку чӗрене тивекен сцена сирӗн тата нумая пырать-и?

**Харитон.** Эсир мӗн хушасса ҫеҫ кӗтетӗп.

**Х. т. господин.** Пит аван. Ҫемҫешке хӗрӗн ӑнланмасӑр пуҫ ҫавӑрнать пулас?

**Харитон** (*йӑлишӗн кулса.*) Ҫапла ӗнтӗ... Кушак пекех юратса пӑрахнӑччӗ вӑл мана.

**Ксюша.** Суятӑн, хура ҫӗлен!

**Харитон.** Пăвса вĕлерме хушатăр-и?

**Х. т. господин** (*кĕскен*). Эсир ун ашшĕне, Иван Степаныча, пăвса вĕлернĕ пек-и?

**Харитон** (*куҫ айĕн пăхса илчĕ те, куҫĕпе ҫĕрелле пăхрĕ*). Ҫак пӳрнесемпех.

**Ксюша.** А-а-а-а...

**Х. т. господин.** Каҫăхсах макăрма кирлĕ мар, хĕрĕм. Унсăрăн ака ҫак сăмса тутрипе сирĕн ҫăвара хуплама лекет.

**Харитон** (*мăнкăмăллăн аллисене сăтăркаласа.*) Ĕҫлерĕм ĕнтĕ пĕр туратсăр, пĕр чĕре кӳртмесĕр, ҫав тери яка. Ашшĕне пăвса вĕлертĕм, а хĕрне мăйĕнчен ҫакăпăр. Тархаслать тата мана, вĕренмен выльăх. Епле кĕвĕҫет! У-у, чура!

**Х. т. господин.** Аякка кĕрсе кайма кирлĕ мар, Калкутин.

**Харитон.** Айăплă. Чун ыратнипе тухса кайрĕ. Ҫур ĕмĕр тăршшĕне вĕт — большевик, тесе суйса пурăнтăм. Аван мыскара-и?

**Х. т. господин.** Эсир бургомистра хут патăр-и?

**Харитон.** Панăччĕ.

**Х. т. господин.** Сирĕн пуян, пысăк имениллĕ помещик пулас килет-и? Сирĕн хăвăр аллăрта нумай хресчен, нумай лаша, ĕне, нумай сурăхсем, чăх-чĕп, нумай тырпулă тата ҫĕрулми пулнине курас килет-и?

**Харитон.** Ҫапла! ҫапла! ҫапла! Хамăнне йăлтах каялла тавăрма ыйтатăп. „Большая Харитоньевка" текен имени, ҫĕрĕ-мĕнĕпех, пирĕн, асаттесен пулнă. Манăн аттене, Иероним Леонтьевича, Чекара асаплантарса пĕтерчĕҫ. Анне манăн, Серафима Порфирьевна, Парижра, ҫук пурнăҫпа вилчĕ. А йăмăксем манăн Константинопольре хупахсем тăрăх ҫапкаланса ҫӳрерĕҫ, — тĕрлĕ алă витĕр тухнă вĕсем. Акă эпĕ ҫеҫ, хамăр йăха сыхласа пурăнаканни, тытăнса юлтăм вырăс ҫĕрĕ ҫинче. Хушамата улăштартăм. Сăн-пите те пăскаларăм, пĕтĕм чуна таптарăм... Анчах

ухăша тытса усраса йăпатрăм хама-хам. Тавăрас, тавăрас, пĕтĕм ĕмĕчĕсене халь пĕтерес вĕсенне! Лартмалчĕрку ççи çине! Чуралăха вĕс[illegible] серепене! Елизавета пурăннă вăхăта! (*Сăхсăхать.*) Манăн ĕмĕт çитетех!

**Х. т. господин.** Çав тери нумай, вăя хĕрхенмесĕр усăллă ĕçсем тăвас пулать, сирĕн вара пĕтĕм ĕмĕтĕр пурнăçа кĕрет...

**Харитон.** Е сахал ĕçлерĕм-и эпĕ? Турăран вăтанăр, господин Гофгеймер! Тăваттăмĕш çул пĕр сиктермесĕр çав ĕçпе ĕçлетĕп ĕнтĕ. Мĕн вăрçă пуçланнăранпах çав ĕçре. Гастроном айĕнчи типографине кам тупса пачĕ? — Харитоньев. Партизансен разведкине кам миххе хупса пачĕ? — Эпĕ, Харитоньев. Сакăр чипер хĕре офицерсем валли кам суйласа пачĕ? — Эпĕ.

**Х. т. господин.** Сахал, сахал, сахал.

**Харитон** (*хуллен*). Партин Облăçри комитечĕн секретарĕ Иван Баринов. — Ку та сахал-и?

**Х. т. господин** (*кăрт сиксе*). Иван Баринов? Вăл та сирĕн ĕçех-и?

**Харитон.** Манăн.

**Х. т. господин.** Иван Баринов — сирĕн ĕçех апла?

**Харитон.** Манăн, манăн.

**Х. т. господин.** Йĕркипе калăр.

**Харитон.** Вăл полковой комиссар пулнă. Хĕрлисем каялла чакатчĕç... Çав самантра вăл аманнă пулнă... Виçĕ шрапнель осколки хырăмне лекнĕ пулнă. Хĕрлисен ăна хăйсемпе илсе кайма ниепле те май килмерĕ. Çул çинче вилме пултарать, терĕç. А сирĕн танксем пирĕн хула хĕрринче çĕмĕреççĕ. Сирĕн самолётсем шоссесем çинче, бреющи полётпа вĕçсе, таракансене вĕтеççĕ... Мĕн тăвас-ха ку комиссарпа? Акă хайхи тупрĕç ултавсăр çынна. Кам вăл ултавсăр çын? Эпĕ ултавсăр çын. — Сыхласа усра, Харитон, çак пирĕн боевой комиссара, теççĕ, пĕтĕм шанчăк сан çинче ĕнтĕ, тăванăмăр, теççĕ. Ну-и, нŷхрепе антарса хучĕç. Хăйсем куççулĕпе сывпуллашаççĕ. Арçын

куççулĕ вăл — питех мар та... А эпĕ, ĕнтĕ, врач вырăнĕнче — сыватаканни пулсаттăм.

**Х. т. господин.** Мĕнле, Баринов калаçрĕ-и?

**Харитон.** Харитон тытăнсанах мана часах ура çине тăратать те-ха, тетчĕ Баринов.

**Х. т. госпдин.** Çаплах калатчĕ-и?

**Харитон.** Чăн, унăн сăмахĕ ку.

**Х. т. господин.** Малалла?

**Харитон.** Çав тери шанатчĕç мана большевиксем. Питĕ хитре выляттăм, ниепле те сисеймĕн. Яп-яка та тап-таса.

**Х. т. господин.** Баринов çинченех кала-ха, Баринов çинчен.

**Харитон.** Чăнах та, тăратрăм эп ăна ура çине, кайран — ура çинчен ўкерес тесе. Анчах вăл пĕчĕк çын мар та, унăн пурнăçне татса параканни эпĕ мар, терĕм. Ну, вара чашăк çине хурса пана пекех, кирлĕ çынсене тыттартăм. (*Кулать*). Трофейчик аптрамасть.

**Х. т. господин.** Унтан?

**Харитон.** Допроссенче нимĕн те шарламарĕ, чĕлхесĕр пекех. Ман çине куçне уçса та пăхмарĕ. Характер. Виçĕ кун пĕр сăмах та шарламарĕ.

**Х. т. господин.** Персе пăрахрĕç-и?

**Харитон.** Тĕп тĕрĕс. Ман тĕллĕн пысăк телей пулчĕ. Эпĕ хам виçĕ патрон пушатрăм.

**Х. т. господин.** Эсир хăвăрах?

**Харитон.** Çапла.

**Х. т. господин.** Вилес умĕн мĕн763 каларĕ вăл?

**Харитон.** Хальхин пекех астăватăп.

**Х. т. господин.** Ну, калăр ĕнтĕ! Ну!

**Харитон.** „Котька, манăн юн, манăн ывăлăм! тавăр вĕсене“, терĕ.

Пауза. Хăмăр тумлă господин тутине çыртрĕ те çавăрăнса тăчĕ. Харитон пăшт тăрать, леш çын мĕн каласса кĕтет.

**Ксюша.** Эс, хура чунлăскер, çĕр тĕпĕнчи çĕлен!

**Харитон** (*уринчен тапса*). Шăп, хĕрў-пуçу.

**Х. т. господин.** Вара?

**Харитон.** Çавăн пек пысăк та паттăрла ĕççем тунă хыççăн, хамăрăн пулнă имение „Большая Харитоньевкăна" мана пама пулнăччĕ. Приказĕ те сĕтел çинче выртатчĕ. Алă пусасси çеç юлнăччĕ, — алă пусасси çеç!.. Çав вăхăтрах партизансем бургомистра машини мĕнĕпе чĕррĕн çунтарса янă. У-у!.. Çапла вара манăн имени хут çинче çеç тăрса юлчĕ. Пĕтĕм чунран тарăхатăп.

**Х. т. господин.** Пит те хуйхăллă.

**Харитон.** Пĕтĕм шанчăк сирĕн çинче, господин Гофгеймер. Хушăр çеç — пĕтĕмпех тăватăп.

**Х. т. господин.** Балти мичманĕн пуçне татса парăр мана!

**Харитон** (*хуллен*). Балти мичманĕн пуçне?

**Х. т. господин.** Çапла.

**Харитон.** Тупатăп.

**Х. т. господин.** Эсир шантарсах каларăр-и?

**Харитон.** Сăмсана касма парам. Кашни тĕл пулакан виçĕ çынран пĕрин пӳрнисене хуçса тăкам та, Балти мичманне тупатăпах.

**Х. т. господин.** Пит те аван. Çапла каласса татăлăпăр: эсир мана — Балти мичманне, — сире йăхран пыракан имение парăп.

**Харитон** (*савăнса*). Питĕ пысăк тав сире, ĕмĕрех сирĕн чурăр. Анчах... (*аякра выртакан Ксюша çине пăхса*) ку хĕре пĕтерме лекет. Ăна нимĕн шанмалли те çук. Сутать вăл.

**Х. т. господин.** Хăвăр аллăрсемпе пăвас тетĕр-и е урăхла?

**Харитон.** Эсир мĕнле хушатăр?

**Х. т. господин.** Парăр мана çĕçĕ.

**Харитон.** Мейĕр.

**Х. т. господин.** Тавтапуç!

**Ксюша** (*хуллен*). Акă ĕнтĕ вĕçне çитрĕм.

Хăмăр тумлă господин, Ксюша патне пĕкĕрлет те, ăна çыхнă пăявсене ерипен тататъ.

**Х. т. господин.** Тăма калатăп, хĕрĕм.

**Ксюша.** Кун пек асап кăтартиччен, мĕншĕн тӳрех вĕлерес мар?

**Х. т. господин.** Эсир çак çынна питĕ хытă кăмăллана-и?

**Ксюша.** Ыталăттăм та — пăвса вĕлерĕттĕм.

Иккĕшĕ куçпа куç тĕл пулаççĕ. Харитон тӳсеймесĕр айăккалла пăрăнать.

**Х. т. господин.** Хăвăрăн туалета йĕркене кӳртсемĕрччĕ, турасамăр хăвăрăн илемлĕ те кăтра çӳçĕре.

**Ксюша.** Капла та аптрамасть.

**Х. т. господин.** Мĕн хушнине — тăвăр. (*Ксюша ĕлĕкхи хăнăхупа хăйне хăй майларĕ, хытса ларнă аллисене сăтăркалать те полушубокне тӳмелесе çӳç-пуçне пуçтаркалать*). Эсир пĕтĕмпех хатĕр пулас?

**Ксюша.** Çапла.

**Х. т. господин.** Пит те аван.

**Харитон.** Асăрханарах, господин Гофгеймер. Чее те усал шухăшлă хĕрача. Лаша пек вăйлă тата, мĕн те пулин ан пултăр...

**Х. т. господин.** Мана вĕрентессинче тăхтама хушăттăм эп сана.

**Харитон.** Итлетĕп.

**Х. т. господин.** Пуçна çӳлелле çĕкле, хĕрĕм.

**Ксюша.** Ну, мĕн тата? Тен „казачка“ ташламалла мар-и?

**Х. т. господин.** Казачкăлла ташлама та вăхăт çитет.

**Ксюша.** Ан асаплантарăр, чунилли. Иккĕленсе тăрас марччĕ те... ĕçĕ те пĕтнĕ.

**Х. т. господин.** Вилме нихăçан та ан васкăр. Вăл хăйĕн вăхăтне пĕлсе хăех килет.

**Ксюша.** Асаплантарса вĕлеретĕр-и, е ахалех-и?

**Х. т. господин.** Каларха, хӗрӗм, эсир пӗтӗмпех, пӗр сӑмах сиктермесӗр илтрӗр-и?

**Ксюша.** Ҫӗр ҫула ҫитиччен ватӑлса лартӑм.

**Х. т. господин.** Апла пулсан, эсир чи тӑнлӑ ҫын пулса тӑтӑр.

**Ксюша.** Ҫапла, мӗн ӗмӗр тӑршшӗпех асӑнмаллӑх.

**Харитон** (*тухи-тухми сассипе кулса*). Пӑх-халӗ, вӑл... „Ӗмӗр тӑршшипех асӑнмаллӑх". Хӑйӗн мӗн пурри те ҫӳҫӗ вӗҫне ҫеҫ тӑрса юлнӑ. Пулнӑ — халь ҫук.

**Ксюша.** Санӑн питӳ ҫине сурма ӗлкӗретӗп пур-пӗрех.

**Харитон.** Ну-ну, йӗрӗнчӗк!

**Х. т. господин.** Чарӑн!

**Харитон.** Айӑплӑ.

**Х. т. господин.** Акӑ — ҫак, сирӗн граната, питӗ ӑслӑ вӑл, хӗрӗм.

**Ксюша.** Мӗ-ӗн?

**Х. т. господин.** Мейӗр, илӗр ӗнтӗ, сирӗн граната вӗт.

**Ксюша.** Илместӗп-им,— илетӗп.

**Х. т. господин.** Анчах эсир унпа тӗрӗсрех усӑ курма тӑрӑшӑр, вӑхӑтне пӗлсерех, вырӑнне пӗлсерех.

**Ксюша** (*нимӗн тума пӗлмесӗр*). Аварланипех-и?

**Харитон** (*васкаса*). Астӑвӑр, перет, господин Гофгеймер!

**Х. т. господин.** Шӑп.

### *Улттӑмӗш курӑнни*

Харитон, Ксюша, Хӑмӑр тумлӑ господин тата Матильда. Харитон, вӑрҫтарнӑ тискер кайӑк пек, пуҫне хулпуҫҫисем ҫине пытарса, курпунне кӑларса куҫ сиктермесӗр Ксюшӑна сӑнать. Хӑмӑр тумлӑ господин, пӳлӗмӗн пӗр кӗтессине кайнӑ та, пӗр хусканмасӑр тӑрать. Пӑлханнӑ Ксюша гранатӑна чӗри ҫумне икӗ аллипе ҫатӑрласа тытнӑ та, мӗн пулса иртнине тавҫӑрса илес тесе, асаплӑн шухӑшлать. Пӳлӗм хыҫӗнче сасартӑк шӑнкӑрав сасси янраса каять, пӳлӗме малтанхи пекех хӑвӑрттӑн ҫӳҫне-пуҫне сапаланӑ Матильда кӗрет.

**Матильда** (*сывлӑшне ҫавӑрмасӑрах*). Крушени, Харитоша! Улталанӑ, банк пӗтрӗ. Гофгеймере вӗлернӗ.

**Харитон.** Эсир ухмаха ернĕ?!

**Матильда.** Хо! Эпир пурте ухмаха еретпĕр! Вăл Берлинерштрассе урамĕнче, çул хĕрринчи пылчăк çине пуçĕпе тăраннă выртать. Кĕсъисем таварăнчăк, мăйĕсем кăвакарса ларнă...

**Харитон.** Ыйхăран вăранăр, эсир! Господин Гуго фон-Гофгеймер сирĕн умăрта тăрать!

**Х. т. господин** (*çутта утса тухать*). Мадам ытлашширех пăлханса ÿкнĕ.

**Матильда** (*кăшкăрса ярать*). А-а!.. Балти мичманĕ!

**Балти мичманĕ.** Тĕп-тĕрĕс.

**Ксюша** (*савăннипе Матильдăран та хытăрах кăшкăрса.*) Баринов Иванăн аслă ывăлĕ!

**Балти мичманĕ.** Вăл хăй.

**Харитон** (*кăшкăрса*). А-а-а-а!..

Матильда сумкăран дамский браунинг туртса кăларать те çав самантрах Балти мичмăнне тĕллет. Ксюша, кушак пек Матильда çине сиксе ăна диван çине йăвантарать те, револьвере чĕркуççипе пусса лартать. Çав вăхăтрах Харитон Балти мичманĕ çине сикет, анчах мичман ăна пĕрре çапнипех урайне йăвантарать. Хĕрарăмсем çухăрса, чавкаласа диван çинче тăрмашаççĕ.

**Матильда.** Сăмсуна çыртса тататăп... ирсĕр, сăмсуна!

**Ксюша.** Суятăн, хĕрлĕ çÿç, ниçта та тапранаймăн! (*Çыхса пăрахнă Матильда йынăшса илчĕ те, шăпланчĕ.*)

**Балти мичманĕ.** Акă хайхи, тĕл пултăмăр та, господин Харитоньев.

Балти мичманĕ хăвăрт хăй тумне хывать те аялти матрос кĕпипе тăрса юлать. Йынăшакан Харитоньев патне пĕшкĕнет, ăна çухавийĕнчен ярса илсе çĕртен çĕклесе тăратать).

**Харитон** (*хирĕçмесĕрех.*) Пĕтĕмпех пĕтрĕ... Ура айĕнчи çĕр çунать, о-о-оох!..

**Балти мичманĕ.** Халь ĕнтĕ калаçăпăр, господин Харитон.

**Харитон.** Пĕтрĕ. Пĕтĕмпех. Амба. Акă юлашки сăмах.

Балти мичманĕ Харитона пӳлĕмрен ертсе тухать.

**Матильда** (*ӳлесе*). Манăн Харитоша! (*Пауза*).

*Çиччĕмĕш курăнни*

Матильда, Ксюша, кăшт тăрсан Балти мичманĕ кĕрет.

**Матильда** (*кĕтмен çĕртен, сасартăк, тăвăллăн*). Чипер хĕрĕм, илемлĕ пикеçĕм, манăн — ахах пĕрчи, ылттăн, хаклă япаласем нумай. Тархаслатăп, кăларса ярăр мана. Чĕркуççи çине ларăп...

**Ксюша.** Суятăн, хĕрлĕ çӳç. Çитет санпа калаçса!..

**Матильда** (*кăшкăрса*). О! итлĕр-ха тем... тăссс! (*Пӳлĕм хыçĕнчен кĕскен йынăшни илтĕнчĕ те çав самантрах лăпланчĕ*).

**Ксюша** (*мăнаçлăн*). Акă вăл Балти мичманĕ! Акă вăл халăхсен тавăраканĕ! (*Пауза. Балти мичманĕ, çилленнипе шуралса кайнăскер, ерипен пӳлĕме тавăрнать*).

**Ксюша.** Пĕтертĕн-и?

**Балти мичманĕ.** Пĕтертĕм.

**Ксюша.** Пуç таятăп.

**Балти мичманĕ** (*хуллен*). Татах тепĕр хура çĕлен тасалчĕ пирĕн çĕр çинчен.

**Ксюша.** Акă хайхи телей килсе тухрĕ: куртăм ĕнтĕ. Акă мĕнле çын вăл — Балти мичманĕ!

**Балти мичманĕ.** Малашне пĕр-пĕрне пĕлсе пурăнăпăр, Ксюша.

**Ксюша.** Сывă-и, Костя Баринов!

**Балти мичманĕ.** Каяр, хĕрĕм. Васка! Вăхăчĕ çавăн пек, килсе тухĕç тата, унтан...

**Ксюша.** Ку хĕрлĕ çӳçĕпе мĕн тăвас?!

**Балти мичманĕ.** Хăех вилет. Каяр.

**Ксюша** (*Матильда патне пĕшкĕнсе*). Вилсе хытах, хура юн! (*Балти мичманĕ енне çавăрăнчĕ те, кăшт кулса аллине тăсрĕ.*) Кайăпăр, Балти мичманĕ!

ЧАРШАВ.

## ÇĔНТЕРӲ ÇУЛĔ

*Аркадий Ĕçхĕл*

Кавказран — Карпата çитиччен,
Карпат урлă татах малалла!
Атăлтан — Вислăна çитиччен,
Висла урлă татах малалла!
Тăшмана шăтăка чикиччен,
Гитлера мăйĕнчен çакиччен
Пирĕн çарăн малтан малаллах каймалла!

Кавказ сунчĕ пире вут-чĕре,
Атăл сунчĕ пире аслă çул:
— Çĕршыв ывалĕ, çак тĕнчере
Паттăртан паттăрри эсĕ пул! —
Çак пилпе ĕмĕртен ĕмĕрех
Эпир хамăр юратнă çĕре
Мăшкăла кăларман, кăларассăмăр çук!

Çул параççĕ пире шыв-шурсем,
Пуç таяççĕ пире сăрт-тусем,
Йыхăраççĕ пире тăвансем:
— Арăсланăмăрсем, килĕрсем! —
Хĕрлĕ Çар малалла пынăçем
Йăлтăраççĕ çынсен куçĕсем,
Вăй илсе чĕрелеççĕ ялсем, хуласем.

Ĕмĕрсен çĕнтерӳ çул-йĕрне
Пирĕн вилĕмсĕр Маршал хывать,
Кĕтесрен кĕтессе тĕнчере
Янăрать пирĕн хурçă хăват,

Хёрлё Çар тăшмана çĕннĕрен
Пĕтĕм çĕр чĕрĕлет çĕнĕрен,
Вăл татах ирĕкреххĕн те аслăн сывлать.

Кавказран Карпата çитиччен,
Карпат урлă татах малалла!
Атăлтан Вислăна çитиччен,
Висла урлă татах малалла!
Берлина çĕмĕрсе кĕриччен,
Ирсĕрсен йăвине ишиччен
Хĕрлĕ Çарăн малтан малаллах каймалла!

## ТĂВАН ÇĔРШЫВĂМĂР ЧĔРИ!..

*С. Эльгер.*

Мускав! Мускав! Мерчен хуламăр,
Тăван çĕршывăмăр чĕри!
Эпир — сан сывлăшпа сывлатпăр,
Санра пирĕн кунçул тăрри.

Мускав, эс аслă вată Руçăн
Мĕнпур пайне цементласа,
Совет республиксен Союзĕн
Çуртне хăпартрăн тăрласа.

Мускав, эс Русь çĕрĕн мухтавĕ, —
Пур халăхсен ыр кун çăлли;
Этем тăванлăхĕн ялавĕ
Çиçет сан çинче куç тулли.

Мускав, эс пирĕн тĕп столица,
Хăватлă эс кĕрешӳре;
Малаш историн çут страници
Сана пехиллĕ ĕмĕрех.

Фашизм çарĕ штурмлă хумлăн
Ху çинелле урса сиксен,
Эс чул çыран пек тăтăн сумлăн,
Ванмарăн нимĕç танкинчен.

Эс пултăн пирĕн хурçă хÿтлĕх —
Хăрушă, йывăр вăхăтра;
Совет çемьи пĕр чун, пĕр ӳтлĕ
Пулса пĕрлешрĕ сан тавра.

Пире вăй-халлă ĕмĕт пачĕ
Санран тухан Çулпуç сасси.
Çав вăй çапнипе пуçланчĕ
Фашизм пуçĕ ванасси.

Пĕр эс вăл, аслă маршал Сталин
Ăс-хал панисене пула,
Тискер вăя сирме мухтавлăн
Пултартăн пысăк вăрçăра.

Хура хумсен штурмне тӳсӳллĕн
Ху кăкăру çинче ватса,
Европăна — çĕнтерӳллĕн
Эс патăн çăлăнăç тупса.

Мускав! Мускав! Тăван столица,
Эс çирĕп, вăйлă—чăнлăхпа;
Тĕнче историйĕн страници
Çуталĕ санăн ятупа.

# ЮЛАШКИ ТЁЛПУЛУ

*Пĕр пайлă пьеса*

## *Анатолий Глебов.*

**Вылякансем:**

**Бутаев Степан**—45 çулта.
**Куканова Улька**—38 çулта.
**Чепракова Марье**—60 çулта.

Ĕç Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче, нимĕç фашисчĕсем вăхăтлăха йышăннă ялта пулса иртет. Чепракова Марье пӳртĕнче. Кĕрхи сивĕ каç. Марье чӳрече патĕнче çĕтĕк тумтир сапласа ларать. Кантăкран хĕрарăм мĕлки иртсе кайни курăнать.

**Марье.** Улька-пулас. (*Ĕçне пăрахса, пăлханса сиксе тăчĕ. Пӳрте хресчен тумтирĕ тăхăннă Улька кĕрет. Аллинче сарă тутăрпа çыхнă çăкăр. Вăл питĕ пăлханчăклă. Хăй хыççăн алăкне хупса, алăк янаххи çине тайăнать те йывăррăн сывлать, хăй çав вăхăтрах пăлханнине палăртасшăн мар.*) Эсĕ мĕн ара? Е мĕн те пулсан пулчĕ-и?

**Улька.** Çук. Нимĕн те мар... Сывă-и, Марье аппа?

**Марье.** Сывах-ха, чунăм, сывă. (*Пăлханса.*) Урампа килтĕн-и? Е пахча витĕр-и?

**Улька.** Вăрмантан тӳрех, кантăр ани хушшипе.

**Марье.** Ну, тавах турра.

**Улька.** Мĕн апла?

**Марье.** Лăпкă мар кунта пирĕн. Нимĕçсем çĕнĕ вулăс старшини янă. Кунĕпех урчĕ. Виçĕ çынна хĕнерĕ. Ирхине пире пурне те пуçтарчĕ те: „Вунпиллĕкĕмĕшчен тырă памасан, кашнинех ураран çакатăп, виличченех çакăнса тăччăр", тет Унран тем те кĕтме пулать. Кашкăр. Пи-

рӗн староста Парфёнов мӗнле хаяр та,—ун умӗнче путек пек анчах. Хӑй киленче ӑна юрасшӑн йӑпӑлтататъ.

**Улька.** Хӑй патӗнче?

**Марье.** Ҫапла пулмасӑр. Пӗр четвӗрт эрех лартнӑ пулӗ-ха, иккӗшӗпех мар пулсан.

**Улька.** Хушамачӗ мӗнле унӑн, леш вулӑс старшинин? Пӗлместӗн-и?

**Марье.** Бутаев.

**Улька** (*шуралса кайса*). Мӗнле?

**Марье.** Бутаев.

**Улька** (*алӑк янаххичен тытса*). Ҫавӑ.

**Марье.** Мӗн пулчӗ ара сана? Е пӗлетӗн-и эсӗ ӑна?

**Улька.** Степан? Ҫапла-и?

**Марье.** Ятне пӗлместӗп ҫав.

**Улька.** Мӗнлерех вара хӑй? Миҫе ҫулта пулӗ?

**Марье.** Хӗрӗхрен иртнӗ. Ҫирӗпскер, пысӑк янахлӑ. Хӗрлӗрех питлӗ, ҫӳҫӗ те хӗрлӗ пулас.

**Улька.** Ҫавӑ. Ҫавӑ.

**Марье.** Паллатӑн-и мӗн?

**Улька** (*тӑхтанӑ хыҫҫӑн*). Упӑшка.

**Марье.** Упӑшка?

**Улька.** Малтанхи упӑшка пулнӑскер. Иккӗмӗшпе эпӗ—Куканова.

**Марье.** Ҫапла, ҫапла. Эпӗ хам та пӗлетӗп... Ах, тур ҫырлах анчах.

**Улька** (*васкаса*). Ме хӑвӑртрах.

**Марье.** Мӗн ку?

**Улька.** Мӗн пама пулни.

**Марье** (*тӗлӗнсе*). Ҫӑкӑр?

**Улька.** Сана ҫырла кукӑлӗ кирлӗ-и-мӗн? Кунӑн та ӑшӗ пур. (*Хуллен*). Тӑван ҫӗршывран килнӗ хыпарсем—икӗ теҫетке, тата Сталин приказӗ—пиллӗк. Лайӑхрах пытар. Паянах салатса пар. Хӑв патӑнта ан тыт. Илтрӗн-и?

**Марье.** Пӗлетӗп...

**Улька.** Мӗнле тӑвас-ха? Те кунтанах шӑвӑнас часрах,

те... Хам та пӗлместӗп. Кӗтмелле пулать пулӗ. Антив, кӑшт тӗттӗмленерех патӑр. (*Ларчӗ те, текех ҫаврӑна-ҫаврӑна кинтӑкран пӑхать.*) Апла, эпӗ ӑна куртӑм иккен!

**Марье.** Хӑҫан?

**Улька.** Халь анчах. Парфёновсен умӗпе иртсе килнӗ чух, вӗсен патӗнчен темлескер крыльца ҫине тухрӗ. Нимӗҫ тумтирӗпе, ҫарапуҫӑн. Анкарти хыҫнелле кайрӗ. Вара тинех чӗре тапма чарӑнчӗ... Степан... Эп каялла ҫаврӑнса пӑхнӑ вӑхӑтрах, вӑл та ҫаврӑнса пӑхрӗ. Куҫсемпе хирӗҫ пултӑмӑр. Тепӗр хут пӑхрӑм. Ҫук, вӑл мар пек туйӑнчӗ. Ӑҫтан пулма пултарӗ вӑл ҫакӑнти ялта, нимӗҫсем патӗнче, тесе шутларӑм. Шӑп та шай вунӑ ҫул ҫитет унпа тӗл пулманни. Вӑтӑр виҫҫӗмӗш ҫултанпа курман. Сакӑр ҫуллӑха хупса лартмалла туначчӗ ӑна ун чух.

**Марье.** Мӗншӗн лартнӑ вара?

**Улька.** Кулӑшла пулса тухрӗ. Ман пирки. Унӑн ҫулне пӳлсе хурасса эпӗ хам та пӗлмен.

**Марье.** Мӗнле апла?

**Улька.** Кӗскен каласан, ҫапла пулчӗ. Пирӗн колхозра аван мар ӗҫсем пулма пуҫларӗҫ. Такам суя сӑмахсем саратчӗ. Вара эпӗ колхозра кулаксем майлӑ сӑмах саракан ҫын пытанса пурӑнни ҫинчен хаҫата ҫыртӑм. Тӗрӗслеме ыйтрӑм. Кам сӑтӑр туни мана паллӑ пулман. Анчах та вӑл ӗҫсемпе манӑн хам упӑшках хӑтланнӑ иккен...

**Марье.** Ох, аннеҫӗм!

**Улька.** Ҫапла вара, ҫав сиенлӗ ӗҫсемшӗн тата ҫураки планӗнче сӑтӑр тунӑшӑн лекрӗ. Вӑл ун чухне пирӗн Вязловӑра колхоз председателӗ пулса ӗҫлетчӗ. Пуриншӗн те пӗр харӑсах суд аллине лекрӗ. Вара... ӑсатрӗҫ. Виҫӗ ачапа вара эпӗ хусах арӑм та мар, качча тухнӑ хӗр те мар пулса юлтӑм. (*Пауза.*) Пӗтӗм пурнӑҫа хуҫса хӑварчӗ, пӗтменскер. Мӗнле нуша курмарӑм пулӗ эп унран. Пуринчен ытла колхоз пуҫлансассӑн, эпӗ делегаткӑччӗ унчух, халӑх хушшинче тӑрӑшса ӗҫлеттӗмчӗ, ҫын пек пурӑнаттӑм... Юратмасӑрах качча илчӗ илессе те, батрач-

кăна илнĕ пек. Вĕсем, Бутаевсем, чăн-чăн кулаксемех пулман ĕнтĕ, анчах та чунĕсем çавăнталла туртăнатчĕç. Çемьипех çапла. Тӳсрĕм эпĕ вĕсем пирки нушана.

**Марье.** Пирĕн Парфёновсем шăп та шай çав çынсем пекчĕ. Тикĕт чунлă. Нимĕнпе те çуса тасатаймастăн. Халĕ акă, вĕсем пире хăйсене кăтартаççĕ те.

**Улька.** Вĕсем—пире, эпир—вĕсене.

**Марье.** Мĕнле-ха? Ак тамаша... Мĕн тумалла ĕнтĕ халĕ сан? Те çĕр выртмалла, те... (*Алăка хытă шаккаççĕ.*) Ах, турăçăм!

**Улька** (*сиксе тăрать.*) Пытар хăвăртрах.

**Марье.** Ăçтарах? Турăçăм. Тĕпсакайне ан. Унта, кĕтесре, купăста катки пур, пушăскер. Ун айĕнче шăтăк пур, хăмапа витнĕ ăна. Çавăнта кĕрсе лар. Утăпа витĕн. Утă пур унта. (*Алăка шаккаççĕ.*) Илтетĕп, илтетĕп. Халех. Хывăннă ха эпĕ, тирпейленем. (*Улька пытанать.*)

Марье ахлатса алăк патнелле пырать. Степан кĕрет. Вăл нимĕççен полицейски формине тăхăннă.

**Степан.** Малашне пĕрре шаккасанах уçнă пултăр мана. Илтрĕн-и? Иртĕхтернĕ сире кунта, сволочьсене.

**Марье.** Тăванăм, эпĕ ара аялти кĕпе вĕççĕн анчахчĕ-çке. Карчăк пулсан та, аван мар пек çавах та.

**Степан.** Улька ăçта?

**Марье.** Мĕнле Улька?

**Степан.** Пăрах пĕлмĕше пеме. Тирне сĕвĕп. Вязловăри Бутаева. Сан патна халĕ çеç кĕчĕ вăл.

**Марье.** Сана, тăванăм, Парфёнов тилпĕрен хушса хăналанă пулмалла...

**Степан.** Мĕн?

**Марье.** Мĕн эс ман çумма пули-пулмипе çыпăçатăн? Темĕнле Улька... Вязловăран... Унта манăн паллакан çын та çук. Ĕмĕрне те пулман та эпĕ унта. Хăвах пĕлетĕн, ку таврара эс пĕр хут çеç мар пулнă: кунтан, пирĕн патăртан, Вязловăна никам та каймасть. Кам çӳретĕр çав

вăрманпа лачакасем тăрăх? Хĕрĕх çухрăм пулать пулĕ,— чăтлăх, вăрман та лачака. Камăн çӳресси килтĕр? Вязловкăна кайиччен Мускава çитме çамăлтарахчĕ ĕлĕк. А эсĕ „Вязловка" тетĕн. Вăл ялтан эпĕ çуралнăранпа та никама пĕлмен.

**Степан** (*Улька илсе килнĕ çăкăра асăрхаса*). Ак ку мĕн?

**Марье** (*самантлăха çухалса кайрĕ*). Çăкăр. Хăвах куратăн.

**Степан.** Эсĕ асту, çĕрĕк купăста кучанĕ, ман пуçа ан пăтрат... Эсĕ шухăшланинчен ытларах асăрхатăп эпĕ. Çĕр айĕнчине виçĕ аршăн тарăнăшĕ куратăп. Çакă çăкăр, сар тутăрпа çыхнăскер, ун аллинчеччĕ. Асăрхарăм эпĕ. Ăçта вăл? Кала?

**Марье.** Мĕн калас ман сана? Шыра, кăмăлу пулсан. Ав тĕпсакайне кĕр, кăмакана е сĕтел айне пăх. Урăх ниçта та пытанмалли çук—ака пăх, (*тĕпсакайне уçса*) пур çĕре те кĕрсе пăх.

**Степан** (*иккĕленсе пăхрĕ те ун çине, урипе тапса, тĕпсакай хăмине хупрĕ. Хăй ларчĕ.*) Эх, асанне. Пĕлесчĕ санăн, мĕн тери ман ăна курма кирлине. Арăм вăл манăн. Ăнланатăн-и?

**Марье.** Мĕншĕн-ха?

**Степан.** Сана халь мĕн калатăп, çавăншăн. Эсĕ халь манран мĕн илтетĕн, çавăншăн курмалла. Ăна пĕр чун та пĕлме тивĕçлĕ мар. Ман ĕçпеле маншăн никам та чунран калаçма пултараймасть... А сана халь эпĕ хампа пĕрлех илсе каятăп. Суйнăшăн, Улькана пытарнăшăн, санăн кантра çинче çакăнса тăмалла пулать—в... (*сехетне пăхать*) вуннă та ноль, ноль вăхăтра. Тепĕр сехет те вунпиллĕк минутран. Ăнлантăн-и? Мĕн ятлă-ха эсĕ?

**Марье.** Чепракова Марье.

**Степан.** Аçу ячĕ?

**Марье.** Ниловна.

**Степан.** Ачусем пур-и?

**Марье** (*тӳрех куҫӗнчен пӑхса*). Виҫӗ ывӑл Хӗрлӗ Ҫарта.

**Степан.** Мухтанатӑн-и?

**Марье** (*хӑрамасӑр, мӑнаҫлӑн*). Мухтанатӑп.

**Степан.** Мухтан, мухтан,—тӗрӗс тӑватӑн. Эпӗ те, Ниловна, кунта пуличчен Хӗрлӗ Ҫарта пулма хавасрах ӗнтӗ. Ҫавтери йӑлӑхтарчӗ! Ӗненетӗн-и? Эпӗ вӗт хам та колхоз председателӗ пулса ӗҫлене, парти кандидачӗ пулнӑ.

**Марье.** Ытахальтен пулӗ ҫав?..

**Степан.** Мӗнле калас. Ман ӑшӑмра чун икке пайланчӗ. Ӑнлантӑн-и? Улпутсене именисенчен хуса кӑларсан, колхозсем ҫинчен мар шутланӑччӗ те эпӗ. Кам шутланӑ-ха колхозсем ҫинчен?

**Марье!** Тӗттӗм ҫынсем пулнӑ, ҫавӑнпа шутламан. Уҫрӗҫ те пирӗн куҫсене, вара...

**Степан.** Пӑрах. Тепӗр сехетрен санӑн вилес пулать, пурӗпӗрех эпир калаҫнине никам та пӗлмест. Мӗн суймалли пур?

**Марье.** Эсӗ суй, кӑмӑлу пулсан. А эпӗ суймастӑп.

**Степан.** Апла ӗнтӗ, сана колхоз чунтанах килӗшрӗ?

**Марье.** Килӗшрӗ.

**Степан.** М-да. Эпӗ ӗнтӗ, чӑнах, хам енчен кӑна каламӑттӑм, м-да...

**Марье** (*йӗкӗлтерех*). Улпут именине панӑ пулсанччӗ сана? Тӗрӗс-и?

**Степан.** Аха. Эпӗ вӗсене улпутран лайӑхрах тыткаланӑ пулӑттӑм.

**Марье.** Ҫук, тӑванӑм. Ун пек пулас ҫук. Улпучӗ нимӗҫ ав, тӗрӗсрех каласан, барон килнӗ. Эсӗ унӑн йытти вырӑнӗнче ҫӳретӗн. Иуда та хӑйне хаклӑраха сутнӑ...

**Степан.** Асанне, сан чӗлхӳ ытла ҫивӗч.

**Марье.** Пурӗ-пӗрех вилмелле.

**Степан.** Акӑ эпӗ сана краҫҫинпа санса ҫунтарса яма хушӑп. Вара, мӗнле?

**Марье.** Хура эсрелӗ!

**Степан.** Чарӑн лӑркама, пӗррех хут! Унсӑрӑн, чӑнласах

хушăн. Енчен, йĕркеллĕ пулсан, тен çакас шухăша та улăштарăп. Çавăн пек çул çинче эпĕ халь, Ниловна... Эх, тупăнсанччĕ кам та пулин—фронт урлă хамăрăннисем патне ертсе каякан!

**Марье.** Сирĕннисем, хăвăрăннисем авă вĕсем—господин фон барон Пендерсем тата леш... мĕнлеччĕ-ха çав... вĕсен гестапинчен... Мăн хырăмли... Франкеччĕ-и?

**Степан.** Çапла шутлатăн? Тен эпĕ вĕсене санран та ытларах кураймастăп пулсан? Эпĕ шутланă пек пулмарĕ, Ниловна,—пачах апла мар.

**Марье.** Йăнăшрăн пулать?

**Степан.** Сана тӳррипех калатăп. Манăн—унта, килте, ачасем-çке-ха. Виçĕ ача.

**Марье.** Сан килӳ халĕ нимĕçсем патĕнче, фитерланра.

**Степан.** Хуп çăварна. Кала тӳрех: кама та пулсан пĕлетĕн-и?

**Марье.** Кама-ха?

**Степан.** Кам партизансемпе пĕрлешterме пултарать мана. Пысăк ĕç тунă пулăттамăр. Ăна-кăна нумай пĕлетĕп эпĕ. Çакăншăн мана каçарнă пулĕччĕç. Ну? Пĕлетĕн-и?

**Марье.** Никама та пĕлместĕп эпĕ. Старике чĕрĕллех çĕр айне чикрĕç. Акă сан пеккисем, ылханлă чуниленсем. Ачасем çапăçаççĕ. Тен, ашшĕшĕн тавăрĕç. А тӳр килсен, маншăн та. Пурăнатăп эпĕ пĕччен, тăлăх-турат. Никампа та нимĕн çинчен калаçмастăп, Мĕн пĕлни веçех хамра.

**Степан.** Мĕн пĕлетĕн эсĕ?

**Марье** (*турăш çине кăтартать*). Акă. Кунĕн-çĕрĕн, пирĕн çĕре нимĕçсенчен тасатма пулăшăр тесе кĕлтăватăп. Тата сан пек телейсĕр çынсенчен тасатма ыйтатăп.

**Степан.** Сан шутупа, эпĕ телейсĕр-и?

**Марье.** Мĕнрен телейлĕ-ха эсĕ?

**Степан.** Тĕрĕс, Ниловна. Çакна куратăп эпĕ: мана эсĕ чĕрне хури чухлĕ те ĕненместĕн. Ак эпĕ сана тӳрех чуна

уҫса патӑм. Халӗ ӗнтӗ манӑн сан ҫуртӑнтан каймалли ҫук. Ну, мӗн тӑвас? Айта эппин, пуҫтарӑнар.

**Марье.** Ӑҫта?

**Степан.** Такан ҫине.

**Марье.** Киремет пуҫӗ! Этем мурӗ!

**Степан.** Юрӗ, юрӗ. Ҫав-ҫавах. Карӑмӑр. (*Марье ҫухалса кайрӗ, пӳрт ӑшчиккине пӑхать. Хӑй саплакан ҫӗтӗк ҫине пӑхрӗ. Аллине сулчӗ. Нимӗн тума аптӑрарӗ, Степан Марьене сӑнать. Марье ҫӑкӑра сӑнать*).

**Марье.** Ҫӑкӑра илес-и ман?

**Степан.** Мӗне кирлӗ вӑл сана? Леш тӗнчере маннӑй пӑтӑ ҫитерӗҫ. Эсӗ турӑ умӗнче пӗтӗм вырӑс ҫӗрне хӳтӗлекенӗ вӗт.

**Марье** (*сурса*). Йытӑ!

**Степан.** Хуллентерех! Унсӑрӑн, упӑшку пекех ҫӗр айне кӗрсе выртӑн.

**Марье** (*ҫӑкӑрне илет*). Илетӗп, ҫынсене парӑп.

**Степан.** Ил, илес килсен.

**Марье** (*ҫирӗппӗн*). Каяр.

**Степан.** Кайрӑмӑр. (*Тӗпсакай хӑми уҫӑлать, Улька курӑнать*).

**Улька.** Ниловна!

**Степан.** Кам вӑл? (*Пӑшалпа Ульканa тӗллесе.*) Руки вверх!

**Улька.** Мана илсе кай, бандит!

**Марье** (*тӗлӗнсе*). Мӗнле-ха капла.

**Улька.** Маншӑн эсӗ ху пурнӑҫна ҫухатнине эпӗ тӳсме пултараймастӑп. Антив, мана ҫактӑр. Нимӗҫ йытти!

**Степан.** Эсӗ, чиперрӗм, малтан тух-ха, унтан курӑпӑр. (*Аллине тӑсать*).

**Улька.** Ан тыт! (*Йӗрӗнсе ун аллине сирет*).

**Степан.** Мӗнле пулнӑ—ҫаплипех юлнӑ иккен.

**Улька.** Эсӗ те. (*Тухать.*)

**Степан** (*Марьене*). Эсӗ тупа тунине ҫапла ӗненмелле эппин асанне?

**Марье.** Фашиста суйнăшăн турă каçарать.

**Степан.** Тавту хăвăн турруна, Улька кунта пулнăшăн. Унсăрăн эпĕ санпа урăхла калаçнă пулăттăм. Лар, ав лере аяккарах та, ан шарланă пултăр. Сан сассуна илтем мар. (*Марье кăмака умĕнчи сак çине ларать.*). Ну, Ольга Андреевна? Мĕнле? Алă та парасшăн мар? Ăçтан килме кăмăл турăр? Ниловна тĕрĕс калать: пирĕн ялтан кунта килекенсем сайра, тет. Халĕ çул хыврăр пулать? Лачакара килти пекех? Çапла-и? Тен, хваттер те унтах пулĕ, партизан юлташсемпе пĕрле? Адресне каламăр-и? Эпĕ хăнана пынă пулăттăм. Ырă кăмăлпа, сире усăллă пулас шутпа. Тен, пысăк пулăшу панăшăн мĕн пур çылăхсене каçарнă пулĕччĕç? Э? (*Улька чĕнмест.*) Мĕнле вара, çапла чĕнмесĕр лармалла выльăпăр-и?

**Улька.** Нимĕнле партизансене те пĕлместĕп эпĕ. Вязловăран кайрăм. Чăн. Активистка тесе тытасран хăрарăм. Вăрçă умĕн эпĕ колхоз председателĕ пулнă.

**Степан.** Эсĕ? Председатель? Оля!..

**Улька.** Вунă çул иртрĕ ĕнтĕ.

**Степан.** Ачасем мĕнле манăн? Чĕрĕ-и?

**Улька.** Чĕрĕ. Алёша—гвардире. Лейтенант-танкист.

**Степан.** Лейтенант?

**Улька.** Комсомолец.

**Степан.** Верук?

**Улька.** Вăл та комсомолка, партизанра.

**Степан.** Апла... А Ваççа? Пĕр çула çитнĕччĕ пулас вăл, эпĕ кайнă чухне.

**Улька.** Халĕ вунпĕр çулта, манпа вăл.

**Степан.** Ăçта?

**Улька.** Мĕне кирлĕ сана, вăл ăçтине пĕлме? Тата иккĕмĕшĕ ыттисемпе пĕрле пурăнать.

**Степан.** Мĕнле ыттисемпе?

**Улька.** Ман ачасемпе.

**Степан.** Камран-ха вара вăл? Камăн?

**Улька.** Куканова эпĕ.

**Степан** (*çилленсе*). Апла эппин... Тракторист... чаплă гармонист, Гришка Куканов, хăй ĕмĕтне пурнăçа кĕртрĕ пулать. Çапла шутларăм та. А вăл ăçта?

**Улька.** Вăл та танкист. Кĕçĕн командир пулса кайрĕ, халь ĕнтĕ майор. Виçĕ орден. Танк полкĕн командирĕ. Алёша та ун патĕнче.

**Степан.** Ман ывăл? Унпа пĕрле?

**Улька.** Вăл ăна ашшĕ выранне шутлать.

**Степан** (*самантлăха урса кайнипе пĕр сăмах та калаймасть*). Апла-а... Пурте лайăх вырнаçнă эппин.

**Улька.** Мĕнле апла „вырнаçнă"? Тӳрĕ пурăнна, çаплах пурăнатпăр. А эсĕ урăх çул суйларăн. Ăçта каяс тенĕ—çавăнта çитнĕ. Каларăм пулас ĕнтĕ пĕтĕмпех. Халь çакма пултаратăн, е краççинпа сапма,—Марье аппана хăратнă пек. Анчах мĕншĕн çакмалла, пĕлместĕп. Партизанка мар эпĕ.

**Степан.** Суятăн. Документсене кăтарт.

**Улька.** Мĕн сана суяс? Документсем хамăн мар манăн. Ме..

**Степан** (*хутсене пăхса*). Кусемшĕн хăйсемшĕн те çакма пулать. Ăçтан илтĕн?

**Улька.** Ваçça пĕр вĕлернĕ хĕрарăмăнне кăларса юлнă. Эпĕ халь ачасемшĕн анчах пурăнатăп, Степан. Вĕсене анчах хăтарасчĕ. Мана пĕтерсен, вĕсем те пĕтеççĕ.

**Степан.** Суратăп эпĕ санăн Кукановпа тунă йыт-çурисем çине!

**Улька.** Çакăн хыççăн мĕнле калаçмалла санпа, çын пек?

**Степан.** Ăçта Ваçça?

**Улька.** Пурте пĕрле.

**Степан.** Ăçта?

**Улька.** Каламастăп.

**Степан.** Калатăн!

**Улька.** Çук!

**Степан.** Эп калатăп,—калатăн.

**Улька.** Мана пĕлетĕн эсĕ.

**Степан.** Хӗнетӗп.

**Улька.** Пулӑшас çук.

**Степан.** Калатӑн, калаттаратӑп.

**Улька.** Кай кунтан! Е эпӗ ак çан куççем çине лачлаттарса сурӑп та, эсӗ манран урӑх пӗр сӑмах та илтеймӗн. Ирсӗр!

Степан ун çине чӗнмесӗр, урса кайнӑ пек, çав вӑхӑтрах çухалса кайнӑ çын пек, пӑхать.

**Марье.** Господин Бутаев.

**Степан.** Мӗн сана?

**Марье.** Çӗкӑра илме ирӗк парӑр. Пӗр чӗлӗ касса илсе, юлашки хут чӑмлам пӑртак. (*Степан ун çине аллипе сулчӗ. Марье сӗтел çинчен Улька илсе килнӗ çӑкӑра тата пысӑк çӗççе илчӗ,—малтанхи вырӑнах ларса, çӑкӑр касса çиме пуçлать. Çӑкӑрӗпе çӗççине хӑйпе юнашар сак çине хурать.*)

**Степан** (*урӑх сасӑпа.*) Оля, итле-ха эсӗ мана. Тӗрӗс: эсреле тухрӑм эп çак ирсӗрсемпе. Тискерленӗн, çак йӗри-тавра пулса иртекен ӗçсемпе. Эсӗ мӗн, манӑн чун вырӑнта тетӗн-им? Кирек мӗнпе тупа тума пултаратӑп. Миçе хутчен пӗрӗнсе вилме тапӑнтӑм. Ӗненместӗн?

**Улька.** Çук. Мӗнрен япӑх санӑн пурнӑçу? „Улпута" тухнӑ ав.

**Степан.** Кулатӑн? А эпӗ хама хам краççинпа сапса чӗртсе ярасса çитрӗм. Çакӑн пек вӑхӑтра юсанасчӗ, иртнӗ çылӑхсене каçарса. Тӑван çӗршывшӑн пӗтӗм кӑкӑрпа тӑрасчӗ. Григорий пек, хам ывӑлӑмпа хӗрӗм пек, пур халӑх пек. А эпӗ—ак... Оля, пулӑш мана, тӑванӑм. Хӑтар. Турра йӑлӑннӑ пек йӑлӑнатӑп сана: илсе кай партизансем патне. Çак киревсӗр пурнӑçран хӑтӑлма ирӗк пар. Антив, персе пӑрахчӑр. Эпӗ хатӗр. А, тен, каçарӗç... Эпӗ хампа пӗрле нимӗç позицисен планне, дзотсен, районри аэродромсен планне илсе пырӑп, нумай секретнӑй приказсем... нимӗçсем майлӑ ӗçлекенсен спискине... Пысӑк ӗç пулнӑ пу-

лĕччĕ. Каçарнă пулĕччĕç мана. Антив, тата вунă çуллăха лагере ăсатчăр. Килĕшетĕп. Çапах та ватăлмалăх кунра, таса чунлă çын пулса пурăнса, хам кăмăла лăплантарăп, чунăма хура тикĕтрен туртса кăларам. Оля, шухăшла. Килĕшместĕн пулсан, мĕн тăвас-ха манăн? Сана та, ăна та (*Марье енне кăтартса*) пĕтерес пулать, халь эпĕ сире калана сăмахсем хыççăн.

**Улька.** Пурнăçу савăнăçлă мар пулсан, эсĕ пĕрех хут хăвна пĕтер. Пире кăларса яр.

**Степан.** Çылăх, Оля, çынран кулма,—ăна çурмаран туртса çураççĕ пулсан. Оленька! Арăм пулнă-çке эсĕ манăн, ют çын мар. Ачасем çуратса патăн мана. Чунăмра çакăн пек пăтранчăк пулман пулсан, аяккалла туртман пулĕччĕ вăл мана тĕрĕс те тӳрĕ çултан. Колхозран хăвман пулĕччĕ манăн—хуторсем çинчен, улпут именийĕ çинчен шутлана ĕмĕтĕм, пурăннă пулăттăмăр эпир пĕрле.

**Улька.** „Пулмасан“ та, „пулсан“ та, мĕн калаçмалли халь ун çинчен?

**Степан.** Оля, ĕненетне? Юрататăп эпĕ сана çак тарана çитиччен. Нимĕн те манман, нимĕн те... эпĕ сана... Куратăн, суймастăп. Юрататăп. (*Ыталасшăн*).

**Улька.** Яр!

**Степан.** Оля!

**Улька.** Кураймастăп эпĕ сана. Чунилли!

**Степан.** Улька! Оля! (*Марье, Степан ун еннелле пăхманнине сиссе, çăкăрне илсе, хуллен алăкран тухать. Çĕççи сак çинче выртса юлать.*).

**Улька.** Кай ман çумран!

**Степан** (*йывăррăн сĕтел хушшине ларса, пуçне усса, аллипе питне хуплать*). Мĕнле ăнлантарăн çынна. Мĕн тума пулнине пурне те тăватăп тесе, эпĕ мĕн калани пурте тĕрĕс тесе ĕнентерме мĕнпе тупа тăвас сана? (*Пуçне çĕклесе пăхрĕ те, Марье çуккине асăрхаса, сиксе тăчĕ.*) Карчăк ăçта кайрĕ? Ах, киревсĕр! (*Алăк патне ыткăнчĕ, анчах чарăнчĕ. Çухалнă çын пек Улька*

*çине пăхрĕ,—аллине сулчĕ*). Ну, хăямата унпа аппаланма, Оля, акă документсем. Пăх (*хутсем кăларать.*) Ёненместĕн-и? Юрĕ. Тивĕçлĕ эпĕ ăна. Килĕшетĕп. Мĕн тăвас? Сутăнчăк йытă вилĕмĕпех вилме тивет пулĕ мана. Антив. Анчах çак пылчăка çуса янине чунăмпа эпĕ пĕлсе тăрăп. Акă, ил. Кирек кама пама пултаратăн, хăвах. Кунта шпионсен списки, полицисен телеграф шифрĕ тата ытти те. Ме, кунтан та кирлĕрех хутсем. Çĕр хут ытларах та тупма пултарнă пулăттăм, енчен кам та пулин манпа яланлăхах çыхăну тытнă пулсан. Хать хăвах пул акă çыхăну тытаканĕ. Шухăшла кун çинчен. Кала вара унта Березина.

**Улька.** Нимĕнле Березина та пĕлместĕп эпĕ, мĕнле Березин?

**Степан.** Партизансен командирне пĕлместĕн-и?

**Улька.** Пĕлместĕп.

**Степан.** Суйма начар вĕрентнĕ сана. Пĕчĕк ачасем чухлĕ. Вĕсем те пĕлеççĕ.

**Улька.** Эпĕ пĕлместĕп.

**Степан.** Ну, хутсене илетне?

**Улька.** Мĕне кирле вĕсем мана? (*Иккĕлленсе.*). Е, тепĕр тесен... пар эппин.

**Степан.** Кама паран-ха эсĕ вĕсене?

**Улька.** Кама та пулсан шыраса пăхăп. Сан шухăшу пирки те каласа пăхăп епле те пулин. (*Хутсене кăкăр тĕлне пытарчĕ*). Кайма юрать эппин?

**Степан.** Çук, шалишь! (*Тискеррĕн*). Кӳр аллусене!

**Улька.** Мĕн „аллусене"?

**Степан.** Аллусене çĕкле малалла. (Кĕсъинчен çирĕп кантра кăларать).

**Улька.** Çелен! Ак сана! (*Тĕртсе ярать те алăк патнелле ыткăнать. Анчах Степан ăна тытма ĕлкĕрет. Кĕрешеççĕ.*)

**Степан.** Лекрĕн-и, тухатмăш! Çыхатăп. Пурне те пĕтĕрсе çыхăпăр сире.

**Улька.** Яр! Сутăнчăк Иуда! Парăнмастăп.

**Степан.** Парăнатăн! (*Улькана çĕнтерет. Аллисене хыçалалла пĕтĕрсе, чĕркуççи çине лартать. Улька йынăшса ярать*).

**Улька.** Йытă! Шăршлă нимĕç вилли!

**Степан.** Перĉе ятăнах пулать? Чĕлхў салтăнчĕ?

**Улька.** Нимĕн те каламан эпĕ сана.

**Степан.** Пама илтĕн пулсан хутсене, — пĕлетĕн кама парассине.

**Улька.** Нимĕн те пĕлместĕп эпĕ.

**Степан.** Пурне те калăн, — комендатурăра калаçма пуçласан. Пуриншĕн те санпа татăлăп унта: вăтăр виççĕмĕш çулхишĕн те, колхозсемшĕн те. Маншăн халь пурнăçра ниçта кайма та çул çук — çавăншăн та, эсĕ манран вăрланă хам ачасемшĕн те, Гришкăшăн.. Пуриншĕн те. Вилсессĕн те — Ваççана тупатăп. Калатăн-и эсĕ мана, вăл ăçтине?

**Улька.** Вăл та ман пекех санăн куçусем çине сурĕ.

**Степан.** Курăпăр. Санăн çĕнĕ çурусенне чĕрĕллех пыршă-пакартисене кăларăп.

**Улька.** Тискер кайăк!

**Степан.** Тўррипех кала: партизанка-и эсĕ?

*Улька ун çине чĕнмесĕр, чĕркуççи çинчех, çилленсе пăхса тăрать. Сасартăк сиксе тăрса, Степана тĕксе ярать, сак çинчи çĕççе ярса тытать.*

**Улька.** Тĕрĕс, партизанка! Кил, çывăхарса пăх!

**Степан.** Кун пеккисене çеç мар курнă. (*Револьвер туртса кăларса тĕллет.*) Пăрах çĕççе! Пăрах, тетĕп! (*Перет*). (*Çĕçĕ ўкет. Улька йынăшса, сылтăм аллине сулахаййипе тытать. Степан ун çине ыткăнать, тĕртсе ярса, Улька аллине çыхса хурать.*) Çапăçса тăрантăн-и? Каяр. (*Алăк патнелле тĕртет, хăй те ун хыççăн тухать. Çавăнтах хайне пуçĕнчен Марье пуртăпа çапнипе ўкет*). Вĕлерчĕç! А-а-а... (*Шăпланать*)...

Марье йывăррăн сывласа кĕрет, аллинче пуртă. Çĕçĕпе Улька аллисене çыхнă кантрана касса татать.

**Улька.** Эсĕ тухнăранпах унта тăнă-и?

**Марье.** Тухнăранпах. Вăл тухасса анчах кĕтсе тăтăм. Васканипе кăштах сана хаплаттармарăм. Вăл пулĕ тесе шутларăм. Ну, тарар, никам та сисмен чухне. Халĕ ĕнтĕ манăн та пĕр çул анчах — вăрмана.

**Улька.** Илсе çитеретĕп. Ан иккĕлен. (*Çенĕкелле утать те чарăнать, Степан çине пăхса.*) Мĕнле çын пулнă çаплипех юлнă. Акă вăл пирĕн юлашки тĕлпулу.

Тухаççĕ. Марье турăш çине пăхса сăхсăхать те малалла хăвăрт утать.

ЧАРШАВ.

# ИРĔКЛĔ ÇĔРШЫВ

***Аркадий Ĕçхĕл.***

Вут-çулăм хыпнă вăрçă уйĕ урлă
Хăюллăн утрĕ пирĕн паттăр Улăп.
Штыкпа чиксе çĕклерĕ нимĕçе,
Çĕклерĕ те пăрахрĕ тинĕсе.
Çухалтăр ирсĕр, нихăçан ан пултăр,—
Вăл хăй шыранă çавă тивĕçе!

Сиксе хумханчĕ Балтика сатуррăн.
Боец питне ун шывĕпеле çурĕ.
Тăварлă шыв тăварлă тар пекрех.
Боец чĕрийĕ тапрĕ çирĕпрех.
Унтан боец выртса çĕре чуптурĕ:

— Тăван çĕршыв, каллех эс ирĕкре!

Çĕршыв кăкрийĕ çăмăллăн сывларĕ,
Вăрманĕсем ун савăнăçлăн кашларĕç,
Шыв-шурĕсем çуталчĕç йăлтăрса:
Вăл ирĕклĕ, вăл чыслă та таса!
Эпир те, ун халăхĕсем, юрлар-и
Хĕрлĕ Çара савса та мухтаса!

Мухтав сана, хăватлă халăх çарĕ,
Тăван çĕре эс мăшкăл памарăн!
Мухтав сана, пире çăлан Çулпуç,
Чи аслă Маршал та чи çывăх тус!
Эс чĕртнĕ Хĕрлĕ Çăлтăрăн кăварĕ
Тĕнчешĕн çутрĕ çĕнĕ шурăмпуç.

Çав çутăпа пур халăхсем çĕкленнĕ,
Çав çутăра — Тăван çĕршыв илемĕ.
Çав çутăпа çĕн ĕмĕре кĕрер,
Çулпуç тавра пĕр йышлăн пĕтĕçер!
Çав çутăпа хаваслăн чечекленĕ
Нумай юн курнă пирĕн аслă çĕр.

## МУСКАВ

### *Ухсай Яккăвĕ*

I

Мускав тесен, ялан чĕремĕр
Хумханнă, — савăннă эпир.
Ăна савса, аса илмесĕр
Иртмен пĕр кун, пĕр каç, пĕр ир;
Эпир чи лайăх юрă хунă,
Чи лайăх сăвă ун çинчен,
Çĕршывăн пур кĕтессинчен
Килсе эпир ăна тав тунă!.
Хисеплĕ Хĕрлĕ площадь урлă
Ялан, кашни иртмессерен,
Унта тĕнче илемĕ курнă;
Унта хĕп-хĕрлĕ çăлтăрсен
Чыс пек таса илемĕнче
Пуç тайнă Ленин умĕнче.

II

Чи лайăх сăмахсем тупасшăн,
Кĕртесшĕн эпĕ сăввăма,
Сана, Мускав, чунран мухтасшăн
Пухас килет хăватăма;
Мĕншĕн тесен, çут тĕнчере

Мускав хули пулман пулсассăн,
Чуралăхра, хыткан çĕре
Тăрмаласа, эпир хавассăр
Сÿреттĕмĕр; пире çу кунĕ
Кăтартмĕччĕ хĕвел тĕсне,
Тек кавлĕччĕ патша саккунĕ
Чăваш чĕлхи кĕнекине;
Чăваш вăрманĕ, хирĕ урлă
Хуçа пек çÿрĕччĕ хĕн-хурлăх.

III

Мускавăмăр, çĕршыв илемĕ,
Вăрмансенчен, уй-хирсенчен
Эпир килсен, тăван аннемĕр
Эс пултăн; институтсенче
Пире пăхса аталантартăн,
Пурне те патăн кирлине;
— Вĕренĕр! терĕн те тăратрăн
Пире профессорсен умне.
Телей шыранисен телейĕ
Килсе йăпатрĕ чĕрене,
Уçса эс хутăн Менделеев,
Некрасов кĕнекисене,
Пире савса алăсене
Тыттартăн Пушкин сăввине.

IV

Мускав! Çăпатапа килсен,
Эс тăхăнтартăн сăран атă,
Шăннисене — ăш пÿлĕмсем,
Чирлисене эс сывлăх патăн,
Мĕскĕнсене хисеплĕ турăн;
Сухаçăсен ачисене,

Дворецсене кӗртсе, культурӑн
Хӗвел ҫутти пек тӗшшине
Тыттартӑн; канӑҫлӑх курмасӑр
Кӑлартӑн аслӑ ҫул ҫине;
Ҫуралчӗҫ вӗсенчен профессор,
Артист, художник, инженер.
Мускав, Мускав! тӑван хуламӑр!
Чӗри сиксе хумханмӗ камӑн!
Нихҫан та асӑмран каймаҫҫӗ
Яка, таса урамусем!
Ҫӗрле хӗвел пек ялтӑраҫҫӗ
Хӗрлӗ вутчуль ҫӑлтӑрусем
Ват Кремль хӳмисем ҫинче.
Сан кӑкӑрна килсе таптасшӑн
Хӑтланчӗ Гитлер, йӗрӗнчӗк.
Тутар-и, вырӑс-и, чӑваш-и,
Пурте пӗтӗм ҫӗршывӗпе
Ҫӗклентӗмӗр хастарлӑн, вирлӗн, —
Мускав тавралӑхӗ, уй-хирӗ
Сӑрланчӗ нимӗҫ юнӗпе.
Миҫе дивизи, Гитлер мурӗн,
Асанчӗ ҫӑвасен тӗпне.
Тӗнче хитре Мускав вӑйне
Курать те, курнӑ та, вӑл курӗ
Пиншер ҫултан та малашне.

## ЛЕНИН ПИРӖНПЕ

### *П. Хузангай*

. . . Унчух та ҫаплах шартламаччӗ,
Хӗвел катӑлатчӗ шӑнса.
Анчах пысӑк хурлӑх хӑвачӗ
Сасартӑк чӗртсе вутлантарчӗ
Чуна, кӑмӑла та ӑса.

Ачаччӗ эпир, астӑватӑп:
Тӑратпӑр тулта, вут хурса.
Тен, митинг пырать виҫ-тӑватӑ
Сехет, кӗме асӑнман та, —
Эпир маннӑ пур градуса.

Пӗр Ленин асра, пӗр ҫав хурлӑх
Кӑвар пек ӑша ҫунтарать.
Куҫ хупнӑ иккен паттӑр Улӑп,
Мӗн тӑвӑп эп унсӑр, кам пулӑп?.. —
Ҫак шухӑш кашни пуҫ тавра.

Анчах ҫавӑнтах эс сисетӗн:
Ҫав паттӑр — тӑпра парни мар.
Куҫпа курнӑнах ӗненетӗн:
Ҫаплах чӗрӗрен чӗрӗ Ленин
Утать санпала юнашар.

Ҫаплах ун алли, ун ялавӗ
Пире ҫавӑтать малалла.
Хаяр ҫавраҫил е хум шавӗ,
Шыври вӑрттӑн чулӑн ултавӗ —
Пире ним те мар унпала.

Хӑватлӑ та вилӗмсӗр Ленин —
Вӑл пирӗншӗн компас, виҫе.
Кашни утӑмах эпир меллӗн
Унпа чухласа тӗрӗсленӗ,
Тишкернӗ унпа пур ӗҫе.

Иртейрӗҫ кунсем, ҫулсем иртрӗҫ
Ӗҫпе кӗрешӳ вутӗнче.
Ҫӗршыв карапне ҫиле хирӗҫ
Пайтах хум ватса ишме тиврӗ,
Вӑл халь те ҫаплах хум ҫинче.

Карап пуçĕнче халь те Ленин,
Ун чаплă ялавĕ вĕçет.
Мĕнпур тăшмана çĕвтермешкĕн
Тăван çĕршыва пехилленĕн,
Пире малаллах вăл чĕнет.

Карап пуçĕнче халь те Ленин,
Паллатпăр мĕнпурĕ ăна:
Салтак шинельне тăмеленĕ,
Тĕтре-тăвăл витĕр тинкернĕ,
Вăл — куç умĕнче яланах.

Асран кайми Ленин — вăл Сталин,
Вăл Сталин паян тĕнчере.
Хастарлă, ăста капитанăн
Çĕршыв карапне вăл мухтавлăн
Çитерĕ çул тытнă çĕре.

## ПĔР ÇАМКА ИСТОРИЙĔ

**Фельетон**

***Леонид Агаков***

„Мертвая голова" дивизинчи Ганс Шпанке ятлă оберефрейторăн çамки тĕлĕнмелле çирĕп пулнă. Ун çамкине пит лайăх йышши чугунран, е пĕр-пĕр урăх çирĕп металран тунă пекех туйăннă.

Шпанкен тусĕсем каçса кайсах мухтанă ăна:

— Эх, сан çамку пек çамка пулсассăнччĕ.. Вара вăрçăра та хăрушă пулас çукчĕ!

Пытармасăрах калас пулать: кун пек ăмсанма сăлтавĕ те пулнă çав. Ганс Шпанке хăй те ахальрен мар ырланă хăйĕн çамкине. Хăй ĕмĕрĕнче ун çамки нумай хĕнхур тÿссе ирттернĕ, анчах тÿсмеллисем темле йывăр пулнă

пулсан та — вăл яланах çĕнĕ чÿлмек пекех тĕрĕс-тĕкĕл çирĕппипех тăрса юлнă, ниçтан та ванман.

Вулакансем мана: „ку юриех юптарать" тесе каласран, эпĕ Шпанкен çамки шуйттанла çирĕп пулнине кăтартакан фактсене илĕп.

Ефрейторăн çамки мĕн тери çирĕп пулни чăн малтан пĕр сакăр çул каялла, Берлин урамĕсенче тĕрĕсленнĕ. Ун чухне Ганс Шпанке ытти штурмовиксемпе пĕрле рабочисен демонстрацине хăваласа салатнă. Хăйне шăл çеммирех пултăр тесе, вăл пĕчĕк ачаллă пĕр ватăрах хĕрарăма çавăрса тытнă та, ăна çав тери хаяррăн хĕнеме тапратнă. Анчах çав хушăра тахăшĕ ăна çамкинчен чулпа шатлаттарнă. Ку чула Шпанке ашшĕн аш-какай лапкинче турттарса пăхнă пулсан, вăл пĕр килограмран кая мар туртнă пулĕччĕ. Çапах та — Шпанке çамки çурăлман. Куç харшисенчен пуçласа çÿçĕ патне çитичченех чĕнтĕр евĕрлĕ çĕвĕк пулса юлнă кăна. Урăх — хуть ĕненĕр, хуть ан ĕненĕр — нимĕн те пулман!

Тепĕр ĕçĕ ресторанра пулса иртнĕ. Рабочисем пурăнакан районра погром туса таврăннă хыççăн, штурмовиксем ĕçме тытăнса кайнă. Сыснасем пек пуличченех кÿпсе лартнă. Кÿпсен-кÿпсен вара икĕ пая уйăрлнă та, пĕр-пĕрин çине наступлени пуçласа янă. Тарелкăсем, графинсем, чечек чÿлмекĕсем — пĕтĕмпех хĕçпăшал вырăнне вăркăнма тытăннă. Ганс Шпанке сăнчăрта тăракан йытă пекех хаярланса, урсах кайнă. Вăл рояль çине сиксе хăпарнă та, „корректировщик" пулса тăнă — камăн ăçталла пемеллине кăтартнă. Шăпах вара çак „высота" çинче ăна пĕри пит пысăк чечек чÿлмекĕпе çамкаран ярăнтарнă. Ганс çамкине пырса çапăнсан, чÿлмек пăрккиех саланса кайнă, анчах çамкана нимĕн те пулман. Ванман та вăл, çурăлман та! Эрешмен евĕрлĕ тепĕр çĕвĕк çеç хушăннă ун çинче...

1939 çулта вăрçă пуçланнă. Шпанкепе унăн юлташĕсем хăйсене „Европа тăрăх çÿрекен туристсем" тесе

мухтанна. Вĕсем Франци эрехне ĕҫсе Норвеги консервисемпе ҫырткаланă. Югослави сăрине кӳпсе Голланди чăкăтне ҫинĕ. Анчах ĕҫсе ӳсĕрлсе ҫапăҫмасăр вĕсен пĕр эрне те иртмен. Вара кашниччех, тахашĕ юри тĕллесе кăтартнă пекех, кам та пулин ăна ҫамкинчен пĕр-пĕр йывăр япалапа лектернĕ. Гансăн ҫамки эрешлĕ чĕнтĕр пекех пулса тăнă вара,— ун ҫинче ҫав тери тĕрлĕ-тĕрлĕ ҫĕвĕк йышланса кайнă.

Пĕринче Ганс ахальренех бухгалтери ĕҫне тытăнса ҫакăн пек шутласа кăларнă: икĕ ҫул хушшинче унăн ҫамкине 11 графин, тĕрлĕрен калибăрла 17 бутылка тата 33 тарелка ҫапăнса арканнă.

Анчах ҫапах та ҫамка ҫĕмĕрĕлмен. Тепĕр тесен — бутылкăсемпе графинсем — мĕн вăл? Греципри пĕр хулара, музея кĕрсен, Ганс пĕрре Апполон Бельведерский скульптурине автоматран персе унăн хăрах аллине татса антарнă. Ӳсĕр пулнипе, хăй аяккалла пăрăнма ĕлкĕреймен. Апполонăн йывăр алли тӳрех Ганс ҫамки ҫине шачлатнă. Ҫапах та — мĕн те пулин пулнă тетĕр-и ăна? Ҫук, нимĕнех те пулман... Чăнах та, Ганс пĕр ҫур сехет хушши ҫăварĕнчен кăпăк кăларса выртнă ĕнтĕ, анчах кăшт ҫеҫ тăна кĕрсенех эрех ыйтса ĕҫнĕ те, чип-чиперех чĕрĕлсе тăнă.

Вот епле ҫамка пулнă Гансăн! Акă мĕншĕн мухтанă унăн ҫамкине хăйпе пĕрле ĕҫекен тусĕсем!

1941 ҫулта питех те инҫетри, анчах калама ҫук илĕртекен Хĕвелтухăҫне поход пуҫланнă. Ганс Шпанке ним майсăр хавасланнă,— вăл ҫĕнтерӳ ҫăмăллăнах пуласса, тата хăйĕн мăнтăр кĕсре пек Матильди валли темĕн тĕслĕ хаклă япаласем ҫаратса тултарасса шаннă... Вăл хăйĕн ҫĕр ҫĕвĕклĕ ҫамкине каҫăртса, мăн кăмăллăн утнă. (Ҫĕвĕкĕсем питех те ан курăнччăр тесе, Ганс ҫамки урлă вăрăм ҫӳҫ пайăрки усăнтарнă — шăпах хăйсен „фюрерĕн“ пек...) Ҫамки пирки вара вăл пĕртте шикленмен: ăна ҫĕмĕрме те, шăтарма та пултарас ҫуккине шаннă.

Кӗркунне енне сулӑнсан, ҫав ҫамка сасартӑк... шӑнма тытӑннӑ. Ганс, сивве юратманскер, пилоткине аяларах пусса антарнӑ. Усси пулман. Ирӗксӗрех пӗр карчӑк пуҫӗнчен ӑшӑ тутӑр сӗвсе илме тӳр килнӗ. Анчах ҫанталӑк тата ытларах сивӗтнӗ те, ҫамка татах шӑннӑ, тӳсмелле мар шӑннӑ! Халь вара ана тӑруках виҫӗ тутӑрпа тата пӗр кофтӑпа чӗркемелле пулнӑ...

Сивӗсем пуҫланнипе пӗрлех, ку яхӑнта тата Хӗрлӗ Ҫар питӗ хӑватлӑн ҫите-ҫите ҫапнӑ. Кун пек пуласса чугун ҫамкаллӑ Ганс пачах та кӗтмен, шутламан та ун ҫинчен. Ҫавӑнпа та халь вӑл хытах шикленме тытӑннӑ. Каҫсерен, ҫӳҫ тӑрӑх шуса анакан пыйтӑсене ывҫи-ывҫипе шӑлса тӑкса, ку ҫӗршывран епле те пулсан тарса ҫӑлӑнасси ҫинчен кӑна шутланӑ вӑл.

„Ҫӑлӑнӑҫ" хӑех пырса тухнӑ. Пӗрре, питӗ сивӗ, ҫиллӗтӑманлӑ каҫ, Гжатск хули таврашӗнче, вӗсен роти ҫине совет пехотинцисем сасартӑк атака пуҫласа янӑ. Хӗрлӗ ҫӑлтӑрлӑ ҫынсем йӑпӑр-япӑрах Ганссен траншеисене пырса кӗнӗ. Ганс вӗсене хирӗҫ пеме тӑнӑ, анчах ҫав вӑхӑтра ун патне Сизов хушаматлӑ тӗреклӗ красноармеец сиксе пына та, мӗнпур вӑйне пухса — прикладпа Ганса ҫамкинчен ҫапнӑ. Гансӑн чапа тухнӑ арийски ҫамки кивӗ чӳлмек пекех арканса кайнӑ.

Ҫапла вара „Мертвая голова" дивизинче тата тепӗр... вилӗ пуҫ хушӑннӑ.

## ПЫЛ

(Монолог)

*Н. Айзман*

Нимӗҫсем пирӗн Украинӑна пырса кӗнӗренпе чылай вӑхӑт иртнӗччӗ ӗнтӗ ун чух. Эпӗ вӑрманта, колхоз утарне пӑхса, пӗчченех пурӑнаттӑмччӗ. Ялтан пӗр 20—25 ҫухрӑмах пулать пуль, аякра. Паллакан ҫынсем, нимӗҫ-

сенчен тарса, вăрмана пырса тулчĕç. Унта пĕр отряда чăмăртанчĕç те, нимĕç çĕлен-калтисемпе çапăçма, вĕсене ăçта май килнĕ унта мăйĕсенчен пăвма тапратрĕç. Эпĕ хамăн хуртсене ытараймасăр ниепле те пăрахса каяймарăм. Çавăнтах, утартах юлтăм. Тен, кунта, сĕм вăрман варринче, нимĕçсем мана шыраса та тупаймĕç, тесе шухăшларăм хамăн вată ăсăмпа. Нимĕçсене пурĕпĕр нумаях усрас çук пирĕн халăх, тапса сирпĕнтереççех вĕсене, тесе шутларăм.

Пĕр ирхине çапла утара тухрăм та, вĕллесене пăхкаласа çӳретĕп. Сасартăк çăтăр-çатăр, çăтăр-çатăр туни илтĕнчĕ çатрака хыçĕнче. Кăнтăр кунĕнчех пыл çиме упа килчĕ-ши, е ахаль çеç илтĕнчĕ-ши, тесе итлесе тăратăп. Унччен те пулмарĕ, пăхатăп: йăшăл-л... тăсăлса тухрĕ ман куç умне пĕр нимĕç офицерĕ. Тӳрех ман пата чупса пырса, „А-а, рус!" тесе кăшкăрса ячĕ. Ши-и! шăхăрчĕ те хăй çавăнтах, виç ĕнчен тата виçĕ нимĕç салтакĕ сиксе тухрĕç. Малтан тухнин çӳçĕ хĕп-хĕрлĕ, уссисем шăрт пек малалла тăрăнса тăраççĕ. Пит-куçĕ выçă кашкăрăнни пекех... „Давай покушайт", тет хайхи хĕрлĕ çӳç. Хĕрлĕ уссисем айĕнчен кашкăр шăлĕсем пек сайра шăлĕсем курăнса кайрĕç. Мана çиме хатĕрленнĕ пекех туйăнчĕ. Хăранипе нимĕн чĕнме те аптрарăм. „Кушайт давай," — тесе кăшкăрчĕ хайхискер тепĕр хут. „Çук ман нимĕн те", — терĕм. — „Эпĕ кунта пурăнмастăп, кунта хуртсене пăхма çеç килтĕм", — тетĕп çаксене. „А-а, здейсь не живьёт? Партизан?" тесе кăшкăрса пăрахрĕç мана. „Эпĕ партизан мар, кунта хуртсене пăхма килтĕм, эпĕ ялта пурăнатăп... Манăн кунта çимелли те нимĕн те çук" тетĕп каллех. „Врешь!" — теççĕ вĕсем. „А мьёд, мьёд давай! Мьёд кушайт! — теççĕ, а то капут тебе", — теççĕ. „Пылĕ те çук халĕ", — тетĕп. Ĕненмесен, шырăр эппин", тетĕп. Анчах хĕрлĕ çӳçли револьверне ман çамка патне илсе пычĕ те: „Давай мьёд!, капут тебе, давай скоро! Фришко!" — тесе, çамкаран револьверпе çапа-çапа кăшкăрать.

Ну, мӗн тӑвас? „Атьӑр, эппин, пыл ҫитерем эпӗ сире“,— терӗм. Офицер ҫамкаран револьверпе ҫапнине куҫ хуралсах килчӗ, анчах хама-хам ҫирӗппӗн тытрӑм. „Хӑвӑртрах!“ — теҫе кӑшкӑрать лешӗ, сайра шӑлли. „Эсир ҫакӑнта вырнаҫса ларӑр, эп халех пыл илсе килетӗп“, терӗм йна хирӗҫ. Вырнаҫса ларчӗҫ ҫаксем пӗр йывӑҫ айне, тытӑнчӗҫ ӗҫме...

Пытӑм та вӗллесем патне, шухӑшлатӑп. Фронтра вилнӗ ывӑл сӑнӗ куҫ умне шуса тухрӗ, офицер хама ҫамкаран ҫапни тата ытларах ыратса кайрӗ. Манӑн ӗҫпе хытнӑ ҫак аллӑмсем чӑмӑртанчӗҫ. Ҫиллӗм тулса килчӗ... „Эй, ылттӑн хуртсем! Атьӑр-ха, ҫак нимӗҫ сыснисене пыл ҫитерер пӗрре!“ — терӗм хам ӑшра.

Нимӗҫсем асӑрхиччен пӗр вӗллине тапса сирпӗнтертӗм, унтан тепӗр вӗллине, тата теприне тӗртсе ятӑм, тӑваттӑмӗшне... Ак хайхи... тапса тухрӗҫ пылхурчӗсем. Сывлама та ҫук. „Эй, ты чего там? Стреляйт буду!“ — тесе сиксе тӑчӗҫ ҫак нимӗҫсем.— Ман пыл хурчӗсем, пӗлнӗ пекех, тӳрех вӗсем ҫине ыткӑнчӗҫ... Пылхурчӗсем эрех шӑршине юратмаҫҫӗ-ҫке-ха. Сырӑнса илчӗҫ, хайхи... Пуҫларӗҫ ӑшалантарма, пуҫларӗҫ ӑшалантарма! Ҫумӑр пӗлӗчӗ пек явӑнаҫҫӗ вӗт, пӗтӗм хӗвеле хупӑрласа илчӗҫ, тейӗн. Пӗр нимӗҫӗ ӗнсине хыпалать, тепри пит-куҫне сӑтӑрать, тепри аллисене ниҫта кайса хураймасть. Пылхурчӗсем тата хытӑрах сырӑнаҫҫӗ. Тытӑнчӗҫ вара нимӗҫсем хуртсемпе ҫапӑҫма! Тимӗр калпакӗсемпе хӑмсараҫҫӗ, пӗр нимӗҫӗ кӗпине хывса суллать... Ним тума аптранипе, ҫӗре выртса йӑваланаҫҫӗ,— ҫаплах хӑтӑлма майӗ ҫук!

А эпӗ савӑнса кӑна тӑратӑп! Акӑ сире ман ывӑла вӗлернӗшӗн, акӑ сире ман ҫамкана кӑвакартнӑшӑн, тетӗп. Ӗҫ тухманнине кура, хайхи пыл ҫиме юратакансем тӑчӗҫ те — эх, тарма тапратрӗҫ. Эх, тараҫҫӗ. Пыл хурчӗсем — вӗсем хыҫҫӑн. Сывлама та памаҫҫӗ нимӗҫсене. Пӑхатӑп та, пӗр нимӗҫӗн автомачӗ выртнӑ юлнӑ. Йӑпӑр-япӑр автомата ярса илтӗм те, нимӗҫсене хыҫран шатӑр-

таттарма тапратрăм... Пĕр черет кăларса яратăп — иккĕшне йăвантаратăп, тепĕр черет кăларса ярап — теприне йăвантаратăп. Пăхатăп — пĕр нимĕçĕ çаплах чупать. Пылхурчĕсен ушкăнĕ ун хыççăн яраплан пек сĕрлесе пырать. Кÿлĕ хĕррине çитрĕ те, ним тума аптраса, шампăр-р! сикрĕ шывалла. Шывра çăлăнатăп, терĕ пулас...

Эп хайхи, мĕнпур вăя пухрăм та — эх, чупатăп, эх, чупатăп шыв хĕррине. Чупса çитрĕм те — тÿрех: „Хендэ хох!" — тесе кăшкăрса ятăм. Ку шуйттанĕ, аллине çĕклес вырăнне, чăмпăлт! чăмрĕ шыв тĕпнелле. „Э-э, — терĕм, — чăмах, чăмах, терĕм, — шыв айĕнче пурĕпĕр нумай лараймастăн", терĕм. Кĕтсе тăратăп хайхи... Ик-виç минутран нимĕç пуçĕ шăмпăлт! туса тухрĕ шывран. — Хендэ хох! — терĕм çакна тепĕр хут. Нимĕç ерипен кăна аллине çÿлелле çĕклерĕ. „Давай, выходи!" — терĕм çакна. А вăл шывра тапранма та хăрать. Нимĕç пуç тÿпи çинче каллех пылхурчĕсем явăнаççĕ. „Выходи!" — тетĕп çакна татах. Ман паталла тухас вырăнне, шăмпăр-шампăр, шăмпăр-шампăр тутарса, шыв урлă тепĕр еннелле утма пуçларĕ. „Тÿрех, ман пата!" — тетĕп хайхине. Хăлхана та чикмест. „Перетĕп!" тесе автоматпа тĕллерĕм те, тинех шăмпăртаттарса тухрĕ вара ман пата. Ман çинех кĕрсе каять. „Стой!" — тетĕп çакна, „Куда лезешь? — тетĕп. „Не вижу ничего" тет нимĕç. Пăхатăп та, нимĕçĕн пичĕ-куçĕ хуртсем сăхнипе такам вĕрсе хăпартнă пекех шыççа кайнă. „Ăçта хурас ĕнтĕ ку ирсĕре?" — тесе шухăшлатăп. Ăнран кайрăм. Партизансем патне илсе каяс — çулне питех пĕлейместĕп. Урăх вырăна куçатпăр, тетчĕç. Аллисене çыхрăм та: — атя ут! терĕм çакна. Вара, омшанике илсе кайса, хупса лартрăм.

Виçĕ кун ларчĕ çав йĕксĕк ман патра. Кайран вара, партизансем пыл илме пырсан, — „эпĕ сире валли пĕр „чĕлхе" тытса хатĕрлерĕм, мейĕр, илсе кайăр", — терĕм... Çапла пыл çитертĕм эп фашистла хурахсене, — тăраничченех хыптартăм!

# ХАРСĂР ĂМĂРТКАЙĂК

*П. Хузангай*

Чăваш халăх пэттăрне,
Совет Союзĕн Геройне
Ф. Н. Орлов майора.

1. Ял-ял урлă, хула урлă,
Ту, вăрман, уй урлă
Вĕçет пирĕн ăмăрткайăк
Ывăнми хăюллăн.

2. Ун çинчен юрлаççĕ юрă,
Халапласçĕ шухă:
Ăна сăнă тивмест, теççĕ,
Тивмест, теççĕ, ухă.

3. Аçа-çиçĕм пек кумать вăл
Тăшман пуçĕ çийĕн.
Аçа чулĕ пек анать вăл
Хар-хаяррăн, çиллĕн.

4. Йывăрри те уншăн çăмăл,
Аякри те уншăн сывăх.
Тав тăвать ăна çĕршывăм,
Сунать ырлăх-сывлăх.

5. Тав тăвать ăна пур халăх,
Тайма пуçăн-тайăн.
Сывă пултăр, сывă пултăр
Харсăр ăмăрткайăк!

## МУХТАВ ЮРРИ

*Уйăп Мишши*

Юратнă çĕршыв, çут телейлĕх тĕнчи,
Çĕклерĕн эс ĕççыннине.
Эс патăн ăна этем ĕмĕтĕнчи
Чăн пурăнăç çуркуннине.

Тăшман тĕттĕм вăйĕсене аркатса
Кăтартрăн пире хĕвеле.
Сан ывăл-хĕрӳ халь сана юратса
Мухтав юррине кĕвĕлет.

Пире ҫитĕнтернĕшĕн тав!
Пур ырлăхшăн-пурлăхшăн тав:
Сана тав туса мĕнпурри
Юрлатпăр мухтав юрри
Телей ҫĕршывне мухтав!
Тăван ҫĕршыв мухтав!

Таптасшăн тăшман халăхсен ирĕкне,
Хĕн пусмăр кӳресшĕн пире.
Анчах вăл хуҫаймĕ ҫĕршыв тĕрекне,—
Хайне Хĕрлĕ Ҫар ҫĕмĕрет.
Тăван Хĕрлĕ Ҫар—вут ватми вăй-хăват,
Хаяр хăрушă ҫапăҫура
Хĕҫпе те вутпа хӳтĕлет ҫĕршыва—
Мухтав паттăр Хĕрлĕ Ҫара.

Пире хӳтĕленĕшĕн тав!
Чуралăхран ҫăлнăшăн тав!
Ăна юратса мĕн пурри,
Юрлатпăр мухтав юрри,
Ĕҫхалăх ҫарне мухтав
Ҫĕнтерӳ ҫарне мухтав!

Тăван аслă Сталин ӳстернĕ пире,
Вăл халăхсен ашшĕ, ҫулпуҫ.
Этемлĕх курман хаяр кĕрешӳре
Вăл чĕнчĕ: „Тăшман вăйне хуҫ!"
Умри чаплă ҫут ҫĕнтерӳлĕх патне
Выртан ҫулсене вăл курать,
Хăй генийĕн аслă вăйне-хăватне
Пулас ҫĕнтерӳшĕн хурать.

Ăна ирĕк пурнăçшăн тав!
Пире ертсе пынăшăн тав!
Ăна юратса мĕн пурри
Юрлатпăр мухтав юрри.
Çулпуçăмăра мухтав!
Сана, аслă Сталин, мухтав!

## ТАВ АННЕМЕ!

*Иван Малгай*

Тав сана, тăван анне,
Питĕ пысăк тав;
Ĕмĕртсе кăкăр сĕтне
Ӳстернишĕн тав!
Тав сана, мĕнпур чунран —
Чĕререн калап,
Татах ыррăн пурăнма
Сывлăх халаллап.

Тав сана, тăван анне,
Çуратса, пăхса
Çирĕп турăн манăнне
Кăмăла, чуна.
Ăс-тăн патăн ачаран
Уçăмлăн утма,
Вилĕмрен те асапран
Вăйлăрах пулма.
Кашкăртан та усалрах
Ирсĕр тăшмана
Пуç таймашкăн пурнăçра
Эс хушман мана.

Тав сана, тăван анне,
Хĕвел пек хисеп.

Ывăлунăн саламне
Манас çук, пĕлеп.
Вăл сана халь саламлать
Пĕтĕм чĕринчен, —
Мухтаса çапла калать:
Пурăн çĕр çинче!
Аннем, пурăн ытларах
Çакă çĕршывра.

Хамăр тунă ырлăхра —
Эпĕр хамăрах
Ĕмĕрех хуçа пулса
Чыслăн пурăнар,
Çĕршыва сума суса
Пурте савăнар!
Акă ирсĕр çĕленсем
Шăрши-маршипех
Халь тасалчĕç çĕр çинчен
Ĕнтĕ пĕтĕмпех.

Вĕри вăрçă хирĕнче
Малтан малалла
Пыратпăр халь çĕмĕрсе
Юнлă тăшмана.
Аннем, патăн эс мана
Вăй-хăват, тĕрек,
Çавăнпа эп тăшмана
Вăйлăн çĕмĕреп.

Тав сана, аннем, ялан, —
Ĕмĕрех мухтав,
Питĕ ăшă кăмăлран
Питĕ пысăк тав!

## ШАП-ШУРĂ ХУРĂН УМĔНЧЕ...

*Ухсай Яккăвĕ*

Шап-шурă хурăн умĕнче
Вĕсем тĕлпулчĕç ир çинче.
Хĕварчĕ каччă сар хĕре,
Хĕварчĕ аслă уй-хире.

Калле çу кунĕ çĕмĕртсем
Шап-шурă шупăр пĕркенсен,
Килетĕп, терĕ, уйрăлчĕ.
Лаши ун сикрĕ, вăрканчĕ.

Пăхса хĕр тăчĕ нумайччен,
Тусан лăпланчĕ çул çинче.
Кун хыççăн кун иртет, иртет,—
Килет-ши, тет, сар хĕр кĕтет.

Каччи — сержант. Каччи — герой.
Тăхлан кĕрлет. Юнланнă уй.
Пырать вут витĕр вăл вĕçсе,
Перет, чикет вăл нимĕçе.

Герой вут витĕр инçетре
Аса илет хитре хĕре,
Атакăна каяс чухне
Ялан пăхать ун портретне.

Çĕршыв уй-хирĕ тăшманран
Хăюллăн, паттăр тасалçан,
Çĕнтернĕ халăх савăнĕ,—
Унчух тин каччă таврăнĕ.

Шап-шурă хурăн умĕнче
Хĕре тĕл пулĕ ир çинче,
Ыталĕ каччă ирхине,
Ыталĕ савнă сар хĕрне.

# ФРИЦ МЮЛЛЕРĂН ПУРНĂÇĔПЕ ВИЛĔМĔ

**Фельетон**

***Леонид Агаков***

Хăйĕн ĕмĕрне Фриц Мюллер юрласа та ташласа кăна ирттернĕ. Пурнăçĕ ытлашши савăнăçлă пулнă пирки мар ташланă вăл. Çук. Ташланипе хăйне валли çимелĕх çăкăр ĕçлесе тупнă. Хăйне валли, тата хăйĕн арăмĕ—фрау Берта валли...

Сăмах килнĕ майпа, фрау Берта пирки çакна калас пулать. Фрицпа малтанхи хут паллашсанах ун умне вăл çакăн пек татăклă ыйту лартнă:

— Эпĕ мана валли кунне пĕр килограм çăкăр тупма пултаракан çынна çеç качча кайма пултаратăп...

Кун пек пуян каччăсем вĕсен пĕчĕк хулинче сахал пулнă, çавăнпа та Фриц Мюллер, хăй харах куçлă пулин те, Бертăшăн питĕ килĕшӳллĕ мăшăр пулса тăнă. Хăй ăна чĕререн-вартан юратни çинчен тупа тунипе пĕрлех, Фриц ак çапла систернĕ ăна:

— Эп юрласа ташлакан хупахра хăнасем хыççăн сĕтел çинче тĕрлĕ татăксем юлаççĕ, вĕсене ялана с кĕсъене пуçтарса чикме май пур... Ĕнер те кукăль татки илсе килнĕччĕ-ха. Урăхла калас-тăк—эп сана нихçан та выçă лартассăм çук!

Ку сăмахсемпе вара Фриц шĕвĕр сăмсаллă Бертăн чĕрине ирĕлтерсех янă.

Çавăнтанпа хăрах куçлă ватă хусах Фриц Мюллер законлă упăшка пулса тăнă, хăйĕн хытă кроватĕ çинче иккĕн çывăрма тытăннă. Эрешлĕн çырма юратакан писательсем пек каласан—ун чух илемлĕ çуркунне пулнă, шăпчăксем юрланă...

Фрау Бертăн çак çĕнĕ упăшки (йĕркипе шутласа пырсан—вăл унăн улттăмĕш упăшки пулнă) ытти арçынсенчен нумай малта тăни уйрăмăнах 1941-мĕш çулхи çулла

палăрнă. Ун чухне пур арçынсене те Российăна хирĕç вăрçа илсе кайнă, анчах Фриц Мюллер малтанхи пекех „Ĕçер-хе Гитлершăн“ ятлă хупахра юрласа, ташласа пурăннă. Фронта илсе кайман ăна—унăн сылтăм куçĕ пулман.

Фрау Берта кун пирки çĕрĕн-кунĕн савăннă, хăйне çакăн пек хăрах куçлă упăшка тупса панăшăн турра тав тунă. Унăн кўршĕ арăмĕсем вара, Бертăпа Фриц телейлĕн пурăннине кура, хăйсен çамрăк чухнехи йăнăшĕсемшĕн тарăхса ўпкелешнĕ:

— Епле ухмах пулнă эпир! Мĕншĕн-ха çавăн чух хамăра валли Гитлер пек пĕр куçлă, е Геббельс пек хăрах уралла упăшкасем тупман?

Анчах праçник яланах пулмасть çав. Фрицшăн та хура кун çитсе тухнă. Ăна та вăрçа илсе кайнă.

Ку ĕç пĕтĕмĕшпех чăн-чăн нимĕçле меслетпе пулса иртнĕ.

Пĕр каçхине Фрицсен хупахне случной пунктри ăратлă йăрсем евĕрлĕ виçĕ штурмовик пырса кĕнĕ. Вĕсем, Фриц Мюллер пыршисене тавăрса кăларас пек мекĕрленсе юрласа тăракан эстрадăна хирĕç пырса ларнă та, шнапс*) ĕçе-ĕçе, ун çине шăтарас пек пăхма тытăннă. Фриц тўрех сиснĕ вара кунта темле ырă мар ĕç пулма пултарассине. Юрласа пĕтернĕ-пĕтерменех, хăнасене юрас тесе, вăл „Хайль Гитлер!“ тесе кăшкăрасшăн пулнă. Анчах ĕлкĕреймен. Пĕр штурмовикĕ ăна аллинчен çавăрса тытнă та, хăйсен сĕтелли умне сĕтĕрсе пырса тăратнă.

— Ĕç! Фюрер сывлăхĕшĕн, тата Германи çĕнтерĕвĕшĕн!

Фриц пĕр сăмахсăрах ĕçнĕ. Хăйне çавăн пек чыс тунăшăн питех те савăнса кайнă вăл. Анчах самантранах ун çан-çурăмне сивĕ тар тапса тухнă...

— Фюрер сана Хĕвелтухăçне кайма, Германи валли çĕнĕ çĕрсем тытса илессишĕн çапăçма сĕнет,—тенĕ ăна

---

*) Эрех.

татăклăн пĕр штурмовикĕ, чи мăнтăрри.—Хăвăн ирĕкӳпе, чăн-чăн ариец, таса юнлă нимĕç пулнă май...

— Эп хавас... Эп яланах хавас...—ăнланмалла мар мăкăртатма тытăннă Фриц,—анчах манăн пĕр сулахай куç кăна... Эп пăшал пеме пултараймастăп. Мана халь те çавăн пирки хăварнă...

— Çитĕ,—шăл витĕр сăрхăнтарса кăларнă куна илтсен тепĕр штурмовикĕ,—эхер те эсĕ, йытă вилли, фронта хам ирĕкпе каятăп тесе заявлени çырмасан, эпĕ санăн юлашки куçна çапса шăтаратăп!—

Çавăнтах вăл хăйĕн чукмар пек чышкине Фриц сăмси патне илсе пынă.

— Анчах вăл саккунсăр пулать...—пачах шала кайнă сасăпа юлашки хут мăкăртатса илнĕ Фриц. Ку вара—унăн чи пысăк йăнăшĕ пулнă. Çав самантрах ăна штурмовик мĕнпур вăйĕпе икĕ куç хушшинчен пит те вăйлăн шачлаттарнă та, вăл пăлтăрах йăванса кайнă...

Тăна кĕнĕ çĕре вăл сборçăй пунктра пулнă. Сысна шăрчĕ пек уссиллĕ, хĕрлĕ сăмсаллă фельдфебель ăна мундир тыттарса, пилĕк минутран хатĕрленсе çитме хушнă. Ĕнерхи пекех хĕнесе тăкасран хăраса, Фриц пырне лартнă курак пек карнклатма тапратнă:

— Хайль Гитлер! Хайль, хайль, хайль...

Çапла вара вăл салтак пулса тăнă.

Çав кунах, арăмпе сывпуллашма та ĕлкĕреймесĕр, хăйсен хулинчен тухса кайнă. Ун чух кĕркунне пулнă, çăмăр çунă...

Анчах та ĕçе пуçлама йывăр, кайран—каять, теççĕ. Фриц хуть мĕне те хăвăрт хăнăхакан çын пулнă та, часах, Берти пирки хуйхăрма пăрахса, нимĕç салтакĕн пур йăлисене те вĕренсе çитнĕ. Вăл питех те ăста çаратма, ачасемпе стариксене персе вĕлерме, мирлĕ ялсене вут тĕртсе çунтарма хăнăхнă. Кĕскен каласан, чарусăр мерзавец пулса тăнă.

Çав вăхăтрах хĕл çывхарса килнĕ...

## II.

Анчах та Фриц Мюллер ялсем тăрăх чăх мăйĕсене пăрса нумаях пурăнайман. Смоленск таврашĕнче пĕр-ик эрне тăнă хыççăн, вĕсен батальонне Мускав еннелле куçарма тытăннă.

Вокзалра темле штабри обер-офицер, вĕсен умне Наполеон пек тăрса, питех те хаяр сăмах каларĕ:

— Россия пĕтесси нумай юлмарĕ! Тепрер хутчен хыттăн пырса çапсанах, эпир советсен столицинче парад тăватпăр. Вара вăрçă пĕтет те—эпир хамăрăн гретхенсемпе медхенсем патне киле таврăнатпăр, кунпа пĕрлех— хамăр ĕмĕрлĕх чапа тухатпăр!..

Салтаксем ку обера итлесе сурчăкĕсене çăтса тăнă. Кашниех хăйне валли Мускаври магазинсемпе хваттерсенчен епле пуян трофейсем сĕтĕрсе кăларасси çинчен ĕмĕтленнĕ. Вĕсемпе пĕрлех Фриц Мюллер та савăнса тăнă. Ун кĕсъинче Российăра туртса илсе киле ямалли япаласен списки хатĕр выртнă ĕнтĕ. Пурĕ унăн 250 япала „организацилемелле" пулнă—тилĕ тирĕнчен çĕленĕ кĕрĕкрен пуçласа хĕрарăм йĕмĕсем, ача юласран сыхланмалли резин япаласем таранах...

Çул çинче Мюллер телейлĕ тĕлĕксем курнă. Ăна фрау Берта ывăнма пĕлмесĕр ачашларĕ. Кÿршисем Фриц Российăран илсе килнĕ тĕрлĕ тĕслĕ пурлăх çине ăмсануллăн пăхрĕç. Фриц, кăмăлĕ тулса çитнипе, ирĕлсех кайрĕ. Анчах сасартăк темскер кĕрслетрĕ, кĕмсĕртетрĕ, ишĕлсе анчĕ, пуçран пырса çапрĕ... Çÿлти сак çинче выртса пынă Фриц тăруках урайне татăлса анчĕ, сăмсинчен çурхи шыв пекех юн юхма тапратрĕ. Вăл ура çине тăрасшăн пулчĕ, тахăшĕ ăна атă кĕллипе çамкинчен тапса каялла ÿкерчĕ, тепри çавăнтах унăн хырăмĕ çине пусрĕ, вара вăл хăйĕн урлă пĕтĕм рота чупса каçса кайиччenех урайĕнче хăма пек выртрĕ...

Кайран тин пĕлнĕ Фриц: вĕсен эшелонне совет само-

лёчĕсем бомбить тунă мĕн. Фрицăн нумай тусĕсен çавăн чух хăшин аллисем, хăшин урисем, теприсен пуçĕсем те татăла-татăла ывтăннă.

Çав каçах вĕсене малти линие, сивĕ те тарăн окопсене илсе пынă.

— Çакăнтан эпир Мускав çинелле тухса каятпăр,— тенĕ офицер.—Ан хăрăр, пирĕн пĕтĕмпе те пĕр вăтăр километр çеç каймалла. Хĕрлĕ Çар çук ĕнтĕ, çул уçăпа пĕрех.

Пĕр виçĕ кун хушши ĕçсем аванах пынă. Фриц ку хушăра лăпланма ĕлкĕрсе, хăйĕн пулас трофейăсен спискине тата тепĕр хут пăхса тухнă.

Унтан сасартăк нимĕнле сăмахсемпе те каласа памалла мар ĕçсем тапранса кайнă. Вырăссен артиллерийĕ нихçанхинчен те хытăрах пеме тапратнă, пĕлĕтре хĕрлĕ çăлтăрлă самолётсем ĕçлеме тытăннă, танксем çĕр кисрентерсе ыткăннă, тем те, тем те... Вырăссен пĕр юрринчи пек—нимĕçсен пуçĕсемпе кĕлеткисем унталла та кунталла сирпĕннĕ, вĕсем шăнтакан чир тытса пăрахнă чухнехи пек те мар чĕтресе выртнă!

Фриц хăйĕн автоматне пăрахнă та, тарма пикеннĕ. Вăл каялла çавăрăнса пăхмасăр чупса—çынсенчен, лашасенчен, тепĕр чух машинсенчен те иртсе кайнă. Фриц нихçан та спортсмен пулман, анчах халĕ ăна пĕр чемпион та хăваласа çитеймен пулĕччĕ. Майсăр хытă чупнă! Анчах çапах та хурлăхран тарса хăтăлайман: пиллĕкĕмĕш километрта ăна совет снарячĕ хăваласа çитнĕ те, осколокпа урине хуçса пăрахнă...

Малалла мĕн пулнă, тетĕр-и?

Нумай вăхăт хушши лазаретра выртнă хыççăн, Мускава çавăрса илеймесĕрех, текех ĕнтĕ трофейсем çинчен те шухăшлама пăрахса, Фриц тăван хулине таврăннă. (Ăна отпуск панă.)

Юлашки портсигарне сутсах арăмĕ патне телеграм панă пулин те, вокзалра ăна никам та кĕтсе илмен. Хула тă-

рăх унăн пĕчченех танккамалла пулнă... Тепрер ик сехетрен вăл хăй хваттерне çитсе звонок панă. Вăл çав самантрах хăй патне фрау Берта чупса тухса мăйĕнчен ыталаса илессе кĕтнĕ. Анчах Берта тухман...

Фриц вара аллинчи туйипе шаккама тапратнă. Çавăн хыççăн тин шалта тахăшĕ кăмăлсăр пулса мăкăртатни илтĕннĕ.

— Кам йытти çĕмĕрлет унта? Кĕтме те пултаратăн.

Фрицăн чĕри картах тунă. Ытла та паллана пек туйăннă ăна ку хулăм сас...

Вăл йăнăшман: хăйне пӳлĕм алăкне уçса кӳртсен, вăл хăйне темиçе уйăх каялла хупахра хĕнесе „доброволец" туса хунă штурмовика курнă. Вăл ерипен кăна тумланнă, фрау Берта çӳçĕсене тирпейлесе тăнă.

Фриц пĕтĕмпех ăнланса илнĕ... Тарăхнипе ниçта кайса кĕрейми чĕтресе, вăл штурмовик патне сиксе пынă та, ăна янахĕнчен çапнă. Анчах çавăнтах хирĕç туяннă,— штурмовик ăна пĕркунхи пекех икĕ куç хушшинчен çапса, алăк патнех вăркăнтарнă. Фриц ăнран кайнă.

Ирхине ăна гестапона илсе кайнă, „влаçсене пăхăнманшăн" суд тунă та, пилĕк кунран каллех малти линие янă.

Ăна паллан çынсем каланă тăрăх, вăл çапах та пур хуйха-суйха манса кайса, часах каллех совет çĕрĕнчи пуянлăхсем çинчен ĕмĕтленме тытăннă, тет. Анчах пуянлăх вырăнне, пĕр çапăçура совет пульлине туяннă та, тахçанчченех Ржев хыçĕнче йытă вилли пек йăванса выртнă.

Ку вара 1942 çулхи кĕркунне пулнă.

## ТĂВАН ÇĔРШЫВ

### *Иван Малгай*

Шăнкăр та шăнкравлăн тарăн мар варта
Ерипен, тӳлеккĕн шыв юхса выртать;
Калама çук капăр чĕвĕлти чĕкеçĕн
Чĕрĕ чĕпписем те çак шыва ĕçеççĕ,

Сывлăм пек таса вăл, тăрă яланах—
Килленсе ĕçетĕп эпĕ те ăна.

Юханшыв юххишĕн чунăм савăнать,
Çавăнпа калатăп çакă сăввăма:
Çуталать ун çийĕн çуллахи хĕвелĕ,
Асамат кĕперĕ авăнать илемлĕн.
Тăсăлать сип-симĕс улăх—пĕр енче,
Эп çуралнă ялĕ—ларать ку енче.

Çаксене илесшĕн пулчĕ те тăшман,—
Вĕсемпе вилес пек тиврĕ çапăçма,
Хам çуралнă ялшăн, шăнкăр юханшывшăн,
Кашни утăм çĕршĕн, улăхшăн-çараншăн
Хĕрлĕ Çар хăватлă вăйĕпе пĕрле
Çапăçса эпир те Улăп евĕрлех!

Шăнкăр та шăнкравлăн тарăн мар варта
Ерипен, тӳлеккĕн шыв юхса выртать.
Иртĕхнĕ тăшманăн хăркăм хура çарĕ
Ун çулне пӳлмешкĕн çĕршыва хупларĕ.
Пирĕн телее те ирĕке çеç мар,
Шухăшларĕ çавă—пурнăçа хуçма!

Улăх та, вăрман та тăчĕ кĕрлесе,
Çапăçрăмăр пурте çил пек çĕкленсе.
Çăткăн выçă нимĕç пит вăйлă пулсан та,
Пирĕн Хĕрлĕ Çар вăл—вăйлăрах унран та.
Çапăçрĕ, кĕрешрĕ, çĕнтерчĕ Улăп пек,
Вăл çĕнтерчĕ Аслă Сталин ăсĕпе.

Юханшыв юххишĕн чунăм савăнать,—
Çавăнпа каларăм çакă сăввăма.
Вăрçă ватса кайнă, çуралнă çыранĕ
Меллĕн тӳрленет халь, çăвăнать суранĕ.
Ĕмĕр шăнкăртаттăр юханшыв юхса,
Ирĕклĕх хĕвелĕ савăнтăр пăхса!

## ЛЕНИНГРАД

*С. Эльгер*

Аслă Петĕр никĕсленĕ,
Пур Россия çитĕнтерне
Хурçă крепăç — паллă ят —
Пирĕн чаплă Ленинград!
Эс çут ĕмĕршĕн хĕмленнĕ,
Вут Октябĕре çĕкленĕ
Улăп-паттăр, пуç-хула;
Ленин — Сталин уçса панă
Çĕн çулпа пыма пуçарнă
Çиçĕм вăйлĕ сăрт-хула.
Санăн вăй-хална пула
Салхуланчĕ урнă нимĕç, —
Эс пулмарăн уншăн çимĕç.
Ленинград, эс пирĕн чап,
Пирĕн пĕрлĕх — вăй-хăват.
Сахал мар эс хĕн, асап
Курнă, тӳснĕ, Ленинград,
Тӳснĕ, çĕннĕ пур хĕне,
Чăтнă йывăр кунсене.
Ак паян та эс тӳсӳллĕн,
Вутлă ункăна ватса,
Нимĕç çине çĕнтерӳллĕн,
Мăннăн тăратăн пăхса.
Ленинград!
Совет хули, тăван хула,
Эпир ялан санпала.
Авал тимлевлĕ Аслă Петĕр
Сан никĕсне хывтарнă чух
(Ăна хăвах та эс пĕлен-тĕр)
Чăваш çынни те йăтнă чул;
Вăл çăрнă тăм, сипленĕ кирпĕч,
Нева тăрăх чавнă канав.

Пуртти-кĕреçи ун пулнă çивĕч,
Шыв-шурлăхри вăрман-хунав
Кăкланнă ун вăйĕпе те;
Вырăс çыннисемпе пĕрле
Унта çурт-йĕр тăвас çĕрте те
Ĕçленĕ вăл ĕç паттăрле.
Ленинград!
Эс пирĕн вĕçĕмсĕр çĕршывăн
Пур халăхĕ пĕрле пулса
Пĕрле ӳстернĕ хула. Ан ывăн,
Ан чак, тăшман тискеррине курса.
Темле эсрел урса килсен те,
Хăруш самант тухсан умна —
Тăван çĕршыв пур енчен те
Гранит сăрт пек хӳтлет сана.
Чăваш, тутар, мордва, грузинĕ —
Тăванлă пурте вырăспа;
Совет çемьин пур халăх сынĕ
Тăрать халь саншăн кăкăрпа.
Нихçан та манмăн ӳлĕм эсĕ
Чăваш Смирнов пек çынсене,
Нева çинче калла сикмесĕр
Хăват тунă геройсене.

## ÇУЛ ÇИНЧЕ

*Г. Алендей.*

Фронтран инçетре мар пулчĕ ку.

Эпир нимĕççем çунтарса хăварнă пĕр пĕчĕк ял çуммипе иртетпĕр. Ял вырăнне кăмрăкланнă пĕренесемпе хуралса ларакан кăмакасем çеç тăрса юлнă. Сайра хутран пуралла çăл курăнать, ун çывăхĕнче ĕнсе типнĕ йывăççем турачĕсене тискеррĕн тармакласа лараççĕ. Кунта акă пӳрт урайĕ тăрса юлнă, унта çунса авкаланса пĕтнĕ

кровать выртать. Çак ял масарĕ çинче пĕр этем те курăнмасть, чĕрчун пурри те паллă мар.

Эпир иккĕмĕш кун ĕнтĕ утатпăр. Ун пек çуннă, ишĕлнĕ ялсене пĕрре çеç мар курнă. Ăçта нимĕç пулнă, ун хыççăн ялсемпе хуласем çунса юлнă. Нимĕç хăйне пурпĕрех совет çĕршывĕнчен хăваласа ярассине сисет, çавăнпа вăл шутлать: совет çыннисене нимĕн те ан юлтăр, вăрçă хыççăн та вăл пӳрт-çурт туса вăйне пĕтертĕр, тет. Çапла, эпир мĕн пирки ялсене-хуласене çунтарса хăварнине те пĕлетпĕр. Çапах кашни çуннă яла курсан, чĕресем юнпала тулаççĕ, ăшра ирсĕр нимĕçсене тавăрас çилĕ тата ытларах çĕкленет. Çакна пула, ывăннă пулин те, пĕр-пĕринпе тачăрах çыпăçатпăр, урасемпе хытăрах ярса пусатпăр. Эпир пурте тискер фашистсене пирĕн мĕнпур телейлĕхе ишме тăнăшăн часрах тавăрма васкатпăр.

Ялтан иртеттĕмĕр те ĕнтĕ. Сасартăк пирĕн умра пĕр хĕрачапа ватăрах хĕрарăм курăнчĕç. Хĕрачи пĕр вуникĕ çулта, ватă хĕрарăмĕ унăн амăшĕ пулас. Вĕсем иккĕшĕ те типшĕм, çутăсăр ӳсекен çеçке пек шурăхса кайнă, çĕтĕк-çатăк тумтирпе, иккĕшĕ те çаруран. Çул хĕррине тăнă та, вырăнтан тапранмасăр, куççуль витĕр пирĕн çине пăхаççĕ вĕсем. Ăнланмалла мар: те савăнăç куççулĕпе, те хурлăх куççулĕпе нӳрленнĕ вĕсен куçĕсем? Эпĕ çакна пĕлес тесе вĕсенчен ыйтрăм.

Элĕ чĕннине хирĕç хĕрача амăшĕнчен уйăрăлса ман пата чупса çитрĕ те, манпа, пирĕн стройпа юнашар вĕтĕ-вĕтĕ утăмсемпе утма пуçларĕ.

— Тете, ун чухне те красноармеецсем нумайăн куçрĕç, терĕ вăл. — Вара нимĕçсем килчĕç. Каллех вĕсем килеççĕ пуль тесе хăратпăр эпир. Вĕсем пурне те вĕлерчĕç, пурне те туртса илчĕç, пурне те çунтарчĕç. Эпир хăратпăр...

Эпир нимĕçсене пĕтермешкĕн фронта кайни çинчен каласа патăм ăна. Вара хĕрачан пит-куçĕ çутăлса кайрĕ, хĕрача каялла çавăрăнчĕ те амăшĕ патне чупрĕ, унтан

каллех пирĕн рете чупса çитсе, юнашар утса пырса чарăнмасăр каласа пычĕ:

— Тетесем, эсир вĕсене пирĕн пата тек ан ярăр, пĕтерĕр вĕсене, пирĕн пата ан ярăр... вĕлерсе пĕтерĕр!

Хăйĕн ашшĕне вĕлернĕшĕн, аппăшне нимĕç çĕршывне чуралăха хăваласа кайнăшăн, çурт-йĕрсĕр тăратса хăварнăшăн тавăрма ыйтрĕ вăл.

Унăн çинçе сассипе юнашар, сасартăк, хыçаларах унăн амăшĕн уçă сасси янраса кайрĕ:

— Пирĕн маттур салтаксем эсир! Пĕтерĕр нимĕçсене! Пĕр нимĕç салтакĕ юлмиччен пĕтерĕр!

Ял выранĕнчен иртсен те вăл сассем чылайччен, хамăр аннесем, хамăрăн арăмсем, хамăр йăмăксемпе аппасем чĕнсе каланă сассем пек, хамăрăн çĕршывăмăрăн сасси пек чарăнмасăр янраса тăчĕç пирĕн хăлхасенче. Эпир вара хамăр аннесене, арăмсемпе ачамăрсене асаплантарма, килнĕ ирсĕр нимĕçсемпе çапăçма часрах çитес тесе тата васкасарах малалла утрăмăр.

# ТУПМАЛЛИ


*Стр.*

Совет Союзӗн гимнӗ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 3
**П. Хузангай.** Мухтав аслӑ Ленина! Мухтав аслӑ Сталина! (*Сӑвӑ*) . 4
**И. Тукташ.** Полководец Сталин (*Сӑвӑ*) . . . . . . . . . . . . 5
**А. Ӗҫхӗл.** — Мускав салючӗ (*Сӑвӑ*) . . . . . . . . . . . . 6
**Н. Мранька.** Сержант Ванюшин (*Пьеса*) . . . . . . . . . . . 8
**П. Хузангай.** Тавтапуҫ! (*Сӑвӑ*) . . . . . . . . . . . . . . 39
**А. Ӗҫхӗл.** — Тупа. (*Сӑвӑ*) . . . . . . . . . . . . . . . 40
**С. Эльгер.** — Хӗрлӗ Ҫара (*Сӑвӑ*) . . . . . . . . . . . . . 41
**Ст. Шавлы.** — Тӑван ҫӗршыв (*Сӑвӑ*) . . . . . . . . . . . . 42
**Л. Левин.** — **Балти мичманӗ** (*Пьеса. Н. Айзман куҫарнӑ*) . . . . 44
**А. Ӗҫхӗл.** — Ҫӗнтерӳ ҫулӗ (*Сӑвӑ*) . . . . . . . . . . . . . 65
**С. Эльгер** — Тӑван ҫӗршывӑмӑр чӗри! (*Сӑвӑ*) . . . . . . . . 66
**Ан. Глебов.** — Юлашки тӗлпулу (*Пьеса. Молодов куҫарнӑ*) . . . 68
**А. Ӗҫхӗл.** — Ирӗклӗ ҫӗршыв. (*Сӑвӑ*) . . . . . . . . . . . . 83
**Я. Ухсай.** — Мускав (*Сӑвӑ*) . . . . . . . . . . . . . . . 84
**П. Хузангай.** — Ленин пирӗнпе (*Сӑвӑ*) . . . . . . . . . . . 86
**Л. Агаков.** — Пӗр ҫамка историйӗ. (*Фельетон*) . . . . . . . . 88
**Н. Айзман.** — Пыл (*Монолог*) . . . . . . . . . . . . . . . 91
**П. Хузангай.** — Харсӑр ӑмӑрткайӑк (*Сӑвӑ*) . . . . . . . . . . 95
**И. Малгай.** — Тав аннеме! (*Сӑвӑ*) . . . . . . . . . . . . . 97
**Я. Ухсай.** — Шап-шурӑ хурӑн умӗнче (*Сӑвӑ*) . . . . . . . . . 99
**Л. Агаков.** — Фриц Мюллерӑн пурнӑҫӗпе вилӗмӗ . . . . . . . . 100
**И. Малгай.** — Тӑван ҫӗршыв (*Сӑвӑ*) . . . . . . . . . . . . . 105
**С. Эльгер.** — Ленинград. (*Сӑвӑ*) . . . . . . . . . . . . . . 107
**Г. Алендей.** — Ҫул ҫинче (*Калав*) . . . . . . . . . . . . . 108

ОТК 8

0·50

15321

Цена 5 руб.

КОГДА ОТКРЫВАЕТСЯ ЗАНАВЕС

*СБОРНИК*
*ДЛЯ СЕЛЬСКОЙ ЭСТРАДЫ*

На чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ
Чебоксары—1945